В. КРАСНОВ

# ТĂВАЛЛА

31-151

ЧĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ
ШУПАШКАР — 1931

## В. И. КРАСНОВ (Асли)
## çырнă кĕнекесем

1. Ленин çулĕпе . . . . . . . . 1925 ç.
2. Виçĕ револютси . . . . . 1925 ç.
3. Епĕр вăрçăшăн мар, анђах хамăра тапăнсан çапăçма хатĕр . . 1927 ç.
4. Шуррисемпе çапăçни . . . . 1929 ç,
5. Киввипе çĕнни . . . . . . . 1930 ç.
6. «Улăпсем» роман «Сунталпа» «Сыхă тăр» шурналта çапăннă 1931 ç.
7. Вăрман йурри («Колхоçнĕк» Самарти хаçатра) . . . . . . 1930 ç.
8. Тăвалла. Роман кĕнеке . . . 1931 ç.

В. И. КРАСНОВ (АСЛИ)

# ТĂВАЛЛА

РОМАН, 1-мĕш КĔНЕКЕ

1930-мĕш çулта пулнă литтераттурă ăмăртăвĕнҫе пуринҫен пысăк преми илнĕ

ҪĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ
Шупашкар — 1931

# ТУПМАЛЛИ.


Стр

1. Иртнĕ мĕлкесем . . . . . . . . . . . . . . . . . . 3
2. Икĕ пит . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 10
3. Саӡукпа Малттин . . . . . . . . . . . . . . . . . . 23
4. Пахӡари ӡеӡексем . . . . . . . . . . . . . . . . . 35
5. „Пуçлăх патне“ . . . . . . . . . . . . . . . . . . 41
6. Кӳлĕ хĕрринӡе . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 47
7. Çĕр айĕнӡе çĕртĕр . . . . . . . . . . . . . . . . 57
8. Кама мĕн тывĕç . . . . . . . . . . . . . . . . . . 65
9. Асту, ан ман . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 72
10. Виççĕрен пĕр тĕвĕ . . . . . . . . . . . . . . . . 82
11. Епĕ йăнăшма пуçланă . . . . . . . . . . . . . . 96
12. Шынасăр урапа . . . . . . . . . . . . . . . . . 102
13. Хамăршăн . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 113
14. Ирсĕр каç . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 123
15. Ратио . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 135
16. Вăтăр кĕмĕл пĕр тевет . . . . . . . . . . . . . 143
17. 1918-мĕш çул . . . . . . . . . . . . . . . . . . 153
18. Мускавра . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 165
19. Ăçта каймастăн шухăшпа . . . . . . . . . . . . 175
20. Автăртан . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 183



Отпечатано в типографии № 1 Чувашгосиздата, Чебоксары

Уп. Чувашглавлита № 1309. Заказ № 2483. Тираж 10.000 экз. 6 п. л.



## 1. Иртнĕ мĕлкесем.

ШУРĂ сухаллă ватă уйăх пуйан Ухăђванăн вăтăр пилĕк урапаллă ыраш капан тăррине кармашса хăпарђĕ те, хăйĕн хĕвелтен вăрланă йăлтăрка хĕлхемĕсене усăлма кăларса йађĕ. Çавăнтах аслă йалăн ђиркӳ çамкисемпе кĕмĕл хĕрессем пĕр-пĕринпе куç хĕсмелле выљаса илђĕç.

Çемçе, ăшшăн кăтăкласа вĕрекен лăпкă çил те пахђари йаштака хурăн ăшне канма кĕрсе выртнă пек лăпланђĕ. Тĕлĕк кайăкĕ тăмана та мăн çунађĕсене сарса пĕр сасăсăр, шăппăрт тĕлĕрекен ђăваш йалĕ çине лап-лап вĕçсе анђĕ.

Çӳлĕ ђăнкă пысăк ту...

Ун тӳпинђе—Ухăђван, пĕр пĕђђен. Пуçĕнђе çӳлĕ кăшăллă кăвак пустав картус, çийĕнђе карас пĕрмеллĕ кĕрен пурçăн кĕпепе хура тийакăнаљтен çĕленĕ шалпартарах шăлавар; хулхушшинђе йатне Капкасран кӳртернĕ хура туйа. Вăл йаланхи пекех савăнăçлă. Туйипе куçа çисе тăракан сакăр кĕтеслĕ аттине çат-çат çатăлтаттарат. Тăрсан-тăрсан тăртанса кайнă мăнтăр аллипе сар пурçăн пек çемçе сухалне йакатса илет. Ун умĕнђе „Ђикан“ йатлă йăм-йăм курнакан йытти, хĕвел ăщшипе ађашланса выртат.

Ытла та ҫӳлёҫке ку ту. Никам та хӑпарайми вырӑнтан унӑн ҫурҗё курӑнаҭ. Җӑн-җӑнах тӑвё ҫӳлё. Ухӑљван умне пилёк-улт ҫухрӑма тӑсӑлакан хӑйён „саккунлӑ“ уй-хирё курӑнаҭ. Йепле вӑл симёс вӑрмансемпе ыталанса сарӑлса выртнӑ...

Акӑ Ухӑљван тӑван йалё те ун умёнҗех. Ав унӑн җул ҫурҗё, алӑк пек пысӑк 12 җӳреҗисемпе хёвел ҫуттипе алхашса лараҭ. Ав сат пахҗи ӑшёнҗен ун ерех хупахё хуйхӑ-суйхӑ пуснӑ җӑвашсене кӑҗӑк туртаҭ... Ав инҫе те мар, итем ҫинҗи тарҫӑсем хёрсе ыраш ҫапаҫҫё...

Тӑххӑрӑн ҫапакан итем йурри Ухӑљвана савӑнтараҭ... Итлет вӑл.

Тӑппи-таппи, тӑппи-таппи, тӑп-тап! Хур! Ҫап-хур! Хуракана хур тукмак, хуманнине җӑх тукмак...

Сарлака итем тарлӑ ёҫ йурри йурлаҭ. Кёлтесем сиксе ӳксе ҫурмалла татӑлаҫҫё. Ухӑљванӑн ҫупа витённё җёри ҫӳлелле ҫёкленет.

Вёсем тӑххӑрӑн. Вӑйне шеллемесёр ёҫленёшён йун шёветме пёрер җеркке те пулин лешне тыттарсах пулаҭ, тесе шухӑшлаҭ вӑл.

Сасартӑк пуйанӑн ҫӑра хура куҫ харшисем пысӑк сӑмси ҫинҗе пёрлешрёҫ. Вӑл пёр тарҫи тайкаланса анкарти хыҫёнҗи кӳлё умне пырса выртнине курҗё иккен.

— Ах, ку мур Ивана, пёртте ёҫлесшён мар ҫав, ахалех ҫемйипе ман ёнсе ҫинҗе, кӳпсе выртма йуратаҭ... Пёркун та Анҗӑк ун ҫинҗен ытти тарҫӑсен пуҫне темёскерле йурӑхсӑр шухӑшсемпе пӑтратаҭ тесе, систернёҗҗёха. Ак кӑтартамха епё ӑна мёнле канмаллине... канма?!., пӑлхав?!

Ухăљван çиленсе ту çинђен аллинђи патаккипе йунаť, кăшкăраť... Çук, Иван итлемест. Итлеме мар, хуçи йенне те çаврăнса пăхмарĕ.

Çÿлĕ ту çинђен ĕрлешсе васкаса аннă хуçа туйипе Ивана пуç урлă хуђĕ.

— Пĕрре, иккĕ, тепре!.. Вăт сана!.. Ак, ак сана!..

Хуçа урса кайрĕ. Ытти тарçăсем ĕçе пăрахса хăй тавра пухăннине те курмасť.

— Апла вăл вилме пултараť!

— Иван ђирлĕ.

— Халђ те сасартăк антранипе çеç ĕçне пăрахрĕ.

— Ан тивĕр!

— Мĕншĕн хĕнетĕр!?

— Вăл ђирлĕ!—кăшкăрашрĕçĕ патраксем.

Хĕрарăмсем хăраса йĕме тапратрĕç, хăш пĕрисем „Шел, капла хĕнесен ђирленĕскер вилме те пултараť“ тесе шутларĕçĕ.

Çук, Ухăљван вĕсене курмасť. Нимĕнле сас-ђĕв те илтмест вăл.

— Ак, ан!...

Йывăр туйа пуçĕ хуçăлса ÿкрĕ—вăл çаплах ђарăнмасť. Пушшех çĕнелсе урса кайрĕ...

— Ак, ак сана!...

Йунпа пĕвеннĕ мĕскĕн Иванăн пуç ђашки çарт çартлатса çурăлђĕ. Вĕри çăра йун палкаса тухрĕ.

— Иван Иванђă, мĕн тăватăн ес?!

— Вĕлерђĕ!

Пĕр хĕрарăм çари кăшкăрса уласа йĕрсе йађĕ. Урса кайнă хуçа пуçне çĕклерĕ те ытти тарçисем çине çавăрăнса пăхрĕ.

— Сире мĕн?!

— Сире мён кирлё? хăвăр ёçёре пёлёр!,—тесе хайаррăн кăçкăрса йаҕё. Пёр самантрах çӳлё, хёпхёрлё, упа пек вăйлă Ҕукмар Микулё ăна ёнсинҕен ҕышса çёр çумнех çыпăçтарса лартрё.

Тёшёрёлсе аннă пуйанăн сарлака çурăмё çине çиҕ-сакăр писмен ҕукмарё пек йывăр ҕышкă ҕăмрёсем пере-пере анҕёçё...

Ухăљван хăраса вăранса кайрё. Ҕётёрекен пӳрнисемпе çăмлă кăкăрне ҕёпётсе пăхрё:

— Ай! тёлёкре пулҕё иккен...

Пуйан ик-виç хуҕҕен ӳпке тулли вăрăмăн сывласа йаҕё, кравать умёнҕи пёҕёксё çаврака сётел çинҕе выртакан арăмён шур ҕёрçиттипе кăкăр çинҕи тарне шăлма тытăнҕё.

— Мёншёнха кун пек тискер тёлёксем курма пуçларăм? Çакăн пек тискер хăрушă тёлёке миçе хут куртăм ёнтё кăçал хёлле те, тата халҕ.

Хе! Усала ан пултăрҕҕё? Тёлёк? Тёлёк—мёне пёлтеретши вăл?—Пустуй вăл, мён ун çинҕен шутлатăпха, терё вăл хăй ăшёнҕе.

— Çук, мёне те пулсан, паллах, пёлтерет пуљ.

Ухăљван хăй пёҕҕен тёлёк мёскере те пулсан пёлтернипе пёлтерменни çинҕен нумай шутларё, анҕах тупаймарё.

Аптранипе çумёнҕе выртакан арăмне кăлт ҕышрё.

— Марук, мён вара ес вилнё пек çывăратăн. Хăна вёлерсе тухса кайсан та сисмён çав есё.

— Тăрха, тăр...

Арăмё тутлă тёлёк курать. Лутра кăна çăра пёҕёккё илемлё йешёл вăрман ăна тёлленет. Вăрман ăшёнҕи

çавра уçланкăра, ђĕркуççи таран çаранра, кăвак, хĕрлĕ, сарă ђеђексем лăпкă ăшă çилпе ђўкенсе лараççĕ. Хура мăйăхлă ахвитсер Марука ђеђексем тата-тата парать...

— Тăрха, тăр! Çаврăн ман йенне.



Марук ăйхă пĕркенђĕкĕ витĕр ак упăшки сассине илтет, анђах йыврăн туйăнакан пуçне çĕклемест.

Хăрах куç хупанкине кĕлт хăпартрĕ, каллех хупрĕ,—ытарайми тĕлĕкне курса пĕтересшĕн.

— Миçе каламалла сана, — упăшки тепĕр хут айăк пĕрђинђен хытăрах ђышкипе тĕртрĕ.

— Ђимха, ђим, кăмăл çукха, терĕ мамăк тўшек ăшне путнă Марук, пĕђĕк ађа пек ађашшăн карăнкаласа.

— Мĕн ђимлетен, рас тăр тесе каланă сана... Хăна çарамас хăварсан та туймăн çав ес.

Капла каласан арӑмӗ хӑраса ӳкрӗ.

— Мӗн, мӗн тетӗн?—Пӗтрӗмӗр. Йапаласене илсе кайнӑ. Ай-ай!..

Ухӑљван ахӑлтатса кулса йађӗ.

— Çук, ђунӑм, ан хӑра!... Тӗлӗк куртӑм е-е, тӗлӗк куртӑм, тӗлӗк.

— Мӗнле тӗлӗк?

— Леш. Хӑйамат, çав Малттин ашшех... Темӗне пӗлтерӗ ӗнтӗ ку? Çавӑнпа тӑратрӑм сана.

— Тарçӑ-и? Иван-и?

— Ара, çавӑ çав. Ђисти çавӑн ђухнехи пекех вӗт. Пуçӗ те çаплах çурӑлђӗ, хама та тӳнкеме тытӑнђӗç. Мӗне пӗлтеретши? Ыттине вара тӑнсӑр пулнипе астумастӑп. Тӗлӗнмелле, хӑраса вӑрантӑм.

— Малттин, çав Иван ађи, йала таврӑннӑ вӗтха, тата вӑл темӗскер айкаштарса ан пӑрахтӑр. Ӑна путсӗре, пӗртте шзнма çук... Ех, çавӑн ђухнех вӗсене йӑхӗ-тӗпӗпех пӗтернӗ пулса-ан, халӗ пӗр шиксӗр, райри пек пурӑнмалли çынсемђђӗ вӗт.

— Е-е-х-е-хех!..

— Ашшӗ унӑн çавӑнтан кайран пуљнитсӑра вилђиха çав?—тесе ыйтрӗ Марук.

Вӑл та ӗлӗкхишӗн тавӑрасран çӳçенђӗ.

— Пуљнитсӑра вилђӗ. Арӑмне аллинђи ађипе ыйткалама хӑваласа йатӑм. Лешсем, мурсем, тепле çапкаланса пурӑннӑ вара. Амӑшӗ выçлӑх çул Атраç йенђе вилнӗ, терӗç. Ађи, çак Малттинӗ, пирӗн инкекшӗн ђӗрӗ йулнӑ.

Вӑт, çавӑ çав. Ку амӑшӗ пек мар. Çитменнине самани те урӑх, пирӗн мар. Хаљ çавӑн пек ӗнтӗ

йём пыйтисемпе хăмла тăррисем патша пулса пурăнаççĕ. Шупашкарта Рапфак пĕтерсе хаљ Мускава вĕренме кайнă. Вăт хăйамат.

— Ну ку тĕлĕк ырра пултăрђђĕ ĕнтĕ.

— Ей турă, халиђђен сыхланине, малашне те усалтан хăтарсамђђĕ.

Ухăљван малти кĕтессе пăхса йарханах кăкăрĕ çинђе мăнтăр аллисемпе шăна хăвалангă пек пăтратса илђĕ...

Кăвак шуçăмăн шăратнă кĕмĕл пек çутти пахђа йенђи ђўређе витĕр çывракан пўлĕме йухса кĕђĕ. Пуйан Ухăљванпа арăмĕ лăпланса канлĕн çывăрса карĕçĕ.

## 2. Икĕ пит.

КЕНĂ вăранҫĕ. Вăрăмăн йăнăшкаласа анасларĕ. Ҫĕлен пек йавăнса найаннăн карăнса илҫĕ те, Кулинене хăй пӳлĕмне кăшкăрса ҫĕнҫĕ.

— Кулине-е!..

— Ҫиҫҫас! тенĕ сасă илтĕнҫĕ тепĕр пӳлĕмрен.

— Миҫе каламалла сана. Рас каланă—ту! Епĕ тăнă ҫĕре йаланах ирхи ăшă сĕте куркапа кĕртсе ларт. Хаҫхи вăхăтра йăлт пусмăрласа ҫитертĕнха есĕ. Хăвăртрах тетĕп еп сана, тăмкайăк, ыр ҫынсене мĕнле пăхмаллине пĕлместĕн. Навус!

Алăк урлă каҫнă Кулине пĕр сăмах ҫĕнмесĕр вăрт варт ҫаврăнса калла кухнĕне ҫупса тухсан, Кенă вырăн ҫинҫен тăҫĕ.

— Йемелккене ҫыру ҫырмаллаҫҫĕ, шуйттан, унтан интекралсене пăхса тухмаллаҫҫĕ—веҫ пăсрĕ. Сысна! Пĕтĕм настройенине пĕтерсе пăрахрĕ. Хытăрах тыткаламаллаха вĕсене. Йăлтах аҫашласа пĕтернĕ есрелле. „Йăвашрах пул, самани ҫапла“,—кăтартăп вĕсене саманине. Еп хам—самана! Ҫынна университетран кăларасшăн. Суприт тумалла, кунта настроенийе пăсса выртаҫҫĕ. Ех!..

Кенă ҫăтаймасăр ҫăркăшса пĕр кĕтесрен тепĕр кĕтессе калле-малле утаť.

— Вăт, сысна!

Сĕт илсе килнĕ Кулине ђăтаймарĕ.

— Ан вăрç ĕнтĕ, ан вăрç... Кенати, епĕ йури мар вĕт, ĕлкĕреймерĕм,—терĕ тутăр пек шурса кайнă Кулине ун çине пăхмасăр.

— Ĕнине сумалла, кĕтӳ хăваламалла, апат пĕçермелле, ђĕпписене çитермелле,—ăçтан, ĕнтĕ, пĕђђен пурне те ĕлкĕретĕн.

Кулине аллинђи ăшă сĕт тултарнă пăхăр куркине сĕтел çине лартрĕ.

— Тăрантсан ĕлкĕрĕттĕмха еп. Питĕ аван ĕлкĕрĕттĕм...

Унтан Кенă, темĕншĕн каçарнă пек пулса, йăвашшăнтарах калам пек турĕ:

— Йурĕ еппин, ђорт с тобой, ступай шывпа супăђ хатĕрлесе хур.

Кулине тухса кайма тытăнђĕ.

—Асту, алшăлли тытиђђен малтан аллуна çу, шăл ваљђи лĕппине хатĕрле. Пыр, еп тухăп, терĕ Кенă.

Кулине çав тери хурланђĕ. Çапах та хирĕç сăмах уçаймарĕ. Супăђпе пурă çăнăхне илсе те ĕлкĕреймерĕ, каллех ăна хайар сасă ђĕнђĕ.

— Харам пыр, ађа йĕнине илтместним?

Ухăљђванăн хулăм, çăвар тулли сасси малти пӳртре йанăраť.

Кулине ĕçне пăрахса унта ђупрĕ.

— Сăмавар ĕлкĕрнĕи?! Кенати тăнăиха?—ĕрлешрĕ çав сасах.

Кулине çĕмрен пек çӳресен те, пурне те туса ĕлкĕреймест. Иара куна ура çинђе, вĕçĕмсĕр ĕç... çĕрле те унăн куçĕ çурçĕрђђен хупăнмасť: йе ађи

йĕрет, хăнисене те пăхмалла, ăна-кăна тумалла. Мĕн тĕрлĕ йывăр пулсан та мĕскĕн Кулине ђăтаť.

Ăçта кайас тетĕнха тăлăхăн, латнă тата çитерет, ланђашкине те пулсан, кĕпе пекки тăхăнтараť, тесе шухăшлаť вăл, пурнăç йывăрĕ хытăран хытă çапса хĕстернӗ хушăра.

Хуçасем вĕретсе хатĕрленĕ ђейе ĕçме ларђĕç; Кулине çаплах ĕçлет. Вăл, карташ шăлнă хыççăн шыв ăсса килсе лартрĕ те, пӳрте кĕђĕ.

Пӳртре ăна Марук харах çыпăçрĕ.

— Ăçта ес çӳретĕн? Ав, Аркаш какка тунă. Мĕн ути-утми йăраланатăн. Лӳппер, тăмана!.. Тасат та, кунта пар,—сахăр хыптарăп...

Кулине йăпăр-йапăр çырткаласа сĕтел çинђен пуçтарђĕ те, мунђа хутма васкаса тухса ђупрĕ...

* * *

Хуçа арăмĕ сăмси айĕнђе йурлакаласа сĕтел çитти тĕрлеме пикенђĕ.

Кенă та пахђари хăва айне сулхăна тухса сарăлса выртрĕ. Ун айĕнђе мамăк минтер. Çемçе. Сулхăн. Çĕмĕрт йăвăççи çинђе шăпђăк хитре йурă шăрантараť. Ун хыççăн, хурăн çулçисем те, ăшă хĕвел тивлетне хапăл туса, хавасланса алă çупса лараççĕ. Сывлăш калама та çук уçă. Кенă савăнаť. Тем хак парăн çав ӳпке тулли пĕрре сывласа илме.

Пуйан Ухăљван çемйи пурăнма пĕлет. Ђухăн хресђенсен тарне-йунне сĕлĕх пек сăрхăнтарни ахалех çухалман. Нумай çын тарласа хăшкăлнă ку пахђара. Анђах вĕсем хăйсем капла нихçан та канайман. Калăн, хĕвел те вĕсемшĕн çеç пăхаť. Çеç-

кесем те вёсен хура йунлă ђёрисене уçма çеç çурăлнă. Кам çакăн пек илемлĕ пахђара хёвел ăшшипе йăпанса, хăвасем ђелтĕртетсе калаçнине итлесе тутлă ăйха кайасшăн мар?—Пурте çапла. Пурте



çавăншăн тапаланса малалла тем-тем ёмётленеççĕ. Анђах çитмен пурнăç пур вырăнтан та татăлаť.

Çывăхри йешёл ђийе йăвçисем ђăштăр-ђаштăр

турĕçĕ. Унтан лăпсăркка сар ђеђеклĕ аккас, ђаршав пек йар уçăлса çинçе пилĕклĕ пуп хĕрне çурса кăларђĕ.

— Ба-а!.. Нинă Никколайĕвнă! Кил, „Йеркĕн“ пыл не ĕмерха. Хамăр çын пекех сырат̆.

Нинă Николайĕвнă пĕр вырăнта вăр-вар çаврăнђĕ те студент патне ђупса пыђĕ.

— Камăнне вулатăн?

— Никколай Васçиљђăнне.

— Кам вăл, астусах каймастăп?—терĕ Нинă кулкаласа.

— Ах, мĕн ес калаçатăн?

— А-а, Шупуççынни! Пĕлетĕп!.. Ун сăнне „Сунтал“ çине ўкернĕђђĕ. Каçăр, селĕм кăна çын...

— Нинăђкă, пăхха ак, мĕнле вăл çырат̆:

„Сарă кăтра çўçĕме
Епĕ турам-и?
Вăрăм йаштак пĕвĕме
Тўрĕ тытам-и?
Шурă çамкам сарлаки
Çынна курăнтăр
Ватă çын та çамрăкки
Мана пуç тайтăр.

Пуç тăррине картуса
Ђалăш лартам-и?
Хура пустав сăхмана
Йўле йарам-и?
Тĕрлĕ умлă шур кĕпи

Капăр курăнтăр,
Сарă хĕрсен кăмăлĕ
Пире пăхăнтăр"...

Кенá аллинђи кĕнекине ђĕркуççи çине çат! çапса хăй умĕнђе авкаланса, кĕçенсе тăракан Нинă çине кăшт кулса пăхрĕ.

— Ну мĕнле?

— Йулашки çинђен каласшăн ĕнтĕ ес. Ай-йай, ес те çав ђеййе. Анђах хаљ урăхла калас пулаĭ ĕнтĕ.

— Мĕнле?

— Пĕл,-терĕ Нинă, пуçĕнђи улăм шлепкине кăшт тўрлетем пек тукаласа.

— Нуу, Нинă Никколайевнă, ахаљ те пуç интекралсемпе тулнă. Тата ес те сатађђăсем парса ђăрмантаратăн.

— Ех, ес те çав. Ак капла калас пулаĭ, итле еппин, хамах каласа парам:

„Тĕрлĕ умлă шур кĕпи" калас вырăнне:

Хура калстăк шур кĕпи
Капăр курăнтăр,
Сарă хĕрсен кăмăлне
Сар кађђăсем парăнђђăр... тесен мĕнле?

— Вэон што-о?!...

— Ехĕĕ!...

Нинă ђĕпĕлтетсе! илнĕ хыççăн Кенă темшĕн салхуланнă пек пулђĕ.

— Вот, Нинă Никколайĕвнă, мĕнле аван пулнă ĕлĕкхи пурнăç.

— Тааа!...

Нинă Кенă çумне ларђĕ. Йĕс курăк пуçахне татса илсе, Кенăн çемçе ĕнсинђен кăтăкларĕ.

— Мĕн ес кăлăхах рăскална çухататăн?

— Да! Рăскалăм çук.

— Ей, ун çинђен шутласан пурăнасси пĕтрĕ вара. Пайан кун пурăнас пулаť. Илтрĕне?

— Ах, Нинă Никколайĕвнă, йепле есĕ ăслă. Санăн çу пек çемçе сăмаххусем манăн тискер кайăк ђĕри пек сикме пуçланă ăшђикĕме лăштах кантарђĕç.

Нинă Никколайĕвнă, мĕнле ман сана тав тăвас. Ак, пăхатăп санăн хĕвел пек çунса тăракан ўтпĕвў çине. Халех сана тăван йăмăка йуратса ђуп тунă пек ђуптăвассăм килсе кайрĕ.

Нинă кĕçенсе кулса илђĕ: çавăнтах шурă кађа пўрнине ђуптуса, Кенăн тути çине пырса пусрĕ.

Кенă çумĕнђе ларакан Нинăна ыталаса илсе хăй çумне хĕстерсе лартрĕ...

Кенати Иванђ, лайăхрах вырăнсене тупха. Вулар.

Кенă „Йеркĕнĕн" майра патша ђухнехи саманран йатлă пўлĕмне шыраса тупрĕ те „ак кунта аван вырăнсем пур, итле" терĕ.

Çăл куçĕнђи тăрă шыв
Ирхи çилпе йĕрленет,
Çăлтан йухса тухан шыв
Хумханаť те тўрленет.
Çамрăк хĕрĕн таса йун
Тўлек йухаť кĕлеткере:
Тĕл пулаť çеç тепĕр ђун—
Иртет канлĕх ђĕрере...

Пурнăçпала паллашсан—
Нимех те мар хумхансан...

— Ах, сăмахсем. Çăл куçĕнђи тăрă шыв, ăçта есĕ хаљ?!. Хум-ха-наť те тўрле-нет! Вот çапла пулинђђĕ вăл. Хаљхи пурнăç маншăн пулсан веçех, веçех ишĕлет.

— Кенати Иванђ, есĕ йулашки виç куплетне астуха? йепле çаптараť. Пăрахха ес политтĕкпа аташма

— Да! Это наш великий поэт! он наш!..

Нинă ура çине сиксе тăрса, пĕр вырăнта сиккелесе ик аллине хире-хирĕç çат! çат! çапса илђĕ.

— Кенати Иванђ, айта кимĕпе йарăнма кайар. Пăхха есĕ, çанталăк йепле илемлĕ. Кўллĕр йепле фервейĕр пек кулса çутăлса выртаť.

— Айта! терĕ Кенă.

— Айта!

Иккĕш те пахђари хупахсем урлă сиккелесе кўлĕ хĕррине ђупса анђĕç.

Хĕвел çути кўлĕ çинђе илемлĕ тĕрĕсем тĕрлет.

Кўлĕн пĕр хĕрринђе сарă ылттăн тĕслĕ хăйăр купи хĕвел çине канма тухса выртнă сомă пулă пек сарăлса выртаť.

Кенăпа Нинă акăш пуçлă кимĕпе йерипе кўлĕ варринђе ишеççĕ.

Хыçалти шурă ђеђен кăпăксем йĕлђĕре пек хум çинђе сарăлса пĕрĕнсе çухалаççĕ. Нинă кĕреçинђен йыт пулли йевĕрлĕ çул тăсăлса йулаť...

Вĕсемшĕн аван. Кунĕ те ырă. Пĕлĕт те уйар... Хĕвеланăç йенђе çеç татăк-татăк мăнтăр тăхлан пĕлĕтсем çакăнкаласа тăраççĕ...

— Килте пёртте тăрас килмест. Ăçтаха çав ват карђăксемпе пурăнас тетĕн? Сассине илтес килмест. Веçех йăлăхса çитрĕм.

Виçĕ çĕрте пурăнайманшăн та вăрçаççĕ. Ку хуť, йулашки, комунис, унпа пурăнни хамăршăн аванђђĕ, теççĕ. Пурăнăн? Рас килĕштерейместĕн тĕк, йепле пурăнас тетĕнха. Пĕри вăрмана, тепри армана кайсан, мĕнле пурнăç пулаť.

Стутент ăна итлеменпе пĕрех. Нинăн кĕске кĕпи айĕнђен йăлтăртатса тăракан пурçăн ђăлхи çине пăхса темĕскерле шухăша кайрĕ...

— Есĕ камаха вăрмана кайнă терĕн? ыйтрĕ Кенă. Нинă упкеленнĕ пек пулђĕ. Йусман пек çӳхе тутине тăп тытрĕ. Йасарăн кулса тăракан хура куçĕсем пĕр вырăна пăхса хытрĕçĕ. „Хăй йăпăлтаттăрха, арçынсем вĕсем ытла йуратсан сăмсисене тавăрма пăхаççĕ. Ђĕнместĕп“ тесе Нинă хăй ăшĕнђе шутларĕ.

— Нинă Никколайĕвнă, тархасшăн ан йăлăнтарха. Кам сана капла ђăхăмçăланма вĕрентнĕ. Мĕн пулђĕ тата, а?

Кенă ђейе, çанталăк пăсăлнине кура тилĕ пек йăпăлтатма пуçларĕ.

— Сођувствăť тумастăн. Çавăнпа та ес ман сăмахсене лайăх итлеместĕн те.

Кĕске вăхăта пĕр-пĕрне нимĕн сăмах та ђĕнмерĕç

„Ку мана кађђа килесшĕн пулас, вăт ухмах“ тесе шухăшларĕ хăй ăшĕнђе Кенă.

— Çук, Нинă, ан çилен. Есĕ карђăксем çинђен калаçни темĕскерле скуђнă пек, айта луђђă хурлăхан татма пахђана кайар. Йураťи?...

Нинă хура куç айĕнђен Кенă çине ăшшăн пăхрĕ. Анђах ним те шарламарĕ, кăшт кулан пек туса пуçне айаккалла пăрђĕ.

— Нинăђкă, мĕн ес хăмсаратăн.

Ишме ђарăнса тăвăр кĕске кĕпе виттĕр палăрса тăракан хирĕç ларнă Нинăн, ик ђăркуççинђен тытса силлерĕ.

Нинă уйартрĕ:

— Ей, йурĕ еппин, Кенă. Ав, çав ватӑ йăмра айнелле пăхтарамха...

Кимĕ пăрăнђĕ. Йăмра çумĕнђи пысăк симĕс шапа кӳлĕри тăрă шыва ђăмпăлт! туса сикрĕ.

— Кенă, санăн тата миçе çул вĕренмеллеха çав?

Нинă çав хушăрах кимĕ çурса пыракан лĕп шыва аллипе ăсса илсе айăккалла сирпĕтрĕ.

— Йулашки çул, вара?

— Çук ахаљ.

Нинă çĕмĕрт пек хура вăрăм çиттунине тӳрлетен пек туса çурăм хыçне ывăтрĕ. Хура куçне кăшт хĕссе хĕвел çине пăхса илђĕ. Кӳлĕри шыва ђавси тăрăх йухтарса тӳртем тăрăхларах сăмси айĕнђен кулам пек турĕ.

— Сан аван, манăн ĕçсем нађартарахха. Опђĕс-твăлă ĕçре ĕçлемен, теççĕ. Тасатаççĕиха? Атте пупра ĕçлени питĕ кансĕрлет.

— Йалта ĕçлен пекки тукалас пулаť. Кайран йалсоветĕнђен тĕслĕхшĕн хут илме тăрăшас пулаť,— терĕ унта-кунта пăхкаласа Кенă. Кĕсменсене хытă-рах пусрĕ те кимĕ малалла хытăрах шума пуçларĕ.

— Ниђђово, Нинă Никколайĕвнă, ăна епĕ хам тăвăп. Йалсовет пуçлăхĕ Паљук хамăр çын. Ађи

пултараканскер, унпала ёç тума пулаť. Клавнăй, епĕр ăçта вĕреннине комсомол йађейккине пĕлтермелле мар.

— Кенăђкă, мĕнле ес пăхатăн çав Малттин çине?

— Пĕртте курас килмест ман ăна. Пирĕн çын мар вăл. Пирĕн ăна такăнтармалла. Ёçе пăссан та, çав пăсаť ĕнтĕ. Ну, ниђђово, пухусене çӳрекелесе опђĕствăллă ĕçре ĕçленине кăтартас пулаť...

— Да! Да! Вот, конеђнă, ес тĕрĕс калатăн.

Нинă пысăк тĕмескеленнĕ кăкрисене кисрентерсе, а хăлтатса кулђĕ.

Тăрă шыва хуллен йăр-йăр çурса пыракан кимĕ симĕс-хĕрлĕ пуçахлă хăмăшсене çĕмĕрсе лађакана хĕсĕнђĕ.

Кенăпала Нинă клентăрла çыхăнса пахђари ђăтлăха путрĕç...

* * *

Ухăљван хырăмне лăках тултарнă хыççăн кĕлет пусми çинђе тарăн шухăша кайса ђылайђђен Кенă илсе килнĕ ђĕлĕмне паклаттарса ларђĕ. Пуç ун ĕçлет. Шухăшсем меслетсем шыраççĕ.

— Тырă хакĕ ĕнтĕ ӳссе çитрĕ. Кĕркуннехи виçĕ пăтпа халĕ пĕр пăт та илейместĕн. Ђухăн тыррине пĕтĕмпех леçсе тăкнă. Халĕ, ĕнтĕ, манăн пасар килђĕ, тесе шухăшларĕ вăл. Ђĕри савăннипе хытăран хытă шаккаť.

— Пĕр 500 пăт леçтеремха стантсăна, пĕр 1000 пăтне Кăрмăша, капансене ыранах çаптарма тытăнасха. Атту-тăк тем пулса тем кайĕ. Йалсенђе тырă çĕнĕрен пуçтарма тытăннă сас-хура илтĕнет. Иртнинђе

пытарма ĕлкĕрнĕђђĕ, кăçал çывăрсан пытарса ĕлкĕреймĕп. Кĕçĕрех Хĕритуна 5 лавпа ăсаттарас. Хамăрăн виçĕ лаша, иккĕшне хунђăкам парĕ...

Ухăљван çак шухăшсемпе ађашланса пыллă сăра тутанма нӳхреп лаççине пĕшкĕнсе кĕрсе кайрĕ.

Тата пĕр çур сехетрен Ухăљван Михетер хунђăкĕш патне хыçалти алăкран йăпшăнса кĕнине никам та курса ĕлкĕреймерĕ...

* * *

Виç ђӳређеллĕ йăвăç мунђа тăрпинђен тĕтĕм йăсăрланса тухаť. Пĕр-ик аршăн хăпарсан çĕрелле персе анаť, унтан каллех çĕкленет...

Хулăн сарă ђăрăш пĕренинђен тунă мунђа мĕлки сарăлса выртнă çутă кӳлĕ çинђе ђӳхенет.

Кулине кăмакана çатрака вутă пăрахаť. Унăн шурă пиђĕ хĕвел çинђе пиçнĕ улма пек хĕрелсе кайнă. Хушăран пахђара кĕçенсе кулнă сасăсем Кулинен хăлхине пырса йĕп пек тăрăнаççĕ.

— Йеплеха çынсем çавăн пек кулма йуратаççĕ. Вĕсен мĕн?—ахăрмалли çеç. Ах! çав мурсене, пĕр вăй çитсен пурне те măйĕсенђен ђăмăрта-ђăмăрта пăрахăттăм. Çук çав.–

Кулине темĕнтен те хыт кӳреннипе пулас, ђукмар йевĕрлĕ тункатине мĕн пур вăйĕпе кăмака ăшне ывăтрĕ.

— Ех, пурăнаççĕ вĕт çавсем. Пирĕн атте-анне те телейсĕр пулнă çав, турă пӳрменнине илме çук çав...

Ай! мĕн пулђĕ тата?

Кулинен хырăмĕнђе темĕскер йăвашшăн йăшăлтатса кайрĕ. Ађа? Ађана ђун кĕђĕ?!

Кулине савăнса кулам пекки турĕ. Анђах ун кулли тухмарĕ, уласа йĕрсе йађĕ. Пĕр кĕске вăхăтра ђип ђипер ĕçлекен хĕрĕн пуçĕ çурăлса кайас пек ырата пуçларĕ. Мађђана пăхаť—нимĕн те курмасť.

Ун пуçĕнђе пĕр шухăш выљаť.

— Пĕтрĕм!..

Хăй урайне пăталаса хунă пек хытрĕ.

— Йеплеха пулђĕ, йепле, йепле?! Ăçта епĕ улталантăм?

Акă вăл татах астăва пуçларĕ.

Тăвата уйăх кайалла пулса иртнĕ ĕçсем хуллен хулленех вĕçсе килсе мађђан тўпине ларса—сăрлана пуçларĕç...

Пўртре урай çуни, Кенă краваť çинђе кĕнеке вуласа выртни... Ухăљванпа арăмĕ хăнара... Кăраваť çине çĕклесе çапни... „Йурататăп“... хулана пĕрле тарăпăр...

Каллех Кулине хурланса питне куççулĕпе çурĕ.

— Халĕ йыттине те манран хыта йурататť... У-у! кураймастăп епĕ ăна. Пурте вĕçем, пурте çапла. Пур арçынсем те улталама çеç тăрăшаççĕ... Кĕçĕрех ашшĕсем умĕнђе питне сурам. Хуť те мĕн тутăр, хуť те ăçта хутăр... Хăйĕн!..

Хĕрĕн ăшĕ кăшт лăпланђĕ. Пуçĕ çаплах çурăлас пек ыратаť... Мунђине пултарнă хыççăн ўсĕр çын пек тайкаланса Кулине киле таврăнђĕ.

Ађине ђуптуса ларакан Марука „мунђа пулђĕ“ терĕ те, шушшилене, хăй вырăнĕ çине халтан кайнă çанçурăмне кантарма улăхса выртрĕ...

## 3. Саӈукпа Малттин.

САӈУК хӑй арӑмӗ ӗҫлесе панӑ лаптакрах тӑла пушмакне тӑхӑнма кӑна тытӑннӑӡӡӗ, Малттин килсе те кӗӡӗ.

— Ну, мӗн ҫӗмӗрттерсе пурӑнатӑр? Аваниха, Саӈук?

— А-а! Малттин, аванха, аван пурӑнатпӑр. Кил, ирт. Ак кунта лар.—Хӑй тунӑ ҫаврака тенкел ҫине хулӑн пӳрнисемпе тӑсса кӑтартрӗ.

— Ларасси мӗнӗ ларӑп та-ха, епӗ сан патна ӗҫпе килнӗӡӡӗ, терӗ Малттин. Есӗ районран упполномоӡӡӗннӑй пулнӑ, терӗҫӗ... Ку питӗ аван.

— Аванни ҫавӑн пек ӗнтӗ. Пустуй мана унта кӗртнӗ.

Малттин куҫне ӡарса пӑрахрӗ.

— Мӗн тата?

— Тӳррипех каласан ӗҫлеме йывӑр, пулӑшакансем сахал, ывӑнтӑм—куран,—персе хуӡӗ Саӈук.

— Ниӡӡево-о! Канас пулат̆. Хут̆ те мӗнле ӗҫӗн те хӑйне йеверлӗ йывӑр йенӗ пур.

— Хресӡенсен тырӑ сахал, Рикран хӗсеҫҫӗ. Ку, ман шутпа, пӗртте тӗрӗс ӗҫ мар пек. Вӗсене ҫӳлте приккас парса ларма питӗ аван, кунта есӗ пур, ӗҫле тарна йухтарса.

— Ăçта хунăха вара хресђенсем тыррисене? Ну, ђухăнсем çинђен калаçмăпăр,—вĕсем кĕркуннех ытлашши пек тыррисене патшалăх аллине леçе-леçе пĕтернĕ. Вăтамсем те нумайĕшĕ ђухăнсем пекех. Ухăљван, Миťук, Михетер таврашсем тыррисене ăçта хунă тенха есĕ? Кулаксем вĕт...

— Ăçта, паллах ăçта, ăсатнă, хăшĕ пытарнă. Вĕсем ăçта хумаллине аван пĕлеççĕ.

— Ăсатнă çĕртен калла илсе килтермелле, йал çине хунă плана тултармаллах, терĕ Малттин.

Сађук хĕрсех кайрĕ.

— Ђĕлхепе калама пит те аван,—пырса тупха. Пуçна çурса пăрахĕç. Йăхĕ тымарĕпе пĕтерĕç. Йулашки çуртна та хăвармĕç.

Малттин хуллен ђăтăмлă сассине çĕклемесĕр пуçларĕ.

— А, сут мĕншĕн?..

— Сут?!—сутран хытă хăраççĕ тетнем, есĕ? Пĕрик уйăх выртаççĕ те, тухаççĕ. Сут ĕçне вĕсен йевĕрлисемех пўрократсем кĕрсе ларнă. Ăна епĕ аван пĕлетĕп ĕнтĕ.

Малттин, Сађук „пеççимисăм“ тийекен ђирпе ђирлерĕ пулĕ, тесе шухăшларĕ.

Вĕсем хушшинђе тавлашу хускаласситех хускалђĕ.

— Ай-ай, Сађук, есĕ мана пĕтĕмпех тĕлĕнтеретĕн.

— Нимĕн тĕлĕнмелли те çук. Кунта кĕнеке çинђи мар, тавариш, практиккă, теççĕ. Çакна есĕ кăшт та ан ман.

— Сађук, мĕн калаçатăн, епĕ йалта ĕçлесе пурăнман тетнем вара? Нумайиха епĕ вĕренме кайни?

— Виççĕмĕш çулне куçрĕ ĕнтĕ, сахал вăхăт мар.

— Конеђнă сахал мар, тĕрĕс ку сан сăмахху. Анђах унта та вĕсен йевĕрлисем, пўрократсем лараççĕ, тени тĕрĕсех мар. Епĕ каламастăп пўрократсем çук тесе. Вĕсем пур, сахал та мар, потхалимсем те нумай, анђах партти вĕсемпе кĕрешет. Ун çинђен Ленин та сахал мар çырнă. Пирĕн ун пек ирсĕрлĕхсемпе кĕрешес пулат̆. Ну санра та пархатар пĕтнĕ иккен. Есĕ те çав кулак йурринех йурлама пуçланă.

— Мĕн калаçатăн?! Калаха есĕ вăт мана, ђăвашла хаçатсене вулатна есĕ?

— Кашни номĕрне вуласа пыман, çав 30 тенкĕпе мĕн илес тетĕнха?

— „Канаш“ хаçат çинђе Клавсутăн сылтăм сулăнђăклă ĕçĕсем çинђен вуламан курнат̆ха есĕ. Вула...

— Ехе! снађђăт, ун çинђен „Канаш“ çутатса парат̆? Совет аппаратĕнђи ĕçсем пролеттари клас йĕрĕнђен пăрăнни çинђен çутатса пани вăл мĕне пĕлтерет? Ирсĕр, кулак ĕçпе кĕрешнине марши? Çавă пулĕ тетĕп епĕ.

— Ну латнă, çавă пултăр еппин.

— Еппин мар, çавах вăл.

— Кăнатăп*). Латнă...

Саџук вăрăм лăпсăркка çўçне пысăк çуркаланса кайнă пўрнисемпе хыçрĕ те, пуçне ђўхентерђĕ. Вăрăмăн сывларĕ.

— А, вçотки йалта нумайха çитменлĕхсем, çав тери нумай. Йалта халĕ револђутси пулманпа пĕрех.

*) Килĕшетĕп.

Пăхха, Ухăљван таврашсем мĕнле пурăнаççĕ. Ёлĕкхинђен пĕртте кайа мар. Тарçăпа... Кулине мĕскĕн мĕнле нушаланаť.

Кенатийĕ улпутла, ђăваш ĕççынни çине утланса ларма универçиттетра вĕренет. Çавăн пек кулак ађисем аслă шкулсенђе сахали вĕсем вĕренеççĕ...

Малттин тарăн шухăша кайрĕ. Сађукăн ђĕререн çулăмланса тухакан сăмахсем ăна хыпса илђĕç.

Мускава çитсе ўкрĕ. Стутентсен çемљађђĕстви... Çемљађђĕствăра самокриттĕкласа тухса каланисем, хăшпĕр ĕçри çынсем клас йĕрĕнђен пăрăнкаланисем çинђен, пурин çинђен астуса илђĕ.

Тата хăй çинђен те шутларĕ: „Епĕ патрак ывăлĕ. Малтан пионер, кайран комсомол хуранĕнђе вĕренсе пиçнĕ. Кайарахпа хам хытă тăрăшнипе ВУСа лекрĕм.

Мĕн ђухлĕ патрак, ђухăн хресђен ађисем вĕренейменнисем?—Çав тери нумай, анђах комуниссен парттийĕ патраксене вĕрентес ĕç çине хытă пăхаť...

Малттин хăй ăсĕпе тата та урăх сăлтавсем шырама пуçларĕ.

Ку йапала йалти вăтам шкулсенђе ђухăн, патрак ађисене ваљљи пысăк условисем туманнинђен пек туйăнђĕ ăна.

Ку çитменлĕх вырăнта ĕçлекенсем класла шăнăра çирĕп тытса пыманнинђен килет, тесе те шутларĕ.

— Мĕн ђухлĕ çитменлĕх, мĕн ђухлĕ, мĕнле тĕрлĕ тăшман, çĕлен-калтасем пек ђашкăрса тăраççĕ. Ах! пурте хам пек пулсассăн?..

— Ну, мĕнле?—терĕ Сађук. Сађук Малттинĕн пит-çăмарти çинђи хĕрлĕ йунĕ сирĕлнине курђĕ.

— Ниђђево! Татах вăл 1930-мĕш çулта ђăваш

Опкомĕ Рапфака кĕме патраксен курсĕ уçмалла, тесе йышăннине хаçат çинђе çырса пĕлтернине ăсне илђĕ, хĕпĕртенĕ пек пулђĕ.

— Та! Саңук, йуратнă тантăшăм, йывăр. Манăн ђĕре вăркамасĕ тетнем?—вăркаĕ, вут пек çунаĕ. Анђах мĕншĕн? Пурне те, пур çынна та хам пекех çак çĕнĕ пурнăçшăн вут пек çунтарас килет.

Пур ĕççынни те пĕр ўпкепе сывласан! Вот вара?..

Тĕрĕс, кулаксем кăкланманха. Ĕлĕкхи кивĕ кулаксен çумне çĕннисем те çак 12 çул хушшинђе сахал мар ўсрĕç!

Анђах кунта алла усса тăнипе ĕç тухмасĕ. Арăслан пек ђăрмаласа, ăмăрт кайăк пек вĕççе, пăван пек ђăрсăрланса вĕсемпе пирĕн хытă кĕрешес пулаĕ.

Мĕн пур çĕнĕ ĕç, пирĕн малашнехи илемлĕ ĕмĕтсене пурнăçа кĕртесси çакăнтан килет. Туљккă çакăнтан!

Малттин хĕрсе кайрĕ. Çинçе, вăрăм пўрнеллĕ аллисемпе хыçалалла çаврăннă çўçĕсене сăтăрса илет. Кăшт мăкăрăлса тухнă тути ђĕтрет.

Ун ђĕлхи-çăварне револђутси йуррине йурлама анђах тунă темелле.

— Ђухăна çийеле кăларас тесессĕн, епĕр комсомолĕссем алăсене усса, ланђашкаланса тăмалла мар. Ђухăнсен крупписене, вĕсен пухăвĕсене авторитетлă тума тăрăшас пулаĕ.

Ђухăнсем хăйсем выçă-тутлă, çарамас, шăнса ĕнтĕркенĕ пурнăçне хăйсен пĕрлешўллĕ вăйĕпе çеç йусама пултараççĕ.

Ленин кăтартнă çул-йĕртен кăшт та пăрăнмасăр, вăл вĕрентнине çивђĕн асăрхаса тăрса, ăна шанса

ёçлесен çеç епӗр кулаксен вăйхăватне пур йенђен те пӗтерсе, ђухăна малта йертсе пыракан вăйхă-ват тума пултаратпăр.—

Малттин калаçма ђарăнђӗ. Виђкӗн кăвак куçӗ-семпе Саңук çине шăтарас пек тӗллесе пăхрӗ. Унтан пӗрре тилмӗрсе, тепре хурланса пăхакан куçӗсем: — „Ну, мӗн калатăн, савнă йулташăм?“ тесе тӗпђесе ыйтаççӗ.

Саңук нимӗн калама аптăрарӗ. Вăрăмăн сывласа ўпкине тăкăлнă иккӗленўллӗ шухăшсене кăларса йаҙӗ:

— Та-а! Вот пурте сан пек пулсанђђӗ вăл?

— Клавнăй хамăр мӗншӗн кӗрешнине лайăх ăн-ланса илес пулаť. Ăна итеолоки, теççӗ. Çав про-летарин итеолокине хытă ӗмес пулаť.

Саңук ђикаркка ђӗртрӗ те, ӗмсе илсе, Малттинпе иккӗшӗн хушшине йăсăрлантарђӗ...

— Есӗ питӗ аван калатăн, вçо еттă тӗрӗс, ђухăн-сен пуххине кайса пăхха, пурте кулак йуррине йурлаççӗ.

Куçран ўкесшӗн мар. „Пирӗн нађар пурнăçа пур çын пурлăхпе сапласа çитерес çук“ теççӗ.

— Стоп!—терӗ Малттин, Саңук аллинђен тытса çавăнтах çиçӗмле çуталнă шухăшне калама пуçларӗ.

— Тӗрӗс калаççӗ вӗсем, о-о! самеђђа тӗљнă. Ёçлес пулаť, пӗрлешўллӗ хуçалăха куçас пулаť. Кулак-сене колхос вырăнне ак çакна кăтартас пулаť,—терӗ те шурса кайнă вăрăм пўрнеллӗ аллине ђăмăртарӗ.

— Сăмахпа пит те аван. Есӗ каласан ман ђӗре темӗскерле вӗђӗлтетсе кайаť. Анђах вара ёç калама та çук нумай, йывăр, пулăшакан çук.

Ав пуп хĕрĕпе Кенати аслă шкултан йала таврăнни икĕ ерне тулса виççĕмĕшне куçрĕ ĕнтĕ, пĕр токлат туса паманха.

— Ĕçлемеççим?

— Ĕçлеме тен-ха, ĕçе пăсма тăрăшаççĕ.

— Вĕсем çинђен комсомол йађейккинђе сӳтсе йавса пăхăпăр.

Вĕсем айакка тараймĕç те-ха. Тырă пухас ĕçе ђипер, ђасрах майласа йарасђĕ. Ку вăл халĕ ђи пысăк сатађ. Пилĕк çуллăх плана пурăнăça кĕртесси те çакăнтанах килет.

Кулаксен ытлашши тыррине веçех совет ампарне тăктарас пулаť. Вăтамсене те хăйсен ытлашши пек тыррине ирĕкренех партарма тăрăшмалла, вĕсен хушшинђе сотсиалисăмлă ăмăртăва тапратса йарас пулаť. Хĕрлĕ опос туса леçсен аван пулĕђђĕ.

— Райкомол пленăмĕнђе ун çинђен Райком çекреттарĕ аван каласа панăђђĕ, терĕ Саңук.

— Вот, вот! тата мĕн кирлĕ?

— Е-е! вĕсене унта, çӳлте, калама пит те аван. Ак кунта, йалта?...

— Ун çинђен калаçмалли те çук. Пур ĕçре те çавах çăмăл мар, клавни—патраксемпе ђухăнсене пĕр ђăмăр тăвасси.

Пĕтĕм ĕç çакăнта. Вара пирĕн йалти ĕç те çăмăлланма пултарať.

— Вăтамсем ăçта?—терĕ Саңук хăрах куçне хĕсерех пăхса.

— Ун çинђен те калатăп, манман. Вĕсемпе çыхăну туса, халăх пуххинђе кулаксем çине лăк хурас пулаť.

— Кивĕ пурăнăçран çĕнĕ пурăнăç çулйĕрĕ çине

куçнă вăхăтра ђухăнсемпе вăтамсен сыхăнăвĕ çине хытă асăрхас пулаť.

— Комиççи суйламалла терĕç. Ăна лайăх ăнланаймарăм вара. Те ăна ђухăнсен пуххи уйăраť?

— Ђухăнсен пуххипе комсомолсем малтан сўтсе йавас пулаť. Кайран халăх пуххинђе çирĕплетес пулаť.

— Ехе-ĕ!...



— Клавни—пирĕн тĕрĕс ĕçлес пулаť. Çак ĕçе патраксемпе ђухăнсене, вăтам хресђенсене йертме пĕлес пулаť.

Кулакран хăраса тăмалли çук. Вут тĕртсе çунтараť иккен, вăрттăн пытанса кĕтесрен çапаť иккен, пурне те çапса пĕтерес çук вăл. Вăл-ку palăрсан,

кăшт темскер пулсанах ăна вађђи вырăн тупаççĕ. Вăт, епĕ уйăх çурá йалта пурăнма пултаратăп, çак хушăра пĕрле ĕçлĕпĕр...

Сађук çине Малттин тĕллесе пенĕ ђул пек йывăр сăмахсем пере-пере анаççĕ. Йĕп пек вĕçлĕ сăмахĕсем ун пуçне тăрăна-тăрăна ларсан, Сађук ђăтаймарĕ.

— Ђăн, тусăм, ђăн—епĕ тĕрĕс мар ултавлă çулпа кайма пуçланă иккен.

Сехет майăтнĕкĕ 10 çинђен 12-мĕш тĕлне çитрĕ. Сађук Малттина ыталаса илессе çитрĕ. Вăл хăйĕнђен хăй тĕлĕнет.—Йеплеха епĕ çав пустуй çĕрĕк Самсун уђђитлĕ хыçĕнђен кайнă... Пуйан ађи, паллах, ĕлĕкхи саманашăн. Сађук Самсун панђе иртерне хĕллехи каççене аса илђĕ.

Малтансенђе парăнмасť. Уђђитле хирĕç... Унтан хуçăлђĕ. Уђђитлĕн курăнми атми ăшне кĕрсех ўкнĕ иккен? Сађук ăшĕнђе хăйне хăй тепĕр хут айăплаcа илђĕ.

— Вађкка, Вађкка! кўр аллуна.—Малттин аллине хытăран хытă ђăмăртаť.—Вађкка, спаççипă сана, ман хунара çутатса йанăшăн. Епĕ санпа малашне те санпах. Ан айăпла, хам та хама айăплап.

Малттин те Сађукăн ђĕререн палкаса йухса килнĕ, вĕри йунлă аллине хыттăн ђăмăртарĕ.

Пăлтăрта ура сасси ђăштăртатни илтĕнсен çеç Малттинпа Сађукăн аллисем уйрăлђĕç...

* * *

Пўрте пĕшкĕнерех вăрăм çын килсе кĕђĕ.

Вăл кăçал çуркунне килнĕ çĕнĕ уђђитлĕ. Çўçĕ сарă,

вăрăм, сарлака çутă çамкисене кăшт кăтраланса хупласа тăрат̆. Хĕсĕк куçĕсем сарă куçхарши айĕнђен кулкаласа пăхса йăмăхаççĕ. Сарă мăйăхпа витĕннĕ çӳхе тутисем те унăн, йаланах калаçнă ђух, кăшт çĕкленерех кулса тăраççĕ.

Вăл çамрăк тĕсĕпе ваттăн курăнат̆ пулсан та, 21 çулта çеç. Çеркуни,—ун йађĕ çапла пулнă, вăл выçлăх çулђђен кĕту ађи пулса çӳренĕ. Хăрушă, тискер 21-мĕш çул ăна Мускава илсе çитернĕ. Пурне те шăнăçтаракан Мускав Çеркуниййе те ĕнтĕркенĕ çĕртен ăшăтнă, хапăл тунă...

Çеркуни прийутра тăрăшса вĕреннĕ, кайарахпа технĕккăма вĕренме кĕнĕ. 28-мĕш çул ăна хĕрлĕ уђђитлĕ йаtне панă.

Çапла вара вăл Кипек шкулне килсе вырнаçнă. Кипек шкулĕ пысăк, йалĕ те аслă—602 кил. Ахађтен мар çав кунта виçĕ уђђитлĕ. Пĕри Самсун, вăл ĕлĕкхи саманара кимнаçи пĕтернĕскер, çĕрме пуйан ывăлĕ. Кипек йалĕнђенех. Тепри—ватта йулнă хĕр Софйă Павлăвнă. Виççĕмĕшĕ 55 çулхи Никканор пулнă. Никканор кăçалхи çуркунне сасартăк ђирлесе вилсе кайнă хыççăн, ун вырăнне Çеркунине кĕртнĕ.

Çеркунипе Софйă Павлăвнă ђасах йулташлă туслашса пĕр-пĕрне ăнланнă. Анђах Самсунпа вăл нийепле те килĕштереймен. Ђас-ђасах вĕсем совет влаçĕ, комуниссем çинђен тавлашнă. Çеркуни Самсун çинђен РĔК-а хутсем те йаркаланă. Анђах шкул инçпектăрĕ ку йĕркепе хытах çывăрнă.

Çапла мĕн çăва тухиђђенех Çеркунийĕн Самсунпа харкашса иртерме тӳрĕ килнĕ.

Çеркуни йала килсенех йађейккă ёçне хутшăннă. Вăл тăрăшнипе Атав ђиркŭне шкул ваљђи хупнă. ОТН йађейкки те Çеркуни ёçленипех шăтса тухнă.

Йал ђухăнĕ Çеркунийе йуратаť. Вăл хаљ те, çулла та ђасђасах Çеркуни токлађĕсене итлеме пухăнаť.

— Епĕ те çитрĕм, терĕ Çеркуни картусне хывса.

Малттин Çеркунийе палламасť. Çавăнпа та Сађук çине ăнланман пекрех пăхрĕ.

— Çĕнĕ, хĕрлĕ уђђитлĕ Çеркуни Йаккăвлĕђ, а ку Малттин, — Мускавра вĕренет, тесе паллаштарђĕ пĕр-пĕрне Сађук.

— Комсомолĕс? — терĕ Малттин.

— А какш! Мĕнле ăшшă ёçлет.

— Питĕ аван...

Виçĕ тус пĕр-пĕрне шыраса тупрĕç. Виçĕ пĕђĕк сырма пĕрлешрĕç. Анлă сырма кĕр кĕрлесе аналла йухрĕ. Ăнсăртран çыранран шыва кусса аннă ђул мĕн вăл ун пек кĕрлекен шывшăн? — Çŭпĕ! Çул çинђен пурне те тасатаť, пурне те аркатаť хăватлă шыв...

Çапла вăл пысăк шыв. — Вăйлă.

Кăнтăрла сулăнаспа виçĕ тус ђĕререн хĕпĕртесе килĕсене саланђĕçĕ.

Мĕн çинђен каласрĕç вĕсем, мĕн шухăшларĕç? — Тен, хăйсен ђăрмавлă, ланкамаллă çул çинђе пухнă йапалисене кутамккисенђен кăларса пĕр-пĕрне кăтартрĕç. Тен, малалла çул уçса хуђĕç? — кĕрик мĕн пулсан та, вĕсен çулĕ тăвалла.

Тӑвалла улӑхма нумай вӑйхӑват, хастарлӑх кирлӗ. Нумай, нумай вӗренни кирлӗ. Кивӗ пурнӑçпа кӗрешес тесессӗн, унпа кӗрешмелли меслетсене аван пӗлес пулаҫ. Йӑнӑшсем тусассӑн, вӗсене вӑхӑтра тӳрлетме тӑрӑшас пулаҫ.

## 4. Пахҙари „ҙеҙексем“.

САМСИ сарлака та курпун, тутисем хулăн, тулалла мăкăрăлса тăраççĕ, ăна мĕн йуратмалли пур,—ахăлтатат Марйе Кулине умĕнҙе.

— Ну, пĕр куçĕ пур ĕнтĕ, пысăк сенкер куçĕ ҙăнах та илемлĕ. Ваҥкка, Ваҥкка. Мĕн пур çав Ваҥккара? Çук, епĕ тӳрĕ сăмсаллисемпе çӳхе туталлисене çеç йуратататăп. Ман Кирука никам та çитес çук.

Кулине ҙĕнмест, темĕскерле вăл салхуллă шухăшпа ҙĕркеннĕ.

Тантăшĕ аҙашшăн вĕлтĕртетсе ларакан шурут тăррине татса илсе йун тăкăнса тăракан пит çăмартине кăтăкласа пăхрĕ, хăй çаплах тăкăлтатат.

— Пĕлетнеха есĕ, Кулине, виçĕм кун Карукпа Кирук маншăн çапăçнă, тет. Епĕ камсулсем çапăçмаççĕ пулĕ тесе. Вĕсем те тӳрĕ килсен аванах тӳпкешеççĕ иккен.

Карукĕ те мана йуратат, Кирукĕ те. Иртнĕ вырсарни кун Карук вăйăра ман çума кĕнĕҙҙĕ. Ну хушăран калаçкаларăм епĕ унпа. Ху та пĕлен, Карук ҙухăн тавраш, тата, хăйамат, камсул пулсан та кăмăллă çын,

— Карук аван аҙа. Ăслă, йепле вăл сапăр, терĕ Кулине йăвашшăн.

— Хе. Мĕн тумалла ун йăвашлăхĕпе.

— Çук, Марйе, есĕ ытла та шутламасăр калаçатăн,

— Ађи аванни аван та... Вăйăра та çĕнĕрен çĕнĕ такмак пуçласа кăна тăраť. Ахаљ мар çав ытти камсулсем ăна вăйă калама суйласа хунă, тет. Унăн сарă кăтрине те епĕ çамрăкранпах йуратап. Унпа та ларнă пулăттăм та, ну-у, намăс, ытла ђухăн, праçниксенђе те çине тăхăнма кĕпи çук та, йепле унпа ларас тен.

Кирук мĕнле ђаплă. Труйски кунĕ çаранра пулсан ун уринђе çап çутă атă, атти çинђен çутă тарăн калуш тăхăнса йараť. Йуратман çинђен йуратăн.

Кулине ђăтаймарĕ.

— Марйе, тĕлĕнетĕп епĕ санран. Çынна кăмăл тăрăх виçес пулаť. Теприн çи-питти темĕн пек йăлтăркка, анђах ун ăш-ђиккине кĕрсе пăхсан ес мĕн курăн?

Çапăçнипе çапăçманни çинђен нимĕн те калама пултараймастăп. Карук ун пек çын мар. Кирукне хуť шансах пăрахмастăп, ăна епĕ комсомол вырăнне те шутламастăп.

— Çапăçнă çав, суйеçтерместĕп ĕнтĕ. Çав каçах ытти йулташĕсемпе пĕрле Кирук Карука тытса хĕртесшĕн пулнă та, тепле, ђарăннă вара. Виççĕм кун çапах савăнтăм вара,—хĕненĕ.

Кулине хĕрелсе кайса пуçне хăпартрĕ.

— Камсем вара?

— Кирук, тата Йемелккепе Йакур пулнă, терĕç. Леш, Карукĕ, вăйсăрскер, ним те тăвайман, тет. Çавăншăн та епĕ ăна тата йуратмастăп. Кађђă тенĕскер вăйлă пултăр вăл. Унăн пуçĕпе епĕ мĕн тăватăп. Хресђенсене пуç кирлĕ мар. Алли-урић çирĕп пулсан, вара пире çитнĕ...

Кулине килĕшмерĕ.

— Ваҕккана та, Карука та хурлатăн есĕ. Тўррипех кала, ђухăнтан килĕштерместĕн вĕт? Ман шутпа ђухăнни, пуйанни çавах. Çынни çын пултăр.

Пуйаннисене епĕ пушшех те йуратмастăп. Вĕсем куштан, йепле вĕсем хĕрсене мăшкăлама пăхаççĕ...

Хресђене тăн-пуç кирлĕ мар тетĕн есĕ. Йепле ăшшĕ кирлĕ мар? Пуç ĕçлемен вĕренмен çын—суккăрпа пĕрех. Вăл Шупашкара кайсанах аташаť. Йеплеха çав Ваҕккана йуратас мар, йепле вăл сапăр. Ăçта сан Кируку.

Кулине тата та каласшăн пулђĕ те, анђах темшĕн шарламарĕ.

Тарйе те тўсеймерĕ:

— Ну-у кăна уш ан кала та. Ваҕккана Кирукăн çитме питĕ инçе.

Марйе Тарйе те Кулине майлине курсан: „—Есĕр вĕт, иккĕн пултăр ĕнтĕ, терĕ кулкаласа.

Марйепе Кулине йаланах çапла. Пĕр-пĕринпе килĕштереймӗççĕ. Çакăн пек пушă вăхăтра вĕсен хирĕçў ђас-ђасах тухса кайнă. Марйе хăйĕнне перет, Кулине—урăхла. Кулинен ђĕри Марйе йенне никçан та туртăнман. Ну мĕн тăвас тетĕнха. Кўршарăшри çынсенђен урăх никампа та калаçма вăл йулташ тупман. Тип-касса кайма инçе, апла инçете çўреме пушă вăхăт та тупман. Çакăн пек пĕр çур сехете пушаннă вăхăтра ăçта унта йут кас тăрăх çўреме. Куншăн та спаççипă. Кун пекки те Кулинешĕн ик-виç кунта пĕрре çеç тўрĕ килет.

Марйепе Кулине хытах та тавлашса кайађђĕç

пуђ, анђах урампа иртсе кайакан Уљки урӑх сӑмах йуппине пӑрса йађӗ.

— Ав вырӑсла майра каçӑрланса таçталла кайрӗ,—терӗ Уљки çине пӑхса Марйе. Вӑл Уљкийе йуратмасҭ. Йуратмасҭ кӑна мар, мел пулсан тытса та çийӗђђӗ.



— Вулакан çурта йартлатрӗ пулас. Ларӑттӑмђђӗха епӗ ун пек пулсан, кута хӗссе, пӗр сиккеленмесӗр.

Çине тӑхӑнма кӗпи çук вӗт, шкул тӑрӑх çатӑлтатса çӱрет. Кӑçал та хӗлӗпе каçсеренех шкула ђупађђӗ, тет. Телекаткӑ пулнипе камсула кӗнӗ. Хулана вӗренме кайасшӑн тет-ха. Вӗсенђен те вӗренӳ пулсан, тӗнђе тепӗр май çаврӑнӗ, хӗвел те кутӑн тухӗ.

Тепре тата ун пекки ват ухмах Мархва аппа пур, темӗскер çухатнӑ вара, ун хыççӑнах йашлатса çӱрет. Çилски пумушнӗкне ђвишенни туса кӗртнӗ тет. Арçын пекех пухусене çӱрет...

Вӑрахђен ђӑтса итленӗ Кулине ӑна хирӗç тавӑрса каласшӑнђђӗ те каламарӗ.

Шкула кайакан Уљки, вĕсем пахђара выртнине куратăркаçах, вĕсен патне ђарăнмасăр, урампа çаврăнса Ухăљван сат пахђи умне пырса ларђĕ. Кулине ăна курђĕ. Асăрхамасăр Марйене:

— Уљки ман патма килђĕ, вăл манпа çапла хутран-ситрен калаçкалама çӳрет, кайасха тата, кĕттерес мар, терĕ те, симĕс пурçăн кĕççе пек сарăлса выртакан курăк çинђен тăрса хуçа килне васкаса утрĕ.

— Вăййа тух каçхине, çӳреместĕн! тесе кăшкăрђĕ Тарйе ун хыççăн.

— Вăхăт çук çав, тухăттăм та!... тесе кăшкăрђĕ ăна хирĕç Кулине.

Марйесен пахђи уçă. Сывлăшра ђеђек шăрши кăна. Симĕс-кăвак, хĕрлĕ, сарă ђеђексем йешĕл курăкпа ђӳкенсе лараççĕ. Çавсенђен пулас ĕнтĕ тутлă шăршă сарăлат...

— Ку та çавăн йышшийех,—терĕ Марйе, Тарйе хăлхи патне пĕшкĕнсе.

— Ара ĕретлĕ çын пĕтĕленмест ĕнтĕ. Куран, мĕнле вăл туртса çыхса çӳрет.—Çав самантрах Тарйен пуçĕ урăхла шутларĕ: „хамăн мĕнле?“—Иртнĕ каç Уртемейпе пушарни лапас айĕнђе çĕр каçнине астуса илсен, тĕк ларнă çĕртенех умĕнђи йешернĕ курăка ывăçласа çăлма пуçларĕ...

Марйе те ђĕлхи вĕçне килсе капланнă сăмахĕсене калла çăтрĕ. „Ах мур, çара çерçи, йепле вăл Кенăна çавăрса илнĕ“—Кулинене çиленнĕ шухăшпа, пасарта тĕл пулман Кенă ун çине йăвашшăн пăхса кулни пĕрлешрĕçĕ. Марйе нимĕн калаçмасăрах сăмси айĕнђе вăрттăн кулса илђĕ.

— Марйе, мĕн есĕ ху тĕллĕн кулатăн?

— Çук, ахаљ, пĕђĕкçĕ ђухнехисене аса илтĕм.

Тарйе тытăнкăрах сассипе сĕрен йуррине пуçларĕ. Марйе те хутăшрĕ. Икĕ пиçсе çитнĕ хĕр, пĕр-пĕрин ăшĕнђи шухăшĕсене пытарса, кађђисем ваљљи йенђĕк тĕрлерĕçĕ...

Кулине Марйепе Тарйерен уйăрăлсан кайма пуçланă Уљкийе ђĕнсе кăшкăрђĕ.

— Уља, кунта! Кулинен çинçе уçă сасси пĕлĕтре „тр-тр-тр-тăр-тăр!“ йурлакан тăри патне çунатланса вĕçрĕ. Уљки Кулинен сассине илтсен Ухăљван умĕнђи ватă хурăн хыçĕнђен хĕрлĕ йавлăкпа майралла çыхнă пуçне кăларђĕ.

— Епĕ кунта, сан патна килсеттĕм.

— Çиђђас.

Икĕ сар хĕрĕн ђĕрисем пĕр-пĕрне курсан хавассăн тапрĕç... Уљки çĕнĕ хыпарсемпе Кулинене савăнтарђĕ. Хулари хĕрарăмсен ушкăнĕпе калаçни, хапрăкра вырăн тупма сăмах пани, йађейккăра кăмсамула илни—пурте Кулинешĕн ырă, çĕнĕ пурнăç патнелле хăвăрттăн туртакан хыпарсем.

Пурне те văл хапăл туса савăнса итлерĕ. Йулашкинђен уйрăлас умĕн Уљкийе ыталаса тутинђен вĕрин ђуптурĕ. Уљки кўршĕ пўртĕнђен пăрăниђђенех Кулине хăйĕн ырă шухăшĕсенђен хăтăлаймарĕ.

Тăрсан-тăрсан савăннипе хуллен çинçе сассипе йурласа йађĕ. Кулинен ђерђен сасси кĕслен çинçе хĕлĕхĕнни пек ађашшăн йухать. Çур сехет ытла пахђари ђеђексем Кулине йуррине пуçĕсене тăп тайса итлесе ларђĕç...

Хурлăхпа пусмăра таптаса çĕнĕ çул çине тухакан тăлăх йуррине илтсен тўпери тăри те шăпах пулђĕ.

## 5. „Пуçлăх патне“.

МАЛТТИН Саӊук патĕнђен тухса йалканаш пуçлăхĕ Паљук патне утрĕ.

Кипекĕн сакăр урам, саккăрăшĕ те ват карђăксем пек кукăрăлса йĕркесĕр сапаланса пĕтнĕ. Пĕлмен çын аташма та пултарат. Малттин, ик-виç çул йалта пурăнман пулсан та, урамăн йĕркисене аван астăват. Çурт хуçисене те веçех паллат.

Ак хĕреслĕ урам. Кéтесрен пăрăнсан шурă ђасса-вни хыçĕнђен пуйанкас çырма хĕррипе тăсăлса анат. Ĕлĕк-авал Кипекре пĕр çак Анаткас çеç пулнă. Кайран, пĕр ĕмĕр иртсен, Кипек сакăр каслă аслă йал пулса ĕрђесе кайнă.

Анаткас хыçне, сăрт çине Типкас сапаланса ларнă. Вăл кăçалсенђе шăтнă кас, çавăнпа та питĕ ђухăн. Хăма, калай (тимĕр витнĕ çурт) таврашкунта курма çук. Çак Типкасăн хĕрринерех пĕр пĕђĕк латакайрах, вăтам пўрт пур. Вăл йалканаш пуçлăхĕ Паљукăн пўрђĕ. Малттин унталла утат.

Симĕс йăмрасем ăшнĕ пытаннă кас Малттин çине тĕксĕмĕн пăхнăн туйăнат. Еређĕпех шатрун ларнă çуртсем. Хăма, калай... Пурин те тенĕ пекех çĕлен пек йавкалантарнă йупасенђен тунă криљт-

сасем урама тухнӑ. Урамра пӑру, сысна, кашниннех йытӑ. Сарлака кӳлӗре кӗтӳпе хур-кӑвакал какалаҫ.

Анаткас урамне кӗрсенех Малттина тӑват-пилӗк йытӑ хар ҫыпӑҫрӗҫ.

-- Вот мурсем. Пӑшшол!..

„Мӑнтӑр лашисене сыхлама усраҫҫӗ"—шухӑшларӗ Малттин.—„Ҫак кас пуйанӗсем хур тӑваҫҫӗ ӗнтӗ. Пӗри пухура кӑшкӑрсан ыттисем уншӑн хар тӑраҫҫӗ. Ђухӑнсем веҫех пусӑрӑннӑ... Усал кас, малтанах канашласа пыраҫҫӗ. Револђутси вӑхӑтӗнђе те ку йалта пӗр ҫак кас ҫеҫ ытла хытӑ тапӑртатнӑ. Ара йеплеха тапӑртатас мар? Вӗсенђен вӗт револђутси сакӑр ҫӗр теҫеттин ытла ҫӗр туртса иллђӗ. Контрипутси... Аван пулнӑ вӗсене кӳпсе вылтма. Хӗрӗх ҫуллӑха улпутран тара илнӗ ҫӗрне хӑпартса сутса услам курса шиксӗр пурӑнаҫҫӗ. Выҫлӑх ҫулта ку кас аван пуйса йулђӗ".

Ҫапла шухӑшласа пырсах Малттин Типкас ансӑр тӑкӑрлӑкне кӗрсе кайрӗ.

Тӑкӑрлӑк анкартисем хушшипе тӑсӑлнӑ. Кунтан Анаткас пуйанлӑхӗ пит аван курӑнаҫ. Пурин те ҫурса тунӑ ампарай, пахђинђе хӑмла, пыл-хурђӗ.

Ак кунта пуринђен те ђӑн пысӑк, пуринђен те ҫӳлӗ Ухӑљванӑнултӑ кӗтеслӗ симӗс тӑрӑллӑ пысӑк ҫурт, вӑл пӗлӗтелле кармашса лараҫ.

Ухӑљванӑн анкартинђе ыраш ҫапаҫҫӗ. Малттин хулленрех утма пуҫласа ҫынсем кӑшкӑрашса калаҫнине итлерӗ. Вунӑн-вунпиллӗкӗн Ухӑљван тыррине ҫапнине курсан савӑннипе ђӗри сике пуҫларӗ.

„Сисеҫҫӗ мурсем, 35 урапаллине пуҫланӑ. Кӑна ӗҫертес марђђӗҫке. Кӗҫӗрех ҫӗнӗ расклаткӑ тумалла.

Ыранђђен тартмĕçха“ терĕ те ăшĕнђе, тăкăрлăк вĕçнелле ђупнă пек васкаса утрĕ.

* * *

Çеркуни Малттинран уйăрăлсанах йађейккă çыруçи патне çамрăксен пуххи пуçтарма вĕçтерђĕ. Унăн пиђĕ савăннипе хăй тĕллĕн хĕвел пек кулса пырат:

„Ну халĕ ĕнтĕ ĕç пуçланат. Шахтăри комсомолĕссем таврăнсан кун пек кăна та пулмĕха“. Кăсйинђен хутпа ђĕркенĕ çăкăр татăкне кăларђĕ, çул çинђех çăварне татăкăн-татăкăн тĕркесе ђикме пуçларĕ.

„Хĕ, мĕн пысăккăш йал. Ма-ха парттийтсăсем сахал—4 çеç“. Утат, ђăмлат. Пырсан-пырсан коперାттив тĕлне çитеспе пĕççине кăлт çапрĕ. „Кунта йађейккă вăйлă пулмалла, сапаланса пĕтни пĕтерет. Хăшĕ слушпăра, хăшĕ шахтăра, хăшĕ активисланаççĕ те хулана вĕренме кайаççĕ. Малтан актив туса хăвармалла...“

Çеркуни актив тăвасси çинђен шутлама пуçларĕ. „Малттин килни аванха“ тесе хăйне хăй мăкăртатса пыракан Çеркунийе Çпритун Мирунђă тĕл пулђĕ.

— Сывă-иха?—Çеркунийĕн ĕçлĕ шухăшне татрĕ.

— Çӳретпĕрха, ху мĕнле, Çпритун Мирунђă?

— Што-тă, çак ернере шкулта кĕнеке-хаçат вулама пăрахрĕç.

— Е-е, çапла çав, çак кунсенђе ремонт туса пĕтереççĕ. Хаçат вулама унђђен Лариван патне кайма пултаран. Пайан çеç-ха çĕнĕ хаçатсем килђĕç.

Питĕ лайăх хаçат пур. Есĕ ăна вуламан пулђха? „Пирĕн йал"...

— Йурĕ еппин, каçхине кĕрсе тухмалла пулаťха. Што-тă вăрçă-вăрçă тесе калаçкалаççĕ, хăйамат ђăнах пулса ан кайтăр.

— Вăрçă пуласси-мĕнĕ... Да, Китай ђиккинђе... Хаçат çинђе Китай улпуђĕсем вĕсен çĕрĕ çинђи пирĕн ђукун çула туртса илни çинђен пĕлтереççĕ. Ун çинђен пайан хурал пўртĕнђе Малттин токлат туса парасшăн.

— Вађкка? Шупашкара кайманђђиха вăл?

— Ара. Халђ çапах таврăнђĕ.

— Вот што-о! Пашка, ађа. Ну, пултараť те ĕнтĕ...

— Çапла çав.

— Вот-вот, терĕ Çпритун, вăтамрах тăракан хресђен,—апла кĕçĕр унта пырасха. Халĕ Мĕтри кум патне кайса килес терĕмха.

— Йураť, йураť,—Çеркуни лешĕ утма хатĕрленнине курса хăй те пĕрик утăм малалла утрĕ. Çпритун Мирунђă кайас шухăша калле туса уђђитле ђарђĕ.

— Епĕ çак тырă çинђенех калаçасшăн. Ман çийе 30 пăт хунă, тет. Ухăђванпа Миťук çине те 40 пăт-шар кăна хунă имĕш. Ку йапала ĕнтĕ пĕртте тĕрĕс мар. Епĕ нумайах та пулмасť 60 пăт хос-сутарствăна леçсе патăм. Халĕ, тупата туршăн, пĕр пăт та ытлаши çук. Ăçта унта 30 пăт. Пулсан епĕр кутăнланса тăракан çыннисем мар ĕнтĕ, ху та пĕлетĕн. Налукпе штрахавайне те справнă леçсе тăратăп. Çак йенђен ўпкев пур ман канаш ирĕкне. Ытти йенђен хуť ăна пĕртте тиркеместĕп.

— Уђђитлĕ ку сăмахсене илтсен сиксе ўкмерĕ.

Ун пек сăмахсене вăл нумай çынтан илтнĕ. Виçĕм кун кĕтÿç Упаҫа та ун умĕнҫех савите вăрçрĕ. Ҫăнах ĕнтĕ, Кĕтÿç ăçтан тÿлетĕр 10 пăт? Ăна хăйне çиме çитмест.

— Тĕрĕс, Çпритун Мирунҫă, тĕрĕс, терĕ ун çумнерех пырса.—Сан çине хумалла та пулман, тата ыттисем çине те нумайĕшĕн çине çапла хумалла пулман, анҫах пирĕн йалта хунă. Ăна, Çпритун Мирунҫă, сана совет влаçĕ хуман, ăна йалканашĕпе çав камиççири кулаксемех хунă. Совет камăн ытла çавăнне илме хушаť. Камăн çуккине хăйне параť. Пирĕн йалта тĕрĕс туман.

Камиççийе кулаксене кĕртнĕ. Пур çитменлĕх çакăнта... Миťук ывăлне раçвĕ унта кĕртме йураť. Тата Михетере—хăçан вĕсем ҫухăнсемпе вăтамсемшĕн йĕни пур. Вăт çак кунсенҫе саççетани туса çĕнĕрен камиççи суйласа çĕнĕ салату тăвасшăн, йалканашне те çул кăтартас пулаť. Претçетатлĕ ҫухăн пулсан та хăравçă. Пуйансенҫен хăраť, куран. Санăн çук пулсан, сан çине хумĕç.

— Ара çук çав, ун çинҫен пĕтĕм кас пĕлет.

— Ну, вот, çапла.

Çпритун Мирунҫăпа уҫҫитле мĕн комсомол йаҫейкки çыруçи патне çитиҫҫенех никам та ҫаракан пулмарĕ. Калаçрĕç...

* * *

Уҫҫитлĕпе Малттин тухса кайсан Саҫук ҫылайҫҫен тарăн шухăша кайса ларҫĕ. „Ҫăн, Ваҫук ҫăнние калаť... Ну калăпăр, совет пĕтсен? Пурпĕр вилĕм... Çук, çук пĕтмест... Ĕçлес пулаť. Çурта

страхховат тумалла ҫак ернерех. Епӗр те ӗҫлемесен кам ӗҫлӗ"...

Ларсан-ларсан арӑмӗ патне лаҫҫа тухрӗ.

— Ну, Верук, кӗҫӗр пуху тӑватпӑр. Сирӗн аҫусем ҫине те пӗр 100 пӑт хумаллах пулӗ ӗнтӗ. Совета тырӑ кирлӗ.

Ђӑркӑш Верук упӑшкине ђасах туласа ывӑтрӗ.

— Ӗҫӗ-хӗлӗ пӗтрим сан. Халӑх тӑрӑх сӗтӗрӗнсе ҫӳретӗн. Ак ҫуртна вут тӗртсе йарӗҫ. Тата аттесем ҫине хурасшӑн? Вӗсем патне йепле, мӗнле куҫпа кайса кӗрӗпӗр кайран, ҫавна пӗл, ухмах. Вӗсен тыррисем те ҫук. Ӑҫтан пултӑр халӗ. Виҫӗ лаша, виҫӗ ӗне—вӗсем хӗл каҫиђђен сахал ҫийеҫҫӗ тетним?

— Ђарӑнха. Мӗн ес ҫатӑртатан. Ђарӑн, йалан ес аҫусемпех. Лашине ытлашши пулсан сутђӑр. Кам виноват вӗсем виҫӗ лаша усранӑшӑн. Ну шутлаха есӗ ху пуҫупа. Упаңа ҫине хумаллаи? Ухмах, халђ те сан сӑмахупа ђут авӑра ђӑматтӑм.

Верук каллех тӗпӗртетме тытӑнђӗ. Тӗпӗртетнӗ хыҫҫӑн ҫулланкаласа, йӑпатса та пӑхрӗ. Ҫук, упӑшки хӑй сӑмахӗнђен тухмасӗ. Хӑйӗннех перет...

— Ну, Верук, ҫитӗ, саккун халђ урӑх, ӗлӗкхи мар. Нумай калаҫмӑпӑр. Турӑх илсе тухха. Пайан иртенпе апат ҫимен вӗт.

— Халӗ совет саккунӗ равнӑправи, тет. Ху пӗҫер те ху ҫи. Ҫитӗ. Пӗри халӑх тӑрӑх сулланса ҫӳре те, ес пур кунта тарҫӑ вырӑнне ӗҫлесе пурӑн. Ҫитет, урӑх ӗҫлеместӗп.

Ӳпкелешнӗ арӑмӗ итлеменнине кура выҫӑварлах комсомолӗҫсен пуххине тухса кайрӗ...

---

## 6. Кӳлӗ хӗрринҫе.

ПӖЛӖТРЕ шăраннă хӗрлӗ хӗвел ҫăрăш вăрман хысне кӗ.ен ленттă пек сарăлса йармакланҫӗ.

Кулине кӳлӗ хӗрринҫе кӗпе ҫăваť.

Шăратнă ылтăн пек сарăлнă ăшă шыв кăтраланаť. Лӗп шывра ҫӳкеме те кăмăллă. Тата пӗрик кӗпе кивсе ҫӳкесен ӗҫ те пӗтет. Халтан кайнă Кулине йулашки вăйне пухса ӗлӗкхи пекех ҫăмăллăн кивсисене выҫатаť.

Ӗҫ хушшинҫе ун пусӗнҫи йаланхи шухăшӗ йăшăлтатма тытăнҫӗ.

Кулинешӗн йывăр, анҫах вăл унтан нийепле те хăтăлаймасť. Халь те ҫавах ун ывăннă ҫан-ҫурăмне тимӗр кăшăлпа кăшăлласа илҫӗ. Пӗҫӗк аҫасем вăрăм ҫӗлхине кăларса пӗр-пӗрне вăрҫнă ҫухнехи пек вирткелешет.

— *Мӗн тумаллаши? Мӗн тума вăранҫӗши, ма-ши ҫав тери асаплантараť?* — Кулинен лӗнҫӗр кайнă аллисем сасартăк йывăрланнă шӳнӗ кӗпе хыҫҫăн ҫавси таран шыва путрӗҫ. Ылттăн-кӗмӗл ункă пек хумсем сар хӗртен йăр-р р кусса кайса хăмăшлăха пытанҫӗҫ. Кулине шыв тӗпне курасшăн пек тинкӗрсе пăхрӗ.

Шыв ӑшӗнђен Кулине ҫине тӑп-тӑваткӑл питсӑпат пӑтранђӑклӑ куҫӗпе хӗрнерех пӑхрӗ.

— „Кам ку, кам?“ Кам пуррине те Кулине маннӑ. Вырханђӑклӑ мӑшкӑл пусмӑрӗнђе пурнакан тӑлӑх Кулине ӑна палласшӑн. Кулине ун пиђӗ ҫумне сӗртӗнсе ађашланасшӑн. Ҫук... Тӑлӑха ним те пӳрмен иккен.

Тӑрна куҫ пек тӑрӑ шыври Кулине мӗлки таткаланса ирӗлет. Ав! ав! Кулине ун татӑкӗсене хумпа пӗрле хӑмӑшлӑха васканине хађ те курӑ̆т. Каллех пӗђђен. Каллех икӗ вӑй Кулинене икӗ йенне турткалама тытӑнђӗҫ...

Ҫулахи ӑшӑ ҫил ҫемҫе ҫунат вӗҫӗпе тӑлӑх Кулинене ађашшӑн пуҫран савса илђӗ. Кулине пекех армак-ђармак туратлӑ мӑн ҫӳҫе хуллен ҫупка ҫулҫисемпе ђӗпӗл-ђӗпӗл калаҫса илђӗ...

Ҫук, киђем, хӑмӑшлӑ, хӑрушӑ...

Анђах Кулинен халтан кайнӑ ҫанҫурӑмӗ унта канлӗх курӑ̆т.

— Кулине пурӑнмаллӗ, ађушӑн пурӑн, тет килнелле туртакан пӗр шухӑшӗ.

Тепӗри ҫавӑнтах витлесе илет:

— А, мӑшкӑл, кулӑ, тӗнђе кулӗ.

Ҫук, Кулине ӑна итлемест.

— Улталанакан пӗр ес кӑна мар!.. Шан! Уђкийе шан!.. Тархаслатӑп сана—шан. Пӗр вӗсем ҫеҫ сана шеллӗҫ. Вӗсем ҫеҫ сана ырлӑх пурнӑҫ ҫулӗ ҫине тӑратӗҫ.—Ес пӗђђен мар, йулташусем санӑн пур.

Ку сасса тӑлӑх йуратрӗ. Сасӑпах „тӗрӗс“ терӗ те кӗписене хӑвӑрт-хӑвӑрт ђӳкесе пӑрма тытӑнђӗ.

* * *

Кӳлĕ хĕррине çамрăк кĕтӳç Кĕçтук шыва кĕме васкаса ђупса анаҭ.

Шăрăхпа пиçнĕ тутисем унăн çурăлса пĕтнĕ. Тути çурăкĕсем тусан ларса пĕтнипе питĕ ыратаççĕ. Кĕçтук тутине ђĕлхипе йĕпетсе илет. Кĕтĕве иккĕмĕш çул çеç тухаҭ пулсан та, Кĕçтукăн çанçурăмĕ касђен пĕтђĕмпех ĕшеннĕ. Касхи лĕп шыв тар тăварĕпе сăрланнă ӳтне çăмăллатсах йараҭ. Çавăнпа та вăл кĕтӳ Кипекĕн аслă урамне акăрашса кĕрлесе кĕрсенех кӳлĕ патне уçăлма ђупса анђĕ.

Пайан Кĕçтукăн пушшех те васкамалла. Ирхине рех йађейккă çыруçи кас пуху пулаҭ тесе пырса каланăђђĕ. Ун çинђен вăл нумай шутланă.

Кĕçтук йалан кĕтӳре.

Пайан ирхи хĕвел пилеш пек шупка хĕрлĕ пуçне кăтартнă вăхăта вăл кĕтӳпе симĕс улăха çитме те ĕлкĕрет. Выђăх-ђĕрлĕхсене вăл йуратаҭ. Выђăхсем те ăна йуратаççĕ пулас, вăл каланине итлеççĕ.

— Хас! Айван, мĕн уçăм йенелле пăрăнатăн, ав сан вађђи улăх, тет вăл вара, пĕр-пĕр ĕне хӳрине суллантарса сĕлĕ пуссине пăрăнма пуçласан. Ĕни çаплах пуççăрланса сĕлĕ калђи йенелле утсан, Кĕçтук ăна вутпа ăшаласа тĕрленĕ ђукмар патаккипе йунаса хăратаҭ.

Кĕçтук выђăха шеллет, ђĕлхесĕр йанавар мĕн пĕлетха вăл, тет. Упађђа, леш хытăран хытă хĕнеме тытăнсан—есĕ малтан ахађ çеç хăратса пăх, Упађа тете, тесе ăс параҭ.

— Е-еес, çамрăк кĕтӳçĕха. Ман пек кĕтӳ хыççăн

15 çул сĕтĕрĕнсен, аванах хĕртме тытăнăн. Енў çинђе йĕр кăна мар, йун сиксе тухĕ, тет вара ăна хирĕç Упађа çиленмеллипех çиленсе.—Епĕр Сĕнтĕкпе кĕтнĕ ђух кашни кунах тенĕ пек пĕр-ик сурăх урисене сĕтĕрсе таврăнађђĕç. Манка ха ес, Кĕçтук.

Вăл йаланах Кĕçтук ăна тўрлетнине йуратмаст̆.

Ват кĕтўç çак çулсенђе такама çиленнĕ пек пăшăрханса çўрет. Те ăна кĕтў йăлăхтарнă—ват шăмшак канăçлăх ыйтат̆, те ватàлсан çын хăй çапла пулат̆. Упађа хăш ђух Кĕçтукпа килĕштермест. Çăмартисем ђăххине вĕрентме тытăнђĕç ку саманара, тет ăшĕнђе, леш ăна вĕрентме тытăнсан. Хăй çапах та итлет. Темĕскер шуйттан камсулĕсемпе вăркăшат̆ пулсан та—хамăр çын, текелесе иртерсе йарат̆. Çавăнпа та вăл Кĕçтука хăш ђух, ытла кирлĕ вăхăтра, йе хулана конферентсийе мĕне кайнă ђух, вăрçмаст̆.- -Пĕтмест мурсен ĕçĕ, темĕн тăваççĕ вĕсем унта,—кăшт сăмси айĕнђе măкăртатат̆ те,—çаплипех иртет.

Кĕçтук йаланах хирте, йе вăрмана кĕрсен кĕнеке уçнăшăн та çиленмест.

— Вĕрентĕр, пирĕн пек суккăр пулнин ырри çукçке. Тен, тăнпуç пулсан, çын ретне те кĕрĕи?—шухăшлат̆ вăл, кĕнеке ăшне пуçне ђикнĕ Кĕçтук çине пăхса. Çавăнтах тата хăш ђух хăй çамрăк ђухнехи пурнăçне аса илсе хурланат̆.—Çĕрђĕ пирĕн çамрăклăх. Çурри тарçăрах, çурри кунта, кĕтўре. Кĕçтук пирĕн пек мар, урăх çын пулĕха—вăл çапла, самани урăхла.

Вăл вĕренме шухăшлат̆. Ак пăх, мана пĕђђене пăрахса хăварĕха.

Хађхи самана çапах урӑхла, авантарах. Хут̆ хађ те пулин пуйан пуйанах пурнат̆ те, çапах та урӑхла.

Ухӑђванах илер. Пуйан, ну, пуйан пулсан та халӑх çинђе ӗлӗкхи пек сумӗ çук... Туђккӗ çав нађар çынна ӗлӗк пурнӑç паман. Ку тӗрӗс. А-а, хађ, ак мана мӗнле пурнӑç параççӗ?!. Çакӑн пек вӑхӑтра Упађа калама çук тискер. Выђӑхсене те айӑпсӑрах хӗнеме тытӑнат̆.

Упађапа Кӗçтук ђас-ђасах ђӗрре кӗрсе хирӗçсе кайнӑ. Тавлашу иртсен Упађа çамрӑк йулташне парӑннӑ пек пулат̆.

— Сӑмахпа ес мана çӗнтеретӗн пулсан та, есӗ хађ пурнӑç курман. Нумайха сан манран вӗренмеллисем, ну çапах та, шӑллӑм, есӗ тӗрӗс сӑмах калатӑн,— тет Кӗçтукӑн çӗмӗрт пек хура çӳçне хӑй ађине ађашланӑ пек савса.

— Пашка ес, шӑллӑм! Ак çак плаша та есех вӗт çӗлеттертӗн, есӗ, мӗн каламалла, пашка, пашка! Вӗрен, ађам, вӗрен. Çыншӑн мар, хушӑн.

Çав хушӑрах кӑмӑлӗ хуçӑлса кайсан вара пӗрӗннӗ куç хупанкисемпе шӑрçа пек куççулӗсене куçӗсенђен хӗссе кӑларат̆.

— Ађам, мана та вара ан пӑрах. Турӑ мана ку йенђен те пӳрмерӗ, хут̆ ес те пулин ан пӑрах. Йепле еп пурнӑпши ватӑлмаллӑх кунсенђе?

Кӗçтукӑн ђӗри çак вӑхӑтра çунатланса хӑвӑрттӑн тапат̆.

— Йурӗ, Упађа тете, епӗ çана нихçан та пӑрахмӑп. Манӑн та аттем çук вӗт.

Упађа хӗпӗртет...

— Йурĕ, аҕам. Манăн урăх çынра шанҕăкăм та çук. Вула, аҕам, вула, вĕрен, хăвăншăн пулĕ. Есĕ вĕреннĕ çын пулсан тен мана та çăмăллăх тивĕ.

Ватă Упаңа хĕпĕртесе саланса çийекен кĕтӳ тавра çаврăнма утаť.

— Хас! Хас ҕĕмере. Ак кунта вăйлă, кунтарах, ай-й-вансем.

Упаңан тытăнкăллă сасси шăппăн ухăнса ларакан вăрман хĕррине кайса çухалаť.

* * *

Кĕçтук хĕвелпе тăрса мĕн хĕвел анаҕҕенех кĕтӳре çӳрет пулсан та, йаҕейккă ĕçне пăрахмасť...

Кĕнеке вулаť, çамрăксем ваљљи çĕнĕ сăвăсем çыраť, анҕах вĕсене вăл ретаксине йарса пăхман. Çырса пĕтерсенех аван пек, кайран—ăна ретаксине йарса унпа çынсене анратма та нистуйит, тет.

— Ĕç пур, туљккă ан ӳркен, тет вара вăл, çутçанталăкра нумай пурăнса курнă çын пек, вăрăммăн сывласа.

Халĕ те унăн пуçĕнҕи шухăшĕсем хăй çинҕе мар.

— Пĕркун тырă хатĕрлес ĕçре ушипкă панă пулнă çав. Йеплеха апла, йал çине кăтартнă виçене йатакпа сулса йамалла. Тĕрĕс мар ку. Малттин те ĕнер çапла каларĕ. Çĕнĕрен тăвас пулаť. Та!.. Пайан хытă тăрас пулаť ĕнтĕ.

Çук, çынсем сахал. Малттин, Çеркуни, Саңук, Кĕркуç епĕ, тата... Ну, пурĕ вуниккĕн иккен. Тăвату пин йатака вуниккĕн?

Кĕçтук сăмси айĕнҕе, тутисене мăкăртатса ши-ши! шăхăрса йаҕĕ. Хăрăмланса хуралнă мунҕасем лап-

сăркка ватă йăмрасен айне пытаннă. Кĕçтук кӳлĕ хĕрринҫе тĕпĕлтетсе ларакан икĕ ват йăмрасем хушшине ҫаранса пăхса тăраť.

Тĕкĕр пек çуталса выртакан кӳлĕ хĕрринҫе Кулине шурă йĕм тавăрса тăраť. Ун çине Кĕçтук сăнаса пăхнине вăл курмасť.

— Кĕпе çăватнам?—терĕ хуллен Кĕçтук.

— Мĕн тăвас тетĕнха. Çапла.

— Урăх ĕç тупас пулаť. Мĕн çав шуйттансен кĕпи-йĕмĕсене тасатса пурăнатăн.

— Ан кала та ĕнтĕ. Тепле хăтăласха çак тамăкран.

Кулинен хурлăхлă тарăн куçĕсем çăлтăрсем пек вăрттăн кулса илҫĕçĕ; сăмаххисем киҫемлĕ пулсан та, унăн çинçе сасси шăнкăрав пек ҫанкăртатаť.

— Пухăва каймастнам есĕ?

— Кайатăп. Çавăнпа килтĕмха. Ха-а-лĕ! пуху уçăлаҫҫен виçĕ хут та мунҫа кĕрсе тухма пулаť.

— Есĕ ху мĕнле?

— Ĕç нумай та? Ну, ĕç вилсен те виç кунлăха йулаť, теççĕ те, ăна пăхмастăп ĕнтĕ. Пыратăп.

— Вот, Кулине, ку питĕ тĕрĕс!

Кĕçтук тата та каласшăн пулҫĕ те, анҫах шарламарĕ.

— Васкамалла вĕт, ҫасрах кĕр шыва, терĕ Кулине кулкаласа.

— Ара пăртакçă сивĕнемха. Тарланă ӳтпе йепле труках шыва ҫăматăн.

— Вон ес мĕнле? Тухтăрсем пек иккен.

— Ан хăвалаха. Курманни нумай пулаť вĕт.

— Лар, лар. Хăваламастăп.

Кĕçтук, Кулинерен инçех те мар, хĕлле касса ўкернĕ ватă çўçе тункати çине пырса утланса ларҫĕ.

Кулине йулашки кĕписене васкаса ҫўхет.

Хаклă, çывăх йулташа вăрах курмасăр çўренĕ вăхăтра унпа тĕл пулсассăн пурин çинҫен те каласас пек. Мĕн ҫухлĕ шухăшсем вара пуçра пăтранаççĕ.

Кĕçтук ырă шăршăллă уй-хирте пĕҫҫен çўренĕ вăхăтра, Кулине çинҫен нумай пуç тавра çавăрса шухăшланă.

Уйри тăлăх çеçкесене çак йуратнă Кулинепе танаштарнă. Мĕнле мĕнле кăна вăл аҫашласа хăй çырнă сăввисене шăрантарнă... Анҫах ăна айван выљăхсенҫен пуçне никам та илтмен.

Хăйĕн çемçе ҫĕрийĕ Кулинене йуратса кăварланса çунни çинҫен вăл Упаңана та систермен.

Кĕçтукăн çăмăл шухăшĕ йăшăлтатма пуçларĕ.

— Калас. Мĕн пытармалли пур. — Çук. Капла луҫҫĕ, тĕл пулсан аван калаçăт.

Кĕçтукăн йўçсе хăпаракан вĕри шухăшĕ пĕр сăмах тĕртсе кăларҫĕ.

— Кулине, ман сана пĕр сăмах каламалли пур, есĕ туљккă ан çилен вара.

— Ак, мĕншĕн çиленес, кала,—итлетĕп.

Кĕçтук пуçĕнҫи шухăшĕсене майларĕ: „Ухмах мĕн супĕлтетететĕпха епĕ". Унăн тăнлавне вĕри йун килсе тапрĕ. Ăна хирĕç хĕвел пек çутăлса пăхакан Кулинен сăн пиҫĕ, уçланкăри йешĕл çаран çинҫи ăшă çилпе ҫўхенсе ларакан сарă çеçке пек туйăнҫĕ.

Йепле ун çинҫен калас тетĕнха.— Çук, урăх ҫух...

— Çук! А-а, акă мĕн çинђен ыйтса пĕлесшĕнђĕ.

— Мĕн?—терĕ Кулине ђеђен сассине кăларса.

— Пĕлниха есĕ сана комсомола илнине?

Кулинен пиђĕ çурăлас пек хĕрелсе кайрĕ. Кĕçтук пуçĕнђи шухăшне пытарса ун вырăнне сăмах çукран туса каланине вăл туйрĕ. Çапах та пĕлме не хывса тĕс кăтартмарĕ.

— Ун çинђен мана ĕнер Уђки каласа пађĕ, терĕ те,--ара çакăншăн мĕн çиленмелли пур, тесе калас шухăшсем ун пуçне килсе кĕђĕçĕ.

Кулинен çинçе хĕлĕхлĕ ђĕри Кĕçтук ăна йуратнине сисет. Вăл хăйĕн кăмăлне те кайаť... Йепле уççăнах калас тетĕнха.

— Ђĕри аван, Малттинĕнни пекех, — шухăш ларĕ вăл. Пуçĕнђи тутăрне салтса арпашса кайнă çÿçне тÿрлетрĕ.

— Шыва кĕр тата, пухăва каймасăр йулăпăр.

— Ăна вăхăт нумай кирлĕ мар вĕт. Çиђђас!

Çавăнтах Кĕçтук Кулинерен темиçе çуллăха уйăрăлса кайнă пек, вăрăммăн сывласа:

— Тĕрĕс,васкас пулаť, терĕ те, мунђасен тепĕр йенне шыва кĕме ђупса кайрĕ.

Кулине йулашкинђен Марук кĕпине пăрса типĕтрĕ. Кĕçтук утланса ларнă çÿçе тункати çине кукăр кĕвентине хурса, пăрса сăрхăнтарнă кĕписене тийерĕ. Пĕр аллипе ăвăс йăвăççинђен тунă ђĕресне тытса хулпуççи çинђи кĕвентине йăтса çыран çине хуллен хăпарђĕ...

— Кулине! Пĕрле кайăпăр. —Кĕçтукăн уçă сасси кунĕпе шавласа ывăннă хыççăн тĕлĕрме пуçланă кÿлле вăратрĕ.

— Васкас пулаŤ ман! Çаксене леççен епĕ те пуххa пыратăп, терĕ ăна хирĕç Кулине. Хăй васкаса Ухăљван çурт йенелле утрĕ.

Тĕттĕм сăр çурçĕр йенђен нумай çӳлелле шăвса хăпарђĕ. Кĕтмен çĕртенех пĕр шапа:

— Крр! Крр! кăрласа илђĕ.

Кĕçтук ак, шапасем калаçма пуçлаççĕ тесе, пĕр самантлăха йăпанса ђарăнса итлерĕ. Шапасем шарламарĕçĕ.

Кулине йенне çаврăнса пăхрĕ вăл. Анђах Кулине çаврăнса пăхмарĕ.

— ВаскаŤ. Ан тив, васкатăр ĕнтĕ. Пухура курăшăпăрха.

Ђерет хуçисем апат хатĕрленинине пĕлетĕр каçах, шкул йенелле васкаса утрĕ Кĕçтук.

## 7. Çĕр айĕнђе çĕртĕр.

СĔТЕЛ çине лартнă вĕри йашка пăсланса хăпараť. Кăмака умĕнђе сăмавар уласа вĕреме кĕђĕ. Пўртре Кулине пĕр пĕђђен. Хуçисем апат çиме кĕрессе кĕтет. Паçăрах ăна вĕсем апат хатĕрлеме пўрте хистесе кĕртрĕç.

— Мĕн тăваççĕ вĕсем унта? Кайса пăхсан, мĕн калĕçши?

Ухăљван тискер куçĕсемпе пăхса ăсатнине аса илсен:

— Вăт, пăх ĕнтĕ, хăшпĕр ђух хатĕрлесе ĕлкĕрмелле мар вĕт, выçă кашкăрсем пек ăшаланаççĕ. Сивĕнсе кайсан, кайран пурĕ пĕрех хама лекет. Хурана йарса хурас луђђă,—шутларĕ вăл.

Пахђари йăвăççем хыçне йерипен шуса анма пуçланă палан тĕслĕ, хĕрлĕ сарă хĕвелĕн çутти ђўређе витĕр йăл кулса пăхрĕ. Кулине ăна курмарĕ.

Кулинен куçĕсем ђашкăри йашкаран хăпаракан пăс çинђе. Хĕвелĕн пĕђĕкçĕ шевли пакша хўри пек вĕлтĕртетнине курђĕç. Кулине хĕпĕртемерĕ...

Сĕтел умĕнђе тарăн шухăша кайса тăнă çĕртенех, икĕ аллисене хыçалалла йарса, пĕр майах пĕшкĕнсе ĕçленĕ пилĕкне карăнса кантарђĕ. Хулăнланма пуçланă пилĕк çинђи ђĕрçиттине хытарса çыхрĕ.

...Тĕрлĕ сăрсем ун пуçĕнђе сурпан пуçлăх кумаççĕ.

— Мĕн каларĕши вăл? Темĕн каларĕ ĕнтĕ? Çук, ăнланаймарăм çав.

Вăл халĕ нимĕн çинђе те ђарăнса тăрасшăн мар. Йăтăнса кĕрекен çĕнĕрен çĕнĕ меслетсем, çумăр çăвас умĕнхи пĕлĕтсем пек, унăн пуçĕнђе пăтранаççĕ.

Вунтăхăр çул утнă пурнăç çулĕ çине кайалла çаврăнса пăхать вăл.

— Нивушли ман пурнăçра пĕр савăнăçлă кун та пулман пулĕ?

Ун пуçĕнђи шухăшсем кумса пĕтернĕ тăрăха тĕрлеме пуçларĕç. Хăшĕха ун ђăн илемлĕ тĕрри?

Ак, вăл тупрĕ:

Кулине пĕђђен, кукамăшсен мунђа пек пĕђĕкçĕ пўртре çара уран ђупса выљать. Тăрăхла сак айне пусма ларма кĕрсе вырнаçнă ама хур ун кĕпи аркинђен çаврса хĕстерет.

Кулине кайалла уртăнать, хурĕ хăй патнех сĕтĕрет.

Вăл кăшкăрса йĕрсе йарсан çеç кукамăшĕ ăна кхх! кăхх! кăхлатса сăхакан пăђăкă шăллă, ула хурăн вăрăм, сарă сăмсинђен хăтарать.

Тата та паллăрах тĕрĕсем тĕрлесшĕн пулђĕ, анђах вăл урăх нимĕн те тупаймарĕ.

Кулине ашшĕпе амăшне курман. Вĕсем вăл çуралсан икĕ çултанах вилсе кайнă...

Шăнкăрђă йăви пек пĕђĕкçĕ, пĕр ђўређеллĕ пўртре Кулине кукамĕшсемпе пĕрле çиђĕ çула çитиђђен пурăннă. Кайран вĕсем те вилсе кайаççĕ.

Тăлăх хĕре, Кулинене, Ухăљван усрама илет.

— Ђĕрĕ çын çуртра усă паратех ĕнтĕ, тесе вĕсем малтанах шутланă.

Кулине хёлле пӳртре аҙа сиктернӗ, ҫула пулсан хуркӑвакал кӗтӳне кӗтнӗ; ҫапла вӑл пӗрмай йывӑр ӗҫре ҫитӗннӗ сатур пике пек хӗр пулса тӑнӑ.

Татах ун пуҫӗнҙи ҫӗнӗ тӗрӗ тӗрленет:

— Мӗншӗн, вӑл пурнӑҫ капла? — Ҫук! Ман вут пек вӗрекен ӑшҙикӗме никам та ӑнланас ҫук...

— А, Кӗҫтук? — терӗ ун тепӗр шухӑшӗ, вӑрттӑн, пӳртри шӑплӑхран та шӑп сасӑпа ҫемҫен.

Кулинен сӑнпиҙӗ уйӑх пек йӑвашшӑн ҫиелтен кулса илҙӗ. Тата, ҫавӑнтах ҫамрӑк Кулине, те ытла та хӗпӗртенипе, те хурлӑх кӗвенти пуснипе унӑн кӗрхи ӑвӑс ҫулҫи пек хӗрелнӗ пиҙӗ ҫине ӑргут (ҙӗр кӗмӗл) гумлакӗсем пек ҫутӑ куҫшӳллисем йухса анҙӗҫӗ.

Вӑрӑммӑн, ӳпке тулли сывласа хӑтарнӑ кӑкӑрӗсене йерипен пусарҙӗ.

— Ак, вӑл комсомолккӑ, Уҙки те, Кӗҫтук та унтах пулаҙҙӗ. Мӗнле вӗсем хастарлӑ ӗҫлеҫҫӗ. Ҫырӑва вӗренетӗп. Вӑт, вара...

* * *

— Шуйтан, леш килсе ан вӑрӑнтӑр тата?..

— Кунта мӗн ӗҫ пур унӑн? — терӗ Ухӑҙван, Кенӑ ҫурӑмӗ ҫинҙи миххе тарӑн ҙакалтанӑ шӑгӑка йӑвантарса.

— Сысна, Кӗҫтукпа ҫыхланнӑ пуласха вӑл, — терӗ Кенӑ.

Хӑй ӑшӗнҙе вӑл уншӑн хавас пек пулҙӗ. Аван, алимент тулес хуйхӑ пулмасӗ. Ҫавӑнтах хӑй кӗвӗҫнӗ пек пулҙӗ...

— Комсула кӗмести тата? — ыйтрӗ Марук, Кенӑн амӑшӗ.

— Комсулĕ мĕнĕ, çаклатманиха вăл? Çавăн пек туйăнаҫ! — тĕртсе хуҫĕ Ухăљван.

— Ун пек ирсĕр çынсенҫен тасалас пулаҫ, килйышне ан вараласа пурăнтăр вăл, ун пек хĕрарăма пĕртте шанмалли çук, — терĕ Кенă.



Кенă хăйĕнҫен хăй:

— Мĕншĕнха çав навусшăн кĕвĕçетĕп? — Çук, йерунта! Ун пек навус çул çинҫе те нумай выртаҫ.

Кулине çинҫен калаçма пăрахрĕç.

Виççĕн виçĕ кĕреçęсемпе икçĕр пăт ытла тырра вите хыçне пытарҫĕç...

Ухăљван тимĕрленĕ çуна çине ларса, мăнтăр, кўп-

шек пит тăрăх тумлакан ţарĕсене кĕпи арки вĕçĕпе шăлса илђĕ.

— Ух! ух! — сывларĕ.

— Ну, кун пек нихăçан та тарламан. Аван пулђĕха ку. Çавăн ђухлĕ йапала шăтсах тухас çукха. Шăтса тухтăр, çĕртĕр, пурĕ пĕрех вĕсене парас çук.

— Кулђук сисмерĕ пулсан аван та?..—терĕ Марук.

— Тăмана вĕт вăл, ăна тата сисме? Мĕн пĕлет вăл?

—Ăна ухмаха, пăх та тинкĕле.

— Анне, кайха, апат хатĕрле, çийес киле пуçларĕ.

— Хаљ ёç пĕтрĕ ёнтĕ, пыр!..

* * *

Марук, аслă ывăлĕпе упăшкине çурнă пĕренесемпе хупласа тунă тĕттĕм сарайне хăварђĕ. Пус патĕнђи такана çинђи тăрăлнă шывпа аллисене çурĕ. Пăлан пек сайрака мăйракаллă икĕ куштан ёнисем вăрăм хŷрисене вăш-ваш ђŷхентерсе кĕçĕн хапхаран килсе кĕђĕç.

— Кулђук! Кулђук, тетĕп! — нŷхрепре кăшкăрнă пек йанрарĕ Марук сасси.

— Сиђђас!— Кулинен хыпаланђăк сасси пŷртрен илтĕнђĕ.

Кулине пŷртрен картишне ђупса тухрĕ.

— Мĕн тумалла?

— Суккăр-им? Ав, ёнесем таварăннă. Нийеплĕ сынна та ес йурас çук.

— Пĕр ђĕрес кĕпе ухнă хыççăн ывăннă пек пул-

тăм, пуçра темĕскер шавланипе выртса пăхас терĕм те, кăшт тĕлĕрнĕ куран.

— Йепле вăл кăнтăр варринђе çын çывăраť?— Кулине такана çинђи тăрă шывпа аллине çурĕ те çенĕхе витре илме кĕђĕ.

* * *

Ухăљван ывăлĕпе апатланма пўрте кĕђĕ.

— Ну, карђăк, мĕнпе хăна тăватăн?

— Ара, мур çимен, выртнă та çывăрнă. Çĕнĕрен ăшăтас пулаť. Кăшт тăхтăрха еппин, ăшăтам.

— Лешĕ йулмани?—терĕ Ухăљван, çуланкаласа.

— Кăшт пурђђĕ те-ха. Илсе кĕрсе парам еппин.

Марук хуран айне вут ђĕртсе хăварса çуттине илме ђăлана тухрĕ.

Михетер арăмĕ хашлатса килсе кĕђĕ.

— Наçтук кин, мĕн пулђĕ сана, мĕн есĕ вăрăсенђен тарса хăтăлнă пек хашкатăн?

— Темĕн кăтартаççĕ ĕнтĕ.

— Мĕн? Ак, ирт тĕпелелле, лар çакăнта,—терĕ Кенă Михетер арăмне тенкел парса.

Наçтук, темĕскер шыранă пек, йĕри-тавра çаврăнса пăхрĕ.

— Ах, çак кумуниссене, шуйттансене, ђĕрĕллех çийĕттĕм.

— Кала ђасрах, мĕн пулђĕ?—ыйтрĕ Ухăљван, ларнă çĕртен сиксе тăрса.

Наçтук пўлĕннĕ. Сывлăшне çăтса, хăй пуçĕнђе çĕр майлă çаврăнакан сăмаха персе йађĕ.

— Çĕнĕрен пуху туса, йал çине килнĕ виçене пуйансем çине çеç хурасшăн тет.

— Кам ăна апла ашкăнаť?

— Çав камсулсемех ĕнтĕ, кам пултăр тата?

— Малттин ĕçĕ ку,—тесе хушса хуђĕ Кенă.

— Çавă! Та, çавă çав! Ну ку шуйттан çўрине мĕн тăвас?

Ухăљван, кăвакарнă çўçлĕ пуçне икĕ аллипе тытса калла-малла уткаласа çўреме пуçларĕ.

— Ăçтан пĕлтĕр вăл хыпара?

— Ара, хамăр Çĕмйун каларĕ. Есĕр ун çинђен никама та ан калăр. Ăна калама йурамасť, тет.

— Хе! Вот, еттă та-а!?

— Ĕçлес пулаť. Çывăрсан ĕç тухмасť. Хамăрăннисемпе калаçса татăлас пулаť. Ниђђево-о! Епĕр нумайăн. Хĕрĕ, хĕрарăмĕ, ађипăђи пурте пухăва пырас пулаť. Кам ăна хирĕç, вĕсене тырă пама пулас пулаť. Атту, ĕç тухас çук. Ăнлантăна?..

— Ара, ăнлантăм ĕнтĕ. Хăй килте пулмарĕха. Каçалапа килетĕп терĕ те, килети?

— Вăт, çапла. Урăх нимĕнле май та çук! Хĕрарăм хушшинђе хытăрах пăтратма тăрăшас пулаť. Вĕсене тўррипех каламалла: пуйансен тыррисене çаратса кайсан, йалта тырă пĕтет, вара ђухăнсен хăйсенех выçă ларма лекет, тесе калас пулаť. Пуйанăн тырри ĕçлемесĕр пулнă йапала мар вĕт вăл.

— Ара çапла ĕнтĕ вăл, çапла çав. Тата Марук аппа ăçта кайнă?

— Тула тухрĕха вăл. Ăна кĕтсе ан тăр, ђуп киле, кўршĕ арăмĕсене, çул çинђе кама тĕл пулатăн, вĕсене те каласа пĕлтерме тăрăш.

— Йураť, йураť! Кайамха еппин!

Наçтук васкаса килне тухса вĕçтерђĕ.

— Пĕтерес пулаť ку Малттине. Çав пĕтĕм йала пăтратаť те,—терĕ Ухăљван.

Кенă ашшĕ сăмахĕсемпе килĕшрĕ. Вăл ун çинђен таксанах шутланă, анђах хăравçăлăх ђарса тăнă ăна.

— Акă, ĕçĕр,—терĕ Марук пĕр пулштух ерехне сĕтел çине лартса.

Тарласа ĕçленĕ хыççăн Ухăљван çемйи шăмшакне çемçетме тытăнђĕ...

## 8. Кама мӗн тивӗҫ.

КӖҪТУК пынӑ ҫӗре пуху пуҫланнӑ. Малттин, хуҫитлӗ, Саҫук, Улҫки, — пурте кунта. Халӑх хушшине тӗрлӗ вырӑна сапаланса ларнӑ. Шкулти халӑх ҫапса хӗснӗ пек. Пӑҫӑ...

Тӗлӗнмелле кӑҫухкехи пухуран. Сухал хушшине ҫара йанах хӗсӗннӗ, картус ҫумӗнҫех йавлӑк—пӗртте тиркевӗ ҫук.

Ӗлӗкрех хӗрарӑмсем пухӑва ҫӳреме йутшӑнаҫҫӗҫ. «Ӑҫта пире унта, тӗнҫе кулӗ, тата арҫынсене мӗншӗн ҫуратнӑ?». Мӑшӑрсӑр салтак арӑмӗсем ҫапла перетҫӗҫ. Мӑшӑрлисем тата та вирлӗрех, ун ҫинҫен илтекен калама та намӑс тейӗ.

Ӗлӗкхи расклаткӑ тӗрӗс пулманнине, тата комиҫҫи те йӑнӑш ӗҫлени ҫинҫен каласа пӗтернӗ пӗтермерех, хурал пӳрҫӗ айӑн-ҫийӗн ҫаврӑнса пӑлханма тытӑнҫӗ.

— А-а!—Тинук Йакурӗ ҫӑварне карса пӑрахрӗ.

— Ҫухӑн наҫар тесе пуйанӑн ҫӑтмалла иккен! Ӑна кӑмака ҫинҫе пӗҫҫине тӑратса вырттарасшӑн! Ухӑлҫван 300 пӑт тӳлемелле иккен. Ҫӑварна пӗҫерӗ. Ҫук, тӗрӗс мар ку. Совет влаҫӗ ун пек тума хушмасӑ. Саккун пур! Ҫавӑн тӑрӑх тумалла!..

Анаткас пуйанĕсем халĕ мĕнле пурăнмаллине сисеççĕ. Ĕлĕк вĕсем пуйанлăхпа мухтаннă.

«Пуйан, çĕрме пуйан вăл» тесе тавра йалсем тăрăх ђаплăх салатасшăн мĕн ђухлĕ укçа тăкманши?

Хăш-пĕр вăтам хресђенех вăй çитмест пулсан та капанне хĕллене хăварма тăрăшнă, анђах вăл ун ђапнех сарма пулăшман.

Пуйан намăссăр çын. Вăл пурлăх тесен етем ывăл-хĕр йунне те шерпет туса ĕçме йĕрĕнмен...

Халĕ урăхла. Кăђухне ђухăнпа патрака мухтавлă йурăсем йурлаççĕ, тет аслă шкулта вĕренекен Кенати. — Танлă çын пулас тесен пĕрик çул хушши кĕтӳ кĕтмелле, тет вăл.

Пуйансен тăнлă-пуçлă ађисем ђасах сисеççĕ. Кăђухнехи кулак ђухăн курăнасшăн 14 çулхи сăмсине шăлайман ывăлне те йатшăн хăйĕнђен уйăрса кăларма хатĕр.

Миђђа та çавăн пекех, çĕрме пуйан ађи пулнăскер, виçĕм çултанпа çеç ђухăн шутне кĕнĕ. Хăйĕн пит сăпатне вăхăтлăха палăртасшăн мар вăл, Совет «пĕтсен» ђӳлмекри мул тухса каллех Миђђан ђапне çĕклессе вăл шанаť.

— Йеток тăрăх хумалла!—кăшкăрђĕ Миђђа.

— Тĕрĕс!..

— Тĕрĕс!!—хар йарса илђĕç пилĕк ултă тутăхнă сасăсем ун хыççăн.

— Правĕлнă! Ак Кенати вĕреннĕ çын, вăл ăс пама пултараť,—терĕ Кукăр, кумми çине пăхса. Пухури çынсем Кенати çине çаврăнса пăхрĕçĕ.

Малттин Кенати çине хайаррăн пăхса илђĕ.

— Тĕрĕс, ара унăн саккунĕ çапла,—терĕ Кенати хуллен.

— Врйот!—тесе кăшкăрса йаҫĕ Малттин.—Çавăнтах: Вот сысна, куç умĕнҫех суйат̆, саккун çине перет,—тата шухăшларĕ Малттин.

— Йатак тăрăх!—тесе хăрлатрĕç,

Малттин ҫăтаймасăр ларнă вырăнĕнҫен йалт сиксе тăрат̆. Ура çине тăрсан вутлăн çунма пуçланă куçсемпе Кенатин çийелтен кулакан сăн-пиҫĕ çине тепĕр хут тăрăнҫĕ.

— Тĕрĕс мар! Çук. Улталӑт вăл, кун пек саккун пулман та, пулас та çук. Иртнинҫе те Упаҥапа Ухăљвана пĕр пек тунă есĕр çапла кăшкăрса. Тĕрĕс турăри?!—Малттин ҫухăнсем çине йăлттăрти куçне ывăтрĕ.

Пухури халăх ирхи тӳлек çанталăкпа шăппăн ларакан ыраш калҫи пек лăпланса Малттинăн витĕмлĕ сассине итлет.

— Ну-у! Тĕрĕси ку!? Калăр! Ыйткалакан Сахимене те çĕрме пуйанпа п ĕ р л е ш т е р е с ш ĕ н есĕр. Ну!..

Виҫкĕн пурне те куракан куçĕ Кукăр çине тăрăнҫĕ.

«Ну!» Кукăрăн çĕрĕк уллаҫа кĕпи айĕнҫи ҫĕри темĕскерле йакăлт турĕ. «Тĕрĕссине, ҫăнах çапла ĕнтĕ вăл. Сахиме, Упаҥа?.. «Ара, саншăн хам парăп, тата çийĕнҫен пĕр 20—30 пăт, сухи те ахалех пулĕ»—пуйан Ухăљван сăмахĕсем сăрлатрĕç ун пуçĕнҫе.

«200 пăт ытла хам патăмра та, паратех ĕнтĕ вăл» Кукăр пуçĕнҫи шухăш вĕçне тухаймарĕ, ывăнҫĕ

пулмалла. Аха, аха вĕçне тытрĕ...—«Мĕн ĕç пур ман вĕсен çумĕнђе. Тĕрĕс, Сахимепе Упађа нађар пурăнаççĕ. Пушалăй манран та ђухăнрах пулĕ. Ну, епĕ кунта мĕнрен винават?—Çук. Пĕлђђĕр вĕсем те çапла пурăнма. Кам кансĕрлет вĕсене? Алла кĕнĕ кайăка вĕçерме йурати у?

— Тĕрĕс ĕнтĕ вăл, çапла тумасăр мĕнле тумалла тата? Анђах пуйансене кӳрентерсе мĕн курăпăрши? Йал кӳлли аслă, теççĕ. Ун пек ĕçе йалпа тăвас пулаť,—терĕ сарлака кăкăрне хăпартса кукăр.

Малттин куçне ун çинђен илмест.

— Çук, кăна есĕ каламастăн, ку ђухăн йурри мар. Сана йе ĕçтерсе йанă, йе мĕн те пулсан тыттарнă. Çук, ку сан кĕввӳ мар.

Малттин вĕри, виђкĕн сăмахĕсене пуртăпа çатçат касса пыраť.

— Намăс сире... намăс!.. Виçĕм кун каç та Ухăљван панђе ĕçнĕ. Хăшпĕрисем Кукăр хутне кĕђĕçĕ.

— Ђăнах, Малттин, есĕ ытла та тăрр! кайатăн. Ăна йерипен, сапăр калаçаççĕ. Пурте вĕтĕ пĕр йал çыннисем,—шăпђăкла йурласа йађĕ Çĕрĕк.

Малттине унпа хăратаймăн; вăл çаплах ђарăнмасť. Пуплемест, хăйĕн çулăмлă сăмаххисемпе «хĕнет». Сăмахĕсем унăн виђкĕн сăнă. Ђухăн ђĕри çине кĕпе витĕр шăратса кĕрсе тăрăна-тăрăна лараççĕ. Йепле вăл ан ыраттартăр.

Кĕçтукпа Сађукăн та ђĕлхисем кĕçĕтсе тăраççĕ. Малттин калаçаť.

Уљки Пађукпа çумăн сĕтел хушшинђе çырса лараť. Уђђитĕл те кунтах. Пурин те пĕр шухăш, калăн—пĕр çын! Кирек мĕн калаçăр. Малттин иле-

тех хăйĕнне — выљаççĕ вĕсен пуçĕнђи шухăшсем. Итлесен, итлесен кăмака хыçне хĕсĕннĕ ђухăн Иван та ђăтаймарĕ, калаçма йуратманскер, пат сăмахпа пеђĕ:

— Кунта калаçмалли те çук! Малттин тĕрĕс калаŤ. Иван хăйулланнă çемĕн хăйулланаŤ: — „Çуксем епĕр çĕнĕлле савета леçсе пĕтергĕмĕр, халĕ пуйансем леçђĕр... Вĕсем 3—4 ăлавпа Курмăша леçме питĕ аван пĕлеççĕ...

— Ĕмĕрне пухура çăвар уçман çын та калаçма тытăнђĕ те, ăçта кунта çĕнтерме? — шухăшларĕ комиççи пуçлăхĕ Михетер.

Вăл ессер пулнăскер. Политтĕкпа сыпăçуллă çаптарма пултараŤ. Хăй вăл халĕ те пољшевиксене хытă вăрçаŤ, пуринђен ытла çĕр прокрамми çинђен. Пољшевиксем ессерсен прокрамине илсе ырă йата кĕђĕçĕ, тесе йаланах мăкăртатса çӳрет.

ОкŤапĕр револ ђутси Михетере комиссар сумккине тыттармасăр ĕнсерен парса кăларса йађĕ. Çавăнпа та вăл пољшевиксемпе Совета хытă хирĕç тăраŤ.

ОкŤапĕр çулăмĕ унăн ађашласа ӳстернĕ ĕмĕтне кĕллентерсе вĕри сывлăшпа вĕçтерђĕ.

— Ех, май çук. Хал çук. Вăй пулсан халех, епĕ сире хар хыпса туртса çурăттăм, тет вăл, çиллине шăнараймасăр. Çук çав... Çакăн пек çав ĕнтĕ çĕлен-калтан ăшђикки.

Сар çу пек çемçе ђĕлхипе Михетер калаçма пуçларĕ:

— Тăвансем, пурте кунта хамăр йал çыннисем. Пĕрне çăлса, тепĕрне путарма тăрăшмалла мар. Пĕр икĕ пии пăтне йал çине илмесен луђђĕ пулмĕши?

Совет влаçĕ унтан нимĕн те аптăрас çук. Пĕр-пĕрин çине йăвантарнипе пулакан йапала мар ку. Епĕр малтанах çапла тумалла пулнă, темме халĕ тепĕр хут айкашаççĕ.

Йăвашшăн, ăнланмана хывса, Малттин çине пăхса илђĕ.

— Епĕ ун çинђен саççетанире те çаплах каларăм. Вĕт пурĕпĕр тырă йут патшалăха кайаť.

Михетер сасси купăсăн çӳхе хĕлĕхĕ пек, çепĕç, çийелтен нăйкăлтатрĕ. Нумайĕшин ђĕрисене саваť, кăтăклаť... Иванăн ђĕрине те хăй вырăнне çуласа вырттарђĕ...

Çапах та Кĕркуç ђĕрине Михетерĕн кĕвви шăратаймарĕ.

Краштăн вăрçинђе тимĕрленнĕ çав. Кун пеккине çеç вăл курман, çавăнпа та ăна труках илме хĕн. Малттин капла кĕрешнине курсан Кĕркуç темме тăшмансемпе вăрçнине аса илђĕ. Те вара çавăнпа Кĕркуçăн ђĕрес пек ђĕри лăпланас вырăнне сиксе вĕреме тытăнђĕ.

— Ес тăшман, еп палларăм сана!—терĕ хайарăн Михетер умне сиксе ӳксе.

Çирĕп ђăмăрĕ хурал пӳрђĕн лутра сĕтелĕ çине йăвăррăн персе анђĕ.

— Тух! Тух пухуран, шăммуна шеллетĕн тăк тух! Пирĕн хушăра сан вађђи вырăн хатĕрлемен!

Кĕр-кĕр-кĕр-кĕр! Сăр сăр-сăр,—пуху сăрларĕ.

— Мантăрам есир сирĕншĕн кам йун тăкнине? Хађ кирлĕ марим? Капитталиссем вăрçăпа килесшĕн, ĕçхресђенĕ ытлашки тыррине Совета памаллах, паттăрсем кирлĕ, еп хам тен ыранах кайап. Ес пире выçă

вёлересшён!—йан кайаҭ паттăр сасси. Уђђитёлпе Кĕçтук хĕрелсе, нервăлланса кайнă Кĕркуçа аран ўкĕте кĕртрĕçĕ.

Кĕркуçа пусаракан тата Çеркуни, Кĕçтук, Сађук, Уљки те тухса калаçрĕç.

Йулашкинђен Малттин калаçма пуçларĕ:

— Йулташсем! каллех калатăп: есĕр панă тырă тетўсем, шăллăрсем, рапођђисем патне кайаҭ.

Сире ваљљи трактăр, компайн, супăђ, сахăр, çитсă хатĕрлекенсем патне кайаҭ.

— Правĕљнă!—тесе кăшкăрђĕ пĕри. Кĕçтук алă çупма тытăнђĕ Ун хыççăн ыттисем те...

Супăђ, сахăр тесен, Михетер тепĕр хут сăмах ыйтрĕ. Пурĕпĕр сахăр памаççĕ, ĕçлекенсем хресђенсене тулласçĕ, тесе каласшăн пулђĕ.

— Тата виçĕ сăмах каламха.

— Есĕ калаçрăн, çитет! Ав Кулине сăмах ыйтаҭ! Ăна парас; терĕç ђухăнсем харăссăнах тенĕ пек кăшкăрса.

Кулине вăрахђен калаçмарĕ.

— Тĕрĕс, тĕрĕс, Ухăљван кулак çине пĕр 500 пăт хумалла, Михетер çине 300—400.

— Правĕљнă!—çĕр сасă хурал пўрт ђўређинђен тухса ђассавнийе кайса сапăнђĕ.

Çĕнĕ комиççийе Кĕркуç, Уљки, Кулине тата Малттин суйланђĕç...

## 9. Асту, ан ман...

ПУХУ вăрахђен саланмарĕ... Хурал пӳрт умĕнђи халăх амине çухатнă хурт-хăмăр пек сăрлама пуçларĕ. Йалканаш претçетаттĕлĕ тата тепĕр хут пурне те илтмелле кăшкăрса каларĕ:

— Йулташсем! пуху хупăннă тесе шутлатпăр. Килсене саланма йураť.

Хурал пӳртĕн пăлтăр алăкĕ умĕнђе тăракансем килĕсене саланма пуçларĕç.

— Ан саланăр!..

— Ĕçе халăхпа пĕтермесĕр йепле саланас тетĕрха,—тесе кăшкăрђĕ Михетер. Хурал пӳртĕнђен айаккарах утнисем Михетер сассине илтсен, калла çаврăнђĕç.

— Халăхпа пуçăннă ĕçе халăхпах пĕтерес пулаť. Тĕрĕси, ватăсем?

— Тĕрĕс!..

— Комиççи халăх умĕнђе ĕçлетĕр.

— Правăљнă!

— Мĕнле вăл саккун? Халăхпа пĕрле ĕçлес пулаť.

— Халăхпа пĕрле-е-е!!

Çирĕм-вăтăр çын сасси уçă, тĕттĕм çĕре таçта кайса саланђĕ...

Лапас айӗнђе команта парса тӑракан Ухӑљван пуҫне Кулине ӑсне килсе кӗђӗ:

«Йепле те пулсан ӑна курас пулаҭ». Ҫӗрӗке хӑй патне йыхӑрса илђӗ.

— Кулинене ђӗнсе кӑларха. Йерипентерех калаҫ.

— Йурӗ!..

Ҫӗрӗк ӗрӗхнӗ лаша пек сиксе ӳксе сӑрласа тӑракан халӑх хушшине кӗрсе ҫухалђӗ.

— Вот, шуйттан, йепле-ха вӑл кунта ҫитме пӗлнӗ? Мура комиҫҫийе суйларӗҫ вӗт. Вот, арҫури, вӑл арҫынланса кайнӑ. Ҫук, вӑрҫса ӗҫ тухмасҭ, йӑпатма тӑрӑшас пулаҭ ӗнтӗ. Ухӑљван хӑй ӑшӗнђе Кулине тухасса кӗтсе шутларӗ.

Кулинепе Ҫӗрӗк Ухӑљвана тӗттӗм ҫӗрте шыраса тупрӗҫ.

— Есӗ кайха. Епӗр Кулинепе иккӗн калаҫар.

Ҫӗрӗк нимӗн сӑмах та ђӗнмерӗ, пурне сӗлтрӗ те, айаккалла тӑрӗнђӗ.

— Кулине хӗрӗм, есӗ те пухӑва килнӗ иккен.

— Ара, пурне те ђӗнђӗҫӗ те.

— Килин аванха вӑл, аван. Анђах хамӑршӑн тӑрӑшас пулаҭ. Сана каламанха епӗр. Пӗркунах каласшӑнђђӗ... Кӑҫал сан ваљђи ҫав кӗлетре ҫакӑнса тӑракан тирсенђен сар кӗрӗк ҫӗлетсе парас тетпӗр.

Ҫитӗнтӗн ӗнтӗ, кађђа кайма та вӑхӑт. Хамӑр пӑхса ӳстерме пулнӑскере—ҫын кулли тӑвас ҫук. Халиђђен Ухӑљван йатне ҫӗртменђђӗ те-ха, малашне те ҫаплах тӑвас тесе тӑрӑшатпӑр...

Итлесе тӑракан Кулине тӗлӗнсех кайрӗ.

«Мӗншӗнха ку капла. Никҫан капла каласманнине пайан кунта капла калаҫаҭ?».

— Вăт ват супнă, сăнсăр, есĕ те ывăлу пекех мана мăшкăласшăн, куран?—Ун пуçĕнђе вутлă çиçĕм пек çиçрĕ тепĕр шухăш.

Ухăљван хăйĕн калас шухăшĕ çине куçрĕ.

— Есĕ пĕђĕкçĕ мар ĕнтĕ, пĕлетĕн. Е-е! ара, ес пĕлетĕн ĕнтĕ, ун çинђен каламалли те çук. Хаљхи пурăнăçра тырăсăр нимĕн те илме çук.

Ухăљван, ђĕтĕрекен сассине пĕлтересшĕн мар пулса, таврари çынсем итлесе тăмаççĕи тесе куран, виђкĕн куççене йĕри тавра ыватрĕ. Кулине те нимĕн каламасăрах хыçалалла çаврăнса пăхрĕ.

— Мĕн?

— Çуук. Вăт, сана çавăн çинђен каласа парас тенĕђђĕ. Пĕтĕм тырра шăлса илсе кайсан, сана та, пире ваљљи те йулмасť. Ăнланатна?..

— Ăнланатăп.

— Ну вăт, килте пĕр пăт тырă та çук, тесе калас пулаť. Мĕн пурĕ те çав çапман капансем анђах, тес пулаť. Тĕрĕс вăл, пĕлтĕр те, кăçал та çапман. Ун çинђен каламаллите çук, хăвах пĕлетĕн, терĕ Ухăљван йулашкинђен.

Кулине Ухăљван мĕн çинђен калаçнине лайăх ăнланса илђĕ. «Вот, шуйттан, ват супнă, куç умĕнђех тата суйаť. Кĕлет тулли тырă пур çинђе—пĕр пĕрђĕ тырă та çук тет».

— Хаљ пĕлетне ĕнтĕ мĕнле каламаллине?

— Пĕлетĕп.

— Асту, ан ман... хамăр çын вĕт,—терĕ Ухăљван, Кулинене тепĕр хут хистесе.

Кулине хĕсĕнкелесе пĕђĕк хурал пўртне кĕрсе кайрĕ.

* * *

Малттин, çынсем килĕсене саланманнине курсан, хытă кăшкăрса калаçма пуçларĕ.

— Йулташсем! Есир суйланă комиççийе шанмастăр пулсан çĕнĕрен çĕнĕ комиççи суйлама пултаратăр. Капла вĕркĕшсе тăрас пур, луђђĕ çĕнĕрен суйлăр. Анђах епĕ акă мĕн каласа парас тетĕп. Кунта çак пухăва пăтратакансем пурри курăнаť.

Ку пирĕн ĕç вăрттăн тăвакан йапала мар, комиççи те хăйĕн ĕçне ыранах мĕн пур халăхсен пуххинђе кăтартса параť. Пуху пулађђен ђухăнсен пуххи туса иртермелле пулĕ. Ку та епĕр туртса кăларнă йăла мар. Ăнлантăри, йулташсем!?

— Ăнлантăмăр!

— Такçанах çапла каласа памалла пулнă,—терĕç хăшпĕрисем нимĕн калама аптăраса.

— Ђăнах та, мĕн пăтранса тăратпăрха епĕр, Халђђенпе пĕр мăшăр çăпата туса пĕтермеллеђђĕ, тĕрĕ пĕри, Ухăљванран инçех те мар тăраканни. Унпа йунашар тăраканнисем лешин сăмаххипе килĕштерђĕç куран, вĕсем те çăварĕнђи ђĕлĕмĕсене паклаттарса урам тăрăх килĕсене утреç.

Пухури çынсем ушкăнăн-ушкăнăн килĕсене саланђĕç. Ухăљван та пуçне çĕрелле ђиксе Кенатийĕпе килĕ йенелле уттарђĕ.

Хурал пўртĕнђе кăвак тĕтĕм йăсăрланаť. Йĕпе урай сурђăкпа çăрăлнă, лăђăрт-лăђăрт урана çыпăçаť. Çапах та çынсем кайсан пăртакçă уçăлђĕ.

——

— Йулташсем, вăхăт нумай иртнĕ ĕнтĕ, тавай комиççин ларăвне туса иртерер те, килсене шутарар.

Урай варринҫе, тухса кайаймасăр пĕр-пĕринпе тавлашса тăраканнисем те, калаçма пăрахса «аҫăр! аҫăр! канçĕрлер мар» — тесе тухса кайма тапранҫĕç.

— Çук, йулташсем!—Кам ларас текенсем йулма пултаратăр.

— Çук, ўпкеленĕрен мар, вăхăт çитнĕ ĕнтĕ, терĕç лешсем кулкаласа.

Хурал пўртне комиççи ҫленне суйламаннисенҫен пĕр Çпритун çеç алăк патне ларса йулнă. Пуçне çĕрелле ҫиксе тĕтĕм ҫăмласа лараҫ.

Вăл та тухса кайма хатĕрленҫĕ курнаҫ, ура çине тăрса пуçĕнҫе пăтранакан шухăшне калаймасăр тăраҫ.

Малттин Çпритун темĕскер каласшăн пăркаланса тăнине сисрĕ.

— Çпритун Мирунҫă, сан калаçмалли пурим?

— Пурҫҫĕ çав, Ваҫук, хăна çеç каласшăнҫҫĕ.

— Мĕн? Кала.

Малттин Çпритун çумне пырса ларҫĕ. Лешĕ ун хăлхи патне пĕшкĕнсе, пăшăлтатса калаçма пуçларĕ.

— Тархасшăн мана упишаҫ ан тăвăр ĕнтĕ. Май килсен пĕрер пулштух çуттине те лартма пултарап, уншăн ҫарăнса тăрас çук.

— Çпритун Мирунҫă, мĕн калаçатăн есĕ? Халĕ ĕлĕкхи мар ĕнтĕ. Халĕ йапалана тĕрĕслĕхпе тăвас пулаҫ, апла епĕр ĕçре ерехсемпе тума пуçласан,— мĕнле вăл?

Çпритун хĕрелсе кайрĕ, нимĕн калама аптăраса пўлĕнсе ларҫĕ.

— Мӗн ҫинҗен каласшӑнха есӗ?

— Ҫав тырӑ пиркийех. Ман ҫийе 30 пӑт хунӑ тет. Ара, кӑна пӗлнӗ пулсан, сутмасӑр тӑмалла пулнӑ иккен. Васкаса пулҗӗ ҫав.

— Мӗн васкаса пулҗӗ?

— Ара тырра ҫапса пӗтернӗ пӗтерменех 60 пӑт хыснана леҫсе сутрӑм. Кӑпитантси те пур. Ҫав пирӗн ҫитменни пӗтерет. Куланайа вӑхӑтра тӳлесе татас терӗм. Халӗ, вот, тата 30 пӑт сутмалла тунӑ, тет. Ман ытлашки ҫук. Тата вӑтӑр пӑт леҫсе сутсан вара, ман ҫемйен выҫах ларас пулаҭ.

— Ниҗҗево-о! Нимӗн хӑрамалли те ҫук. Есӗ хӑвӑнтан ытлашкине коссутарствӑна сутнӑ, снаҗҗӑт. Вӑл калама ҫук аван. Вӑл есӗ патшалӑх хистессе кӗтмесӗрех, ӑна пулӑшма тӑрӑшни пулса тӑраҭ. Питӗ аван тунӑ есӗ, куншӑн сана мухтамалли ҫеҫ тӑрса йулаҭ. Сана ирӗксӗрлесе урӑх никам та суттарас ҫук

Ҫпритунӑн лупас пек сухал айне путнӑ тутисем уйӑрӑлса кӑшт кулнӑ пек пулҗӗҫ.

— Ара, хамӑр та ҫав ухмах. Ҫын сӑмахне итлетпӗр. Ҫырӑва пӗлмен ҫын ҫавӑ ӗнтӗ вӑл.

— Кулаксен йуррине итлес пулмасҭ. Вӗсем пире ырӑ сунаҫҫӗ тетӗним?—Ҫук. Май пулсан вӗсем пире пайан кунах җӗрӗлле ҫиме хатӗр.

— Тавтапуҫ сана, Ваҥук, тутлӑ сӑмаххусемшӗн. Җӑрмантарса тӑрам мар тек. Сыв пулӑр!

Ҫпритун хӗпӗртесе урама тухрӗ. Ак, пурте ҫакӑн пек пулсассӑн, мӗнле пулӗҗҗӗши?—тесе шухӑшларӗ хӑй ӑшӗнҗе Ҫпритун. Аслӑ йалӑн турӗ урамӗнҗе пурӑнакан Ҫпритун нумай утса, нумай шухӑшларӗ...

* * *

«Мĕн тăвас тетĕн ĕнтĕ, айăп унта мар, çапла вĕрентнĕ ăна ĕлĕкхи кивĕ йĕрке». Малттин Çпритун ерех пама пулни çинђен калаçса пĕтерсен, ыттисем те ун сăмаххисемпе килĕштерђĕç.

— Ну, йулташсем, тавай пуçлар.

— Мĕнрен?

— Кулаксен çпискине парха.

Паљук кивĕ кĕнеке хупламĕ ăшĕнђен йатсене çырнă хутне Малттине кăларса пађĕ.

— Поççелĕннăй çписăк вĕт ку, есĕ мана кулаксен çпискине пар.

— Ун пекки çук.

— Хăна ваљљи те çырмани?

— Çырман.

— Ђухăнсен çписки пури?

— Вăл пур. Çакăнтахђĕха. Претçетаттĕл папки ăшĕнђи хуђĕсене пăтратса, ђухăнсен çпискине шырама пуçларĕ.

— Ну, латнă. Кулаксене те шута илсе тăрас пулаť. Миçе çын сан интивитуаллă налок тÿлесе тăраççĕ?

Паљук куçĕсене хупса, алли пÿрнисене хутлатса сума пуçларĕ.

— Вуннă...

— Сахал,—терĕ Кĕркуç.

— Ултă çĕр çурт хуçинђен вуннă пит те сахал вăл.

— Правăй уклон шăрши кĕрет кунта, тесе тĕртсе хуђĕ Кĕçтук.

— Ну латнă. Тавай çак çписăк тăрăх суйласа

тухар. Малттин урӑх хут ҫине кулаксен хушамаҕӗсене ҫырма пуҫларӗ.

— Ҕӑн первӑй Ухӑљвана ҫыр, тесе хуҕӗ Кулине.

— Есть!.. Малттин ҫырма пуҫларӗ.

— Ухӑљван.

— Михетер.

— Ылттӑн Мӗкӗти.

— Шӑрттан Петӗрӗ.

— Вот Караҫсем.

— Та-а! Нумай вӗсем ишрӗҫӗ.

— Тӗлӗнсе кайӑн вӗт,—терӗ Малттин,—пӑхха, Ухӑљван ҫине 42 пӑт ыраш ҫеҫ хунӑ. Ҫпритунпа Ухӑљвана танлаштарсан темле вӑрҫӑн ҫав сире.

Ухӑљван мунҕи те Ҫпритун Мирунҕӑ пӳртӗнҕен темиҫе хут аванрах вӗт. Классене уйӑрма пӗлес пулаҭ. Йеплеха есӗр ҫакна курман?—Ҕӑн малтан ҫакна курас пулаҭ. Ҫакӑнта ӗнтӗ сирӗн ҕӑн пысӑк ҫитменлӗх.

Малттин пур комиҫҫи ҕленӗсем ҫине те тишкӗрсе пӑхса тухрӗ.

Кулине Малттине хирӗҫ темӗскер каласшӑн пулҕӗ те, анҕах шарламарӗ. Ҕӗлхе вӗҫне ҫитнӗ сӑмахне калла ҫӑтрӗ. «Йепле унӑн пуҫӗ хытӑ ӗҫлет, йалта виҫӗ ҫул хушши пурӑнман пулсан та, веҫех пӗлсе тӑраҭ вӗт. Вот пуҫ!.. Ӑҫта епӗр, пурӑнатпӑр выљӑхсем пек. Йепле йуратас мар тетӗнха ӑна?». Ҫавӑнтах ун пуҫӗнҕи шухӑшсем Марйепе тавлашни ҫинҕен астуса илҕӗҫ...

— Ухӑљван ҫине мӗн ҕухлӗ?

— Хурасха пӗр икҫӗрӗшне, терӗ Паљук.

— Сахал! мӗн вӑл?—персе йаҕӗ Саљук.—Хурастӑк хурас справетливӑ.

— Правĕђнă!—тĕртсе хуђĕ Кĕçтук.

Кулине нумайђђен иккеленсе тăђĕ. Ђăтаймарĕ... Веçех вăл каласа пађĕ.

Вите умĕнђе икĕ кун икĕ стрăм кунĕпе ĕçленине, пухуран Çĕрĕк ђĕнсе кăларнă хыççăн Ухăљванăн йăпатса каланă сăмахĕсене, пурин çинђен те веçех уçса каласа пађĕ. Йулашкинђен:

— Тархасшăн куп çинђен никама та ан калăр, епĕ каланине пĕлсен, вĕсем мана çаксах вĕлереç,—терĕ.

— Нимĕнрен те хăраса тăмалли çук, тăшманпа куçа-куçăн тăрса кĕрешесрен пăрăнмалла мар епĕр. Ну, кун çинђен Кулине びаларĕ тесе калаçса çӳреме те кирлĕ мар.

— Правĕљнă.

— Ара, кам калаçса çӳреме пултаратăха?

— Çук. Çакăнтах пĕттĕр вăл.

Тĕрли тĕрлĕн каласа Кулинене лăплантарђĕç.

Пер Паљук çеç, нимĕн ђĕнмесĕр ларнăскер, йулашкинђен сăмах хушрĕ:

— Ху куçупа курман вĕт есĕ. Çапах та ун çинђен кунта каласа паран? Иван Иванђă кайран хăна сута пама пултарат̆.

Паљук пĕрре Малттин çине, тепре Кулине çине пăхса илђĕ. Малттин Паљука хирĕç çийĕнђех тавăрђĕ:

— Вăл сута панинђенех хăрамалли çук. Ниђево-о!

— Ара, кайса каласа парас тетнем çав Ухăљвана?— хар çыпăçрĕ Кĕркуç.—Пуçу тӳрĕ ларса çӳретĕр тетĕн-тĕк шăлна шартах çырт.

Кĕркуçпа Паљук çил-тăман кăларсайама пуçларĕç, анђах Малттин вĕсене тытса ђарђĕ.

— Пăрахăрха çав кулак çинђен тавлашма. Унсăрăн та ĕç нумай. Ак, Каван, мĕн ђухлĕ хурар ун çине?—терĕ Малттин, арпашăнса кайнă çӳçсене хыçалалла сăтăрса. Хăй йатсем çырнă хут çине шăтарас пек тинкерсе пăхрĕ. Ухăђвана ытти пуйансемпе тавлаштарса виçрĕ.

— Икçĕр пăт сахал,—терĕ Кулине.

— Хурас ун çине пилĕк çĕр пăт.

— Хурас.

— Ун ђухлĕ кирлĕ ĕнтĕ.

Пур комиççи ђленĕсем те Малттин сăмахĕпе килĕшрĕç. Пĕр Паљук çеç нимĕн те шарламарĕ.

— Ну, Пађук, есĕ мĕнле пăхатăн?—Малттин хăйĕн виђкĕн куçĕсемпе претçетаттĕл çине сăнаса пăхрĕ.

— Ара, епĕ комиççи ђленĕ мар вĕт. Вăл—сирĕн ĕç, епĕ хам сăмаха каларăм,—терĕ вăл, никам çине те пăхмасăр.

— Кунта, пĕђĕк ађа пек, вăл сирĕн ĕç тесе ларни пĕрте килĕшӳллĕ йапала мар. Йапалана сивĕ тăнпуçпа виçсе пăхма вĕренес пулаť. Кун пек пысăк ĕçре çатăртатса, йе пĕр-пĕринпе урлă пулсан ĕç тума май çук. Йешĕл епĕр йăнăшатпăр тăк,—кала: ак çак ырăнта, çав ыйту тăрăх йăнăш тăватăр те; вот вара вăл коллективлă ĕçлени пулаť...

Малттинăн вĕри сăмахĕсем Паљук çумне çилĕмпе çыпăçтарнă пек çыпăçрĕç. Паљук Малттинăн нихăш сăмахне те хирĕç ђакалама май çуккине курђĕ.

— Вăл кулак, епĕ ăна нихăçан та хӳтлеме тăрăшман,—терĕ Паљук.

## 10. Виççĕрен пĕр тĕвĕ.

НИМĔН çинђе те тĕплĕн ђаранса тăма пĕлмерĕ вăл. Пуçĕ те ыратнă пек. Çав хушăрах Сађук арăмĕ çинђен шутлама пуçларĕ. Иккĕмĕш кун ĕнтĕ урăх çын патĕнђе. Мĕншĕнха вăл апла ман çийе сиввĕн пăхрĕ? Мĕншĕн?.. Шухăшларĕ. Анђах пуçĕнђе шĕвĕрленме пуçланă ыйтусене хирĕç тĕплĕн таварса каласа параймарĕ.

— Кĕвĕçмест пулĕ вĕт?

— Мĕншĕнха...

Утса пынă çĕртех хăй тĕллĕн сасăпа кулса йађĕ. Вăрман хĕррине пырса çитрĕ. Уçă. Сывлама лайăх.

Армак-ђармак йумансем айĕнђи тĕттĕм, тискер ђăтлăха пĕр пĕђĕкçеççĕ сукмак кĕрсе çухалать. Унăн икĕ хĕррипе йешĕл куракссем ђерђенкĕн хунаса ӳснĕ. Çултан кăшт шаларах кивĕ тумкатасем çине сип-симĕс çăра мăк тапса тухнă. Нӳхрепри пек сулхăн. Сывлăш та хăйне йевĕрлĕ расна, кĕпер айĕнђи пек сӳренлĕ.

Вăрман ăшĕнђе ђĕрне вĕççĕн пусса утакан Кулине çӳçеннĕ пек пулђĕ.

— Хăрамастăп пулĕ вĕт?

— Çук, мĕнтен?

Temĕншĕн иккĕленҫĕ ун ҫĕри.

Тăвăр, пушăт касма кĕрекенсем хывнă сукмак ҫул ҫинҫе урлă-пирлĕ выртакан йывăҫ тымарсем ун куҫне ҫула пўлме тухса выртнă хура ҫĕленсем пек курăнса карĕҫĕ. Урисене ҫўлерех ҫĕклесе пусса тымарсем урлă каҫса малалла утрĕ.

Таҫта айакра куккук сасси илтĕнҫĕ. Кулине ăна утма ҫарăнса итлерĕ.

— Ко-кооок! тата ман миҫе ҫул нушаланмаллаха?!

Кăшкăрасси килҫĕ ун. Ҫав хушăрах, Кулинерен инҫех те мар темĕнскер шартлатрĕ. Кулине сывлама ҫарăнса йĕри-тавра сăнаса пăхрĕ. Анҫах вăл хăйĕн ҫĕри шакканисĕр пуҫне урăх нимĕн сас-ҫĕв те илтмерĕ.

Тискер. Ҫăтлăх. Ав ҫўлтен персе аннă хĕвелĕн пĕр хĕлхемĕ турат хушшине хĕсĕннĕ. Пуҫне йĕри-тавра авкалантарса выҫатать. Ăна та ҫак тĕттĕм хăрушă ҫăтлăх кăмăлне ҫыпăҫмасть пулмалла.

— Калла ҫаврăнас? Вăрман тавра ҫаврăнса кайас луҫҫă. Кам мана кунта кĕме хушрĕха?—Ҫапах та Кулинен урасем малалла утрĕҫ...

Симĕс тумката хĕррине, кĕҫе пек сарăннă мăк ҫине шурă кăмпа шăтса тухнă. Тен вăл тахҫантанпах татса усă курасса кĕтсе ларнă.

Кулине ăна ҫава хуҫăкĕнҫен тунă виҫкĕн ҫĕҫҫипе тирпейлĕ касса илсе пĕҫĕкçĕ пурак ҫине хуҫĕ...

Пĕҫĕкçĕ уҫланка тухрĕ. Унтан айакка ҫеремлĕ ҫул таҫта тăсăлать. Вăрман леш йенҫен ҫăпăркка шартлаттарнине илтсен Кулине лăпланҫĕ.

Кулинен йурласси килҫĕ. Йурларĕ вăл уҫă ҫинҫе йанраклă сассипе.

Хурланса асӑнатӑп еп сана,
Ӑҫташи ес, манӑн ђунӑм?
Хӑш вырӑнта?..
Сарӑ ука пек ҫеҫкесемӗр
Ма-хе пӑхатӑр есӗр апла?
Ан хӑрӑр, шутламастӑп еп сирӗн туратра,
Курмӑпӑр мар, курӑпӑр,
Анђах хӑҫан пуласси паллӑ мар...

* * *

— Йуратнӑ ђунӑм! Мӗн калам, мӗнпе лӑплантарам хамӑн вут пек вӗресе тӑракан ђӗреме. Йалан, пӗрмайах ӗмӗтсем малта ђупаҫҫӗ. Мӗн пулӗђђӗши вӗсем пулмасан?—Ҫук, ун ҫинђен шутлама та хӑрамалла. Ах, ђунӑм, Кулине, мӗн каласа мӗнпе шантарам епӗ сана. Йепле халӗ манӑн ђӗре салхуллӑ.

Мӗншӗн капла? Мӗншӗн? Тен, кулӑшла? Ан тив, кулђђӑр. Тӗнђере нумай кулакансем, йӗрекенсем те сахал мар. Ак халђ ман хамӑн ђӗре хамран кулать.

Намӑса пӗл, мӗн тӑватӑн есӗ? Килӗшмен йапала вӑл.

Ҫу-ук, ҫук. Есӗ мана нихӑҫан та ӑнланасшӑн мар. Манӑн ыратакан ђӗрем йаланах ӑшӑ ҫанталӑкпа тулнӑ. Ҫавӑншӑнах епӗ хавассӑн кӗрешетӗп те.

Нумайӗшӗ манран кулаҫҫӗ пулас; ан тив, кулђђӑрах.

Кулине, епӗ сана пӗтӗм ӑшђиккӗмпе йурататӑп. Итле, шӑн есӗ манӑн ђӗререн сӑрхӑнакан ђухӑн сӑмахсене. Тем парӑттӑм вӑйлӑ шантаракан сӑмахсем шыраса тупсан. Ҫу-ук. Сӑмах ҫук вӗт...

Уҫланкӑн тепӗр вӗҫӗнђе ларакан Упађа Кӗҫтук

хăйне хăй калаçса тăнине курђĕ. Тĕлĕнсе кайса пăхса тăђĕ вăл.

— Шалккă ађана. Йепле вăл хăйне хăй мурит тăваť. Хĕрарăмшăн çав терийех çунмăн ĕнтĕ.—Ђĕлĕмне тивертсе вăл кăшт кулнă пек пулђĕ.

Упађа Кĕçтука ђĕнсе илес терĕ, анђах ђĕнмерĕ. Çурăм хыçĕнђи хурама йывăç хуппинђен тунă кушилне тӳрлеткелесе кĕтӳ тавра çаврăнма утрĕ.

Кĕçтук хулпуççинђи ђăпăрккине те çĕре пăрахма маннă. Уйхир сăвăçĕн ђĕри таçта вĕçет. Пĕрре çӳлее, тепре айала йарăнса анса хумханаť.

— Ах, Кулине, йулташăм, мĕншĕн есĕ кунта марши? Икĕ алла пĕр ĕç. Маха епĕр пĕрле мар. Урапасем иксĕмĕрĕн те пĕр май, çулсем те пĕрлех пулмалла. Йепле аван... Мĕншĕнха епĕ сана ђĕреме уçса калаймастăп.

Айакран çын сасси илтĕнсен Кĕçтук сывлăшне пусарса итлесе тăђĕ.

— Ухуук!...

— Кууккуук!...

Шăппăн ларакан вăрман тепĕр хут йанраса ӳçă çепĕç сасса таçта илсе кайрĕ. Кĕçтук сулхăн вăрман ађашшăн йăпаннине курсан, ăна тытса ђарасшăн пулђĕ. Анђах сасă урăх илтĕнмерĕ.

— Палланă сасă? Камши ку? Ниушлĕ Кулине? Кĕçтукăн ђĕри тата та хытăрах сиксе тапма пуçларĕ.—Кулине!!—тесе хытă кăшкăрасшăн пулђĕ вăл.

Темĕскер ăна тытса ђарђĕ. Нимĕн тума аптранипе ури айĕнђе сарăлса ларакан серте çулçисене татса илсе вĕри тути патне çывхартрĕ.

Кĕçтукăн урисем сасă илтĕннĕ йенеллех утма

пуçларĕç. Ăçта утатăп епĕ? Мĕншĕн? Хăй çавах утаť. Ун пуç тăрринђе тенĕ пекех хăрнă йывăç турађĕ шăлтлатса татăлса персе анђĕ. Кĕçтук ăна та асăрхамарĕ. Малалла хыпаланса утрĕ.

* * *

Кулине, сайра хутран вăрмана çÿренĕскер, пайан тепле кăмпана килнĕ. Пĕђђен вăл. Пĕђĕкçĕ пуракĕнђе кăмпи те иккĕ çеç. Хаљ вăл мĕншĕн вăрмана килнине те веçех манса кайнă. Симĕс пурçăн пек йăлтăркка мăкпа витĕннĕ кивĕ тумката çине ларнă вăл.

Шухăшсем пĕрмайах йухаççĕ, анђах пĕрин те вĕçĕ çук. Такам ун хăлхи патĕнђе хуллен пăшăлтатса: „Епе те сана йурататăп“ тесе каланăн туйăнђĕ. Пĕђĕкçĕрех, тăпăл-тăпăл тутисем кăшт пĕрĕнђĕç, шывланнă куçĕсем хупăнђĕç. Кулине, питне ђĕрçиттипе хупласа, ĕсĕклесе йĕме пуçларĕ.

Вăрман салхуллă кăшăртатса тайкаланђĕ. Типĕ туратсем тăкăртатса калаçса илђĕç. Ђăлтлатса хуçăлса ÿкекеннисем те пулђĕç. Áвăс çулçисем ђĕпĕлтетрĕçĕ.

Кулине вĕсене илтмерĕ...

Ун тăлăх хурлăхлă ђĕри йунпа çăвăнаť. Питне çăваť вăл вĕри куççуллипе...

Кĕçтук нумайђђен ђарăнса итленĕ хыççăн Кулине йĕнĕ сасса илтсе, шурлăх вырăнран Кулине патнелле васкаса утрĕ.

Палларĕ.

Пĕр вырăнта хытса тăђĕ.

— Кулине. Ма есĕ капла?

Кӗҫтук ђӗтрекен сассине пусарса, пысӑк вӑйлӑ аллисемпе, Кулинен пуҫне ҫӗклерӗ.

Кулине вӑтанђӗ пулас, пуҫне тата та айалалла пытарасшӑн пулса ик аллипе хупласа тытнӑ питне хӑйӗн ђӗрҫи ҫине хуђӗ.

Кӗҫтук ун ҫумне ларса, пысӑк, ађашлама вӗренмен аллипе Кулинен ҫурӑмӗнђен кӑп-кӑп савса йӑпатрӗ.

— Маха есӗ капла салхуллӑ? Кала, хам пулӑшӑп. Хам. Ну?...

Кулине ҫӑвар та уҫса ђӗнеймерӗ.

Нимӗн тума аптӑранӑ Кӗҫтукӑн ђӗрине темӗскер ӗмсе ыраттарать. Вӑл Кулинене ҫав тери ҫӑмӑллатасшӑн. Анђах вӑл нимӗн тума та пӗлмест. Кулине ун йуратнӑ тантӑшӗ. Ҫавӑнпа унӑн пуҫӗнђи пӗртен пӗр шухӑшӗ те Кулинен ыраттаракан суранне ђӗртессинђе ҫеҫ.

— Мӗншӗн?... Кам сана ҫак тери кӳрентерђӗ?

— Ахаљ вӑл...

— Кала. Халех саншӑн пуҫа хума хатӗр. Епӗ сана никама та мӑшкӑлаттарас ҫук. Тасалӑхшӑн пайан кун вилме хавас!—Кӗҫтук аллине ђӑмӑртаса ҫӳлелле ҫӗклерӗ.

Кулине пуҫне ҫӗклесе пуҫӗнђи йавлӑкне тӳрлетрӗ. Кӗмӗл пек ҫӑлтӑркка куҫҫуљ витӗр Кӗҫтук ҫине пӑхрӗ. Кӗҫтукпа Кулинен куҫӗсем тепле тӗлме-тӗл пулђӗҫӗ, вӗсем нумай шухӑшсем ҫинђен каларӗҫ.

— Ах, Кӗҫтук, мӗншӗн епӗр капла телейсӗр ҫуралнӑши?

— Ҫуук! Кулине, телейе епӗр хамӑр тӑватпӑр. Хамӑртан вӑл килет. Ӗмӗтсене манас пулмасть. Ҫам-

рăкха епĕр. Пурăнăç та анђах курма пуçлатпăр. Кĕрешмен халĕ. Ман çав тери хлаçлансах кĕрешес килет.

— Кампа?...

— Кĕрешмеллисем нумай!

Кулине татах пуçне ђиксе темĕскер çинђен салхуллăн шутлама пуçларĕ.

— Кулине, калаха, мĕн патăмăрха санпа епĕр револђутсишĕн? Çук вĕт, терĕ Кĕçтук, Кулинен йывăрланма пуçланă пуçне йăтса.

Кулине итлерĕ.

— Халĕ вĕт совет влаçĕ,—калаçма пуçларĕ Кĕçтук. Ак халĕ анђах астурăм, итле.

— Мĕн çинђен?

— Акă, итле, сана каласа парам.

Пĕркун, райкомолăн иртнĕ пленумне кайсан, пĕр ватă комунис, Мăрси йатлă вăл, акă мĕн йапала çинђен пире каласа пађĕ. Тĕлĕнсе кайăн...

— Калаха еппин, кала,—терĕ Кулине. Аллисене хире-хирĕç хурса ђĕрççиттипе ђĕркерĕ.

— Куĕç шахтăра пулнă. Пĕтĕм Тонпаса шуррисем çавăрса илнĕ вăхăтра пулнă вăл. Тонпас мĕн иккенне пĕлетнеха ес?

— Çук.

— Кăнтăр йенђи çĕр кăмрăк нумай кăларакан вырăна калаççĕ. Ну вот, çав вырăна касаксем çавăрса илнĕ вăхăтра Мăрси хăй те çавăнта пулнă.

Мăрсипе пĕрле пĕр касармара унăн йулташĕ пурăннă. Ăна Ваçли тенĕ. Ваçлин савни пулнă тет. Вăл Ленă йатлă пулнă.

Ваçлипе Мăрси пĕрмайах ирсĕрлĕхпе кĕрешме

тăрăшнă. Çавăнпа та вĕсем çамрăклах комуниса çырăннă. Вĕсем, Мăрсипе Ваçли, çамрăк ђух, комуниса çырăнађђен, шахтă хуçине сийен кўрес-шĕн пулнă.

Пĕрре çапла кĕрхи тĕттĕм каç пур шахта çутатакан лампăсене те ђул муклашкипе ыватса персе çĕмĕрсе çўренĕ. Пысăк, çутă çунакан хунарсене ватса çўренĕ хушăра, вĕсене кăртавуйсем хыçалтан йĕрлесе хăваласа çитсе тытнă пулнă.

Кăртавуйсем Ваçлипе Мăрсине тытсанах хытă ислетнĕ. Унтан вара хупма илсе кайнă. Ленăсем пурăнакан касăрмасем умне çитсен Ваççили тийекенни:

— Ленă, сывă пул!—тесе кăшкăрђĕ, тет. Унтан ăна пĕр кăртавуйĕ пăшал приклађĕпе çапса пуçне çурса пăрахаť. Ваçли йăванса кайсан Мăрси теп-рин хĕçне йĕннинђен туртса кăларма тапăннă пулнă, анђах ун ик аллине те икĕ кртавуй хыçалалла пăрса хытарђĕç, тет.

Çапла шавласа тăнă хушăра Ваçлин савни персе çитсе пĕр кăртавуйне пуç урлă тимĕр кайлăпа хунă.

Кăртавуй çавăнтах вилсе те кайаť. Тепĕр кăртавуйĕ свистун пана хушăра Мăрси те тарса хăтăлаť.

— А, Ленă?—тесе тĕпђерĕ Кулине.

— Ленăна вара илсе кайса тĕрмене хупнă. Ну вот малалла итле.

Кулине хăвăрт-хăвăрт пуçĕпђи йавлăкне тўрлетсе, Кĕçтук çумне тайăнса ларнине те асăрхамарĕ.

Кĕçтук сăмахне малалла тăсрĕ.

— Сут пулђĕ тет. Есĕ пĕлетĕн ĕнтĕ кăртавуйа вĕлернĕшĕн ĕлĕк мĕнле йывăр сут тума пултарнине.

Çав сута Мăрси те кайнă пулнă. Сутйасем мĕнле кăна тĕпђемеççĕ тет, çапах та Ленă пĕрин çинђен те кăтартса паман. Йулашкинђен вара хăй те хытă çаптарнă. Сутйа уншĕн Ленăна сăмах каламалла мар туса лартнă пулнă. Çапах та вăл хăйĕн йулашки сăмаххисене хытă каланă.

— Хут те мĕн тăвăр, сиртен хăрамастăп,—тенĕ.— Сахал мар есĕр лайăх çынсене пĕтертĕр, вилсен те хам тантăшшăн, савнишĕн вилетĕп, тесе каларĕ тет.

— Сут мĕн тунăши ăна?—тесе васкаса ыйтрĕ Кулине, Кĕçтукăн аллине ђăмăртаса.

— Ĕмĕрлĕхе асаплă ĕçе йамалла тунă, тет.

Кĕçтук калаçма ђарăнђĕ. Кулине те Кĕçтукăн вут пек пĕçерекен аллине ĕçерсе, урисем патĕнђе выртакан хăрнă çатракана илсе хуçкаларĕ.

— Вот мĕнле вĕсем кĕрешнĕ!.. Пирĕн пекех çамрăк пулнă вĕт. Йепле вĕсем пĕр-пĕриншĕн çапăçса вилнĕ. Аван вĕт?

— Манăн та çапла савнипе пĕрле вилесђĕ. Йепле илемлĕ?—терĕ Кулине вăрăммăн сывласа.

— Таа... Аван...

Калăн, Кулинепе Кĕçтук мĕн пур пек сăмахсене кăларса пĕтернĕ Нумайђђен пĕр-пĕринпе сăмах хушмасăр ларђĕç.

Кĕçтукăн тахçанхи шухăшсем йăшăлтатма пуçларĕç: „Калас. Çиленмĕши?“—иккĕленђĕ вăл.

— Кулине, епĕ сана пĕр сăмах каласшăнђђĕ?— терĕ хĕрелсе кайса Кĕçтук.

— Ата кала, итлетĕп.

— Мĕншĕнха епĕр те Ваçлипе Ленă пек пулма

пултараймастпăр? Епĕ ун çинђен сана такçантампах каласшăнђђĕ. Ак халĕ тин темĕскерле калама хăйрăм.

Кулине Кĕçтука хирĕç нимĕн те ђĕнмерĕ... Пуçне çĕрелле ђиксе шывланнă куçне йавлăк вĕçпе шăлса илђĕ.

— Мĕншĕн? Ман сăмахсем кӳрентерђĕçĕ пулсан, тархасшăн каçар.

— Çук, уншăн мар.

— Кулине, кала, манран ан пытар.

— Ђăнах, çапла ĕнтĕ.



Кулине пĕђĕкçĕ ађа пек пуçне Кĕçтукăн ђĕрçи çине хурса ĕсĕклесех йĕме пуçларĕ.

Кĕçтук нимĕн тума аптраса татах Кулинен пуçĕнђен савса ађашларĕ. Таврари лăпкă çанталăка тишкĕрнĕ пек йĕритавра çаврăнса пăхрĕ.

Пĕр кас çил кашласа килђĕ. Ђăтлăхри шешкĕ, пилеш, çĕмĕрт, палан йывăçсем пилĕксене лаш тайса, ђӳхенсе, вăйлă çиле парăнса пуççапрĕç. Типсе сăрхайнă йуман çулçисем, кăштăртатса, вырăнтан вырăна сиккелесе, вĕçрĕç.

Кĕçтукшĕн пурăнăç çав тери киђемĕн туйăнђĕ. Ђĕри ыратнине вăл тӳсеймерĕ.

— Кулине, кала, манран нимĕн те пытармалли çук.

— Çук, епĕ санăн мăшăру пулма пултараймастăп.

Кулинен сӑмахсем анҫах вӗрекен шыв пек ӑшҫиккине пӗҫертсе тухрӗҫ.

— Йепле епӗ йӑнӑшрӑм. Ӑҫта есӗр манӑн тутлӑран та тутлӑ ӗмӗтсем. Мӗншӗнха вӑл пурнӑҫ капла, мӗншӗн?.. Мӗн ҫухлӗ вӑл мана хӑратрӗ. Ҫак сӑмахсене илтесренех хӑраса ҫак вӑхӑта ҫитрӗм вӗт. Вот халӗ?...

Кӗҫтук, ан айӑпла, тиркесе мар. Ун ҫинҫен ан та шухӑшла. Айӑп хамра. Ҫук!—хамра та мар. Мӑшкӑл пултӑм вӗт. Кам кулмас пирӗн пек тӑлӑхран?.. Кулине йулашки сӑмахсене каласа пӗтерейместӗрех ҫӑтрӗ.

Йӑвӑр хуйхӑ унӑн ҫамрӑк пуҫӗ ҫине килсе пусӑрӑнҫӗ. Ҫамрӑк саркайӑк пек сӑваламалла Кулинен куҫҫуллисем ҫӗрҫи ҫине шултӑран тӑмларӗҫ...

Кӗҫтукӑн ҫемҫе ҫӗри хурланҫӗ. Темле йывӑррӑн тӑвӑлланса килҫӗ. Анҫах вӑл ҫак самантра нимӗнле сӑмах та калаймарӗ.

Ун ӑшҫикне вут хыпса илҫӗ.

— Кам!?..

— Ухӑлҫван аҫи,—терӗ Кулине.

— Кенӑ!?

Асап курнӑ хӗр пуҫне айаларах антарса Кенӑ иккенне пӗлтерҫӗ.

Кулине сывлӑш ҫавӑрсан, йепле пулса иртни ҫинҫен веҫех Кӗҫтука каласа паҫӗ... Кӗҫтук тата та темиҫе хут ҫӑрсӑрланса кайрӗ.

Кулинен йӑваш ҫӗри тасине вӑл ӑнланҫӗ.

— Ах, вот мӗн вӑл пурнӑҫ!? Мӗн кӑна курмастӑн ҫак ҫут тӗнҫере!? Мӗн ҫухлӗ кӗрешмелли фронт! Кулине, кала тӗрӗсне, кала, — Кӗҫтук аллисемпе

Кулинен ик хулпуççинђен тытса, кĕрешетпĕри пур ирсĕрлĕхсемпе те пĕрле, йунашар, урасене пĕр харăс пусса?!

— Кĕрешетпĕр!—терĕ Кулине. Пуçне хыçалалла ывăтса, вăл та çилпе кушăхса кайнă аллисемпе Кĕç-тукăн ик хулĕнђен тытса уртăннă пек пулђĕ.

— Кулине, есĕ манăни?

— Санăн.

— Епĕ те санăн. Тĕрĕси?

— Çапла,—терĕ Кулйне.

Çавăнтах вăрáм арпашса кайнă çўçсене хăвăрт-хăвăрт тўрлетсе пуçĕнђи тутăрне хытарђĕ.

Икĕ хăватлă тасалăхпа сывлакан ўпкесем пĕр пек çăмăллăн сывларĕç...

Тĕрлĕ тĕслĕ хăвасенђен карăннă симĕс ђаршав ăшĕнђен ватă Упађа хуллен утса тухрĕ.

— Ах, мушелниксем, мĕн тăватăр есĕр?—утса пыђĕ Упађа вĕсем патне.

— Куртăм, куртăм,—терĕ вăл.

— Упађа тете, сана çĕнĕ хаваслă хыпар калам! Итле, вăрман, есĕ те, уйхир, йуратнă йанаварсем, пурсăр та. Ташла, вăрман, ташла, çеçен хир, Упа-ђа тете, есĕ те...—Хăлаçланђĕ Кĕçтук, вуткăвар тăкакан сăвăç пек.

Упађа тĕлĕнсе кайса хулпуççи çине çакнă ђă-пăрккине ўкерђĕ. Çурăм хыçĕнђи кушилне хăвăрттăн васкаса темшĕн хыврĕ. Пĕрре кулса, тепре тĕлĕнсе кайса Упађа нимĕн калама аптрарĕ.

— Мĕн, мĕн пулнă? Калăр ђасрах.

— Çак çут çанталăк хушшинђе пайан пирĕн туй.

— Хавас, çав тери хавас! Пехил сире, ађамсем,

Упаҫа Кулинепе Кĕçтука икĕ аллипе ыталаса илсе аҫашларĕ...

Акă пысăк усланкă. Хĕвел сарă хĕр çине ăшшăн пăхса йăл кулса йаҫĕ. Авани? Тухрăрим? Кулинепе Кĕçтук хĕпĕртесе вăрман умĕнҫе сарăлса апатланакан кĕтӳ патне каҫака пек çăмăллăн сиккелесе ҫупрĕçĕ.

Кулинен пиҫĕ çинҫе çутă хĕвел выҫаť. Унăн пурнăçĕ халĕ паҫă урăх. Халĕ вăл кăҫăк туртакан хăмăшлă авăр хĕрринҫен инçе, таçта инçетре... Йывăр, хурлăхлă Кулинене пусарса миçе хутҫен йурламан хăйĕн çĕнтерӳ йуррине çак илемлĕ çанталăк. Çак тискер ҫăтлăхри ансăр çул ун пурнăç çулех пулнă çав. Ҫăнах, Кулине пурнăçра та çак çулпах утнă. Ей, йурĕ, ĕлĕкхине асăнар мар. Кулине халĕ савăнăçлă..

Ват Упаҫа аҫапăҫа йенҫен те телейсĕр. Пĕртен пĕр аҫине те пилĕк çул кайалла амăш хыçĕнҫенех сивĕ масара леçмелле пулнă. Тепре авлансан кам пырĕ? Ватă, „пуйанлăх" ик виç тĕлтен „ишĕлет". Пӳрт ăшҫиккинҫе нимĕн те çук, хавшаклă. Кам шеллĕ ун пек çынна? Тупăннăҫҫĕ пĕрре хăнҫăк куçлă, ухсах уралла ыйткалакан, вăл та курăнмарĕ. Ик уйăхранах: „Çын çинҫе луҫҫă, пĕçерместĕн, тумастăн, халăх выçă вĕлермĕха" тесе кăнтăр варринҫех Упаҫа кĕтӳре ҫухне тухса тарнă. Пĕҫҫен пурăнма калама те çук йывăр. Упаҫан хăйĕн пайаныран ишĕлес пек тĕннине пĕҫҫен пĕрте кĕресси килмен. Кĕтсе тăракан çук, пӳртре сивĕ, çĕмрĕк ҫӳреҫерен çил шăхăраť. Çавăнпа та килĕрен киле выртса çӳресси уншăн авантарах пек. Кĕçтукпа Ку-

лине татăклă сăмах татни çинђен каласа парсан, Упаңа симĕсленсе кайнă çăпати пуçĕ çине пăхса тарăн шухăша кайрĕ.

Нумай йĕрпе йĕрленнĕ пиђĕ çине вĕри куççуллисем йĕр хыврĕç. Нимĕн калама аптрарĕ куран, анђах темĕскер мăкăртатса Кулинепе Кĕçтук хыççăн утрĕ...

Çакăнтан вара Кулине ват Упаңан кинĕ пекех туйăнђĕ. Халĕ тĕнђере Упаңа пек телейлĕ çын та çукках пулђ...

## 11. Епĕ йăнăшма пуçланă.

Вăйлă çумăр çуни виçĕ кун иртрĕ. Пĕђĕкçĕ çырмасенђе сăртсем çинђен йухса аннă хура çĕр сĕлтĕленсе йулнă.

Хресђенсен ђĕрисене йăпатакан кĕраки калђи хĕрлĕ тунисене тапса кăларнă. Ăшă... Кас-кас лăпкă çил килсе сĕртĕнет. Кăвак, шупка-ђакăр пĕлĕт килсе сĕртĕнет. Кăвак, шупка-ђакăр пĕлĕт çинђен пĕтĕм çĕр çаврашкине ăшăтакан планеттăн амăшĕ— хĕвел çĕр çинђи ђĕрĕ ђунсене, курăк-çимĕçсене ађашлаť.

Сывлăш уçă... Çумăр хыççăн тĕрлĕ тĕслĕ курăксем, хĕвел ăшшипелен ађашланса кислоротпа сывлаççĕ.

Уйри ĕç пĕтнĕпе пĕрех, анђах халăх ĕççĕр мар. Ĕçĕн хăвăртлăхĕ темĕскертен те пысăк. Ĕç çине ĕç тухса пыраť. Пурне те вăхăтра тумалла, кашни ĕçĕн хăйĕн вăхăђĕ пур... Васкамалла.

Ыраш кĕлтине кӳрсе пĕтернĕ. Анкартинђе çапса пĕтереймен çĕнĕ капансем, улăм ураписем ĕçхресђен ђĕрине йăпатса сарăлса лараççĕ. Итемсем çинђе ĕç йурри шавлаť... Çавăнтах тарланă çын çурăмсене кантарма мунђа хутса йанă. Хăшпĕрисем паранкă кăларма тытăннă... Йывăç улмисем шап-шурă та хĕп хĕрлĕн çурăлас пек ĕлкĕрнĕ. Купăста, кишĕр,

çарăк-кăшман, пурте çĕр кăкăрĕн сĕткенне ĕмсе тăртаннă.

Арçынни, хĕрарăмĕ, пурте ĕçре.

Ĕç! ĕç!—канмашкăн вăхăт та çук...

Урапа çинђе ларса пыракан Кĕркуç пайан канаŤ. Тапак тивертсе йађĕ те йĕри-тавра çанталăка ирĕккĕн, ўпке тулли сывласа савăнса пăхрĕ.

— Ах! мĕнле вăл пурăнăç илемлĕ!?.. Çакăнтах пурăнна, ĕçленĕ, ўснĕ, йеплеха епĕ ăна сăнаман?

Çанталăкăн ыррипе илемне тин курнă сын пек вăл хĕпĕрттет. Кĕркуçăн хытă кăшкăрса йурласа йарасси килђĕ. Анђах вăл йурламарĕ.

Нумайах та пулмасŤ, Мăн Хапăс йалĕнђе пĕр çамрăк комсомолĕс çакăнса вилнĕ, тенине илтнĕђђĕ вăл. Халĕ вăл тĕктăмаллах çакăн çинђен шутлама пуçларĕ.

— Мĕншĕнха епĕ кун çинђен шутлатăп?.

— Йеплеха çаксене курсах вилес пулаŤ!?—Кĕркуç çăварĕнђе сурђăкне çиленсе лаçлаттарса сурђĕ. Кĕркуç çырма пуçĕнђе ађапђасем кĕленђе сасси пек йанăранине илтрĕ. Хура тĕтĕм авкаланса сывлăшра ирĕлет. Ађасем вут хунă.

— Енесем çитерме килнĕ иккен.

Симĕс çыран хĕрринђе вăрăм çанăллă çĕтĕк сăкмансемпе лапăстатса, перкелешсе выљаççĕ.

Кĕркуç нумайђђен вĕсем çине хĕпĕртесе пăхса тăђĕ.

Унăн хăйĕн те пĕђĕкçĕ ађа пулса, вĕсемпе пĕрле паранкă пĕçерсе çийесси килсе кайрĕ.

— Çук, мĕн епĕ пустуйа ађаланатăпха. Ех, ђорт попперии!.. ўсĕр, мушĕт тен сиртен аван çынсемех пулĕçĕ.

Кĕркуçăн ђĕри туртса ыратнă пек пулђĕ.

Салхуллă шухăшсем унăн ик хулпуççи çине тийенме пуçларĕçĕ. Кĕркуç пуçне йăтăнса кĕрекен шухăшсене йăваланса варланнă лаша пек хăватлăн силленсе сирпĕтесшĕн.

Çук, ытла та тарăн пруснапа сухаланнă. Унăн уççăн сывлама йуратакан кăкăрĕ çинђе никçан йакалми йĕрсем йĕрленнĕ.

— Ах, çак шухăшсене! Канам-ха хуй пĕрре. Сывлам çак уçă паха сывлăша ўпке тулли.

Çук, ирĕксĕрлесех шухăшсем йăтăнса кĕреççĕ. Унăн ађа пулса çак çанталăк илемĕ хушшинђе нимĕн шутлама пĕлмесĕр выљаса çўрес émĕтсем çырма хĕрринђе тухакан тĕтĕм пек ирĕлсе саланђĕçĕ. Пĕр сăнсăпатне те пуçĕнђе тытса хăвараймарĕ.

Кĕркуçăн кулма пуçланă тути карттин çинђи пек хытрĕ.

Кайарахпа çамкисем хутланма пуçларĕçĕ. Куçхаршисем çарăлса сăмси çине пĕрĕнђĕç. Пулă пек выљама пуçланă ђĕрĕ куçĕсем ђĕркуççи тĕлĕнђе çĕтĕлнĕ тăла йĕмĕ çине пăхса хытрĕçĕ.

— Мĕншĕн кĕрешнĕ!?—тесе ыйтрĕ вăл темшĕн хăйĕнђен хăй:—за штоо?!—тепĕр хут вырăсла хушрĕ.

Кĕркуç такамран хирĕç тавăрса каласса кĕтнĕ пек ђарăнса итлерĕ.

Ăшă çил ун питне килсе сĕртĕнђĕ.

— Есĕ пирĕн керой, есĕ хăна ху шеллемесĕр, пĕр хăрамасăр çак уççăн сывлакан уйхиршĕн аллăна хĕçпăшал тытса кĕрешрĕн. Ăна таса ђĕреллĕ халђхи геройсем манмаççĕ

Есĕр кĕрешмен пулсан, калама та çук хаклă йуи

çырма пулса йухман пулсан, çакăн пек уççăн сывлама май пур уйхирте хура çăхансем çеç вĕçсе çўремеллетђĕ вĕт,—тесе ун хăлхинђен пăшăлтатнăн туйăнђĕ. Хăйпе хăй калаçат вăл.

— Ан пăшăлтат! Есĕ мантăн мана.

— Çуук! манман, ђимха, ђим, лайăхрах тавçăрса ил,—терĕ ун тепĕр хайар, хастарлă шухăшĕ.

Кĕркуç тарланă çамкине çиййĕнђи сăкман çанипе шăлса типĕтрĕ.

— Ну, мĕскер!?

— Хушăн анђах кĕрешрĕне есĕ?

— Пур мăшкăл пулса пурăннă çынсемшĕн те!

— Ђи малтан çакна манмалла мар.

— Епĕ хамăн пурăнăçа та улăштарас тесе кĕрешнĕ.

— Йулташ! — терĕ ун çав кĕрешекен шухăшах. Кĕркуç лăпланђĕ.

— Есĕ пуçласа йанă кĕрешў пĕтмен. Епĕ манма пуçланă куран. Кĕрешў халĕ вăйланнă çемĕн вăйланса пырат. Тăшман аманнă, анђах вăл вилмен. Манатнам есĕ: мĕнле пăхаççĕ сан çине Ухăђван пеккисем? Вĕсем вĕт пайан кун сана çакма хатĕр.

— Та-а! Тĕрĕс!?

— Асту, ан ман! Санăн ђаплă, хастарлă ĕçўсем, малашне тата та ђăрсăрланса хăватлă кĕрешмесен, пĕтĕмпех пĕтсе ларма пултараççĕ. Пуçланă ĕçĕн вĕçне тухманха. Нумай авăрланса кĕрешмелле. Халĕ пирĕн фронт кашни йалтах. кашни çуртрах

— Ах, мĕнле епĕ йăнăшма пуçланă?

— Çапла çав. Пурнăç улшăннине лайăх сăнаса пăхма пĕлес пулат. Веçех, веçех сăнаса пăх,— терĕ унăн ывăнма пĕлмен, хастарлă ђĕри.

— Ђăнах та пурнăç улшăнат̆. Епĕ хам вĕренме кайаймарăм пулсан та, мĕн ђухлĕ çын вĕренет. Мĕн ђухлĕ шкул. Савăтсем те нумай тăваççĕ, тесе çыраççĕ хаçатсем çинђе.

Кĕркуç пурăнăç улшăннине курат̆.

Анђах вăл хăйĕн пурăнăçне те улăштарасшăн. Кĕнеке çинђе çырнă пек тăвасшăн.

Хоссутарствă ăна пулăшат̆. Пур йенђен те љкоттăсем парат̆. Саккунсем çинђе те ун çинђен сахал мар вуланă. — Унта лайăх ăнланмалла каласа панă. краштăн вăрçинђе пулнă çынсене совет влаçĕ манмаст̆. Çапах та Кĕркуçăн пурăнăçĕ çăмăлланмаст̆. Çемйи ун пысăк. Виççĕн ĕçлемен çăварсем... Хăй пĕђђен...

Çилтăвăл пек пăтраннă шухăшсем тăрăлма пуçларĕç.

Кĕркуç лăпланђĕ, пуреткăн шутлама пуçларĕ.

— Пайтах çула çитрĕм. Вăтăр ултă çул вăтăр ултă кун хушши пек иртсе кайрĕ вĕт. Кам ĕçне мĕн ђухлĕ, мĕн ĕç ĕçлемен? Ăçта çитсе курмарăм? Пĕрмайах пурăнас тенĕ вĕт. Лайăх пурăнас килет. Укçине те тупнă, тупман мар. Çук, йалан çитмест.

Пӳрт лартас, терĕм. Виçĕ çул çурă шахтăра кăмрăк хăйпăтса мунђа пек пӳрт лартрăм. Пăлтăрпа кĕлет пекки те кĕтĕр-кетĕр çавăртăм.

Ăшă хӳтĕре ĕçлемесĕр ларсан никам та тăрантмаст̆. Ĕçлес пулат̆. Мĕнпе? Пирĕн хресђен пушă алăпа мĕн тума пултарат̆ха. Ак тата лаша илмелле пулђĕ. Ăна кӳлме хăмăт, урапа-çуна, ун ваљђи апатçимĕç те кирлĕ. Мĕн ђухлĕ хлуппут?

Ҭыхаран ӳстерҫе лаша туса ҫитертӗм, вӑл та пулин вилсе кайрӗ.

Арӑмпа та аптрамалла, ҫулсейрен аҕа тӑваҭ. Йӗпе ҫине сапа тенӗ пек, таҫтан тухаҭ. Сӗт теме тытӑнӗҫ. Ак ӗне кирлӗ пулҕӗ. Ӑҫтан, мӗнпе илес тетӗнха? Ҫук! Пулмасҭ... Вот пурӑнӑҫ. Тамӑк. Ех, ӗмӗтсем, ӑҫта есӗр манран таратӑрши? Хӑҫан тытӑпши сире хӑваласа?

Кӗркуҫ уҫӑ, тӑрӑ сывлӑша ӳпке тулли сывласа илнӗ хыҫҫӑн, ҕикаркка тивертсе йаҕӗ.

Тӗлӗрсе утса пыракан лашине хистерӗ.

Татах ӳн пуҫне тӗтӗм пек сирӗлнӗ тутлӑ ӗмӗтсем ҫӗнӗрен йавӑнса кӗме пуҫларӗҫ.

— Ҫамрӑк ҕух йепле йун вӗрет. Пӗтӗм тӗнҕене ҫаралӑнах ҫавӑрса илес пек. Ҫынсем пек пурнас килет. Ӑҫта Ухӑљван? Унтан пуйанраххисене те хӑваласа иртсе кайас пек.

Ҫак алӑсене шаннӑ вӗт...—ҫуркаланса ларнӑ хура аллисем ҫине йӗрӗнсе кулам пек туса пӑхрӗ.

Кӗркуҫӑн кулли тухмарӗ, ҫӑварне уҫрӗ пулсан та, пӗркеленме пуҫланӑ куҫӗсем кулмарӗҫ.

— Пӗҕӗкҫӗ ҫурт туса, ун йӗри тавра сат лартса, пахҕа ҫимӗҫ ӗрҕетсе тутӑ пурӑнӑҫ пуҫласа йарас, тенӗҕҕӗ. Ун пирки Наҫтукпа та сахал мар сӳтсе йавнӑ. Вара мӗн ватӑлса вилиҕҕенех шӑнкӑрҕсем пек ҕӗпӗллетсе, ӑшӑнса пурӑнас тесе шухӑшланӑҕҕӗ.

Имперализӑм вӑрҫи сиксе тухрӗ. Унта илсе кайрӗҫ. Икӗ ҫул хушши ахалех сулланса ҫӳремелле пулҕӗ. Мӗнле кӑна нуша курмарӑмӑрши?

— Камшӑн?!

Мӗншӗн ҫав тери тӑкӑнҕӗ?!

Ун çинђен ыйтма та йураман!!...

Арăм пĕђђен икĕ ађапа мĕн тума пултарнăха вăл? Ăна та йатламалли çук.

Вот Ухăљванран иртсе кай? Вăрçă вăхăтĕнђе вăл пушшех те пуйса кайнă.

Кĕркуç хăйне хăй калаçса нумай сÿтсе йаврĕ, анђах унăн ĕмĕтленнĕ ĕмĕђĕсем пĕрин хыççăн тепри ирĕлсе саланса пыђĕçĕ...

— Хăш йал хĕрлĕ опосĕ ку-у-у!?—тенĕ сасă Кĕркуçа йăвăр михĕсем çине пусарса лартнă шухăшĕсенђен вăратрĕ.

— Кипеккассин!..

— Миçепе?

— Утмăлпа! — терĕ Кĕркуç, çийелтен кăшт кулнă пек пулса.

Кĕркуç хăй мĕншĕн кулнине хăй те пĕлмерĕ.

Ăна хирĕç тĕл пулнă çынсем хĕвел пек ирĕлсе тăнине курсан, Кĕркуç, малтан асăрхаман пек, вĕçĕхĕрри курăнман лавсем çине кайалла çавăрăнса пăхрĕ.

— Та. утмăлпа!—тесе тепĕр хут кăшкăрса каларĕ.

Кĕркуçăн ђĕри Хусан панђе шуррисемпе çапăçнă ђухнехи пек хăватлă тапса илђĕ. Ун ђух та малти ретре ђăрсăрланса вилĕмрен хăрамасăр кĕрешнĕ, халĕ те вăл кайра мар.

— Вот пăх, йепле епĕр совеђа пулăшатпăр,—тесе калас патне çитрĕ тĕл пулнă çынсене Кĕркуç.

— Кам ĕçĕ ку, кам орканисатсиленĕ ку ĕçе?— Епĕр!—терĕ хăй ăшĕнђе. Калаçмарĕ.

— Есĕр ăçта уттаратăр!?

— Шахта-а!

— Шахтăра ěçлетрем!?

— Шахтăра!..

Ушкăнăн утса пыракан шахтǒрсем аслă çултан пăрăнса «Ирар ишак» сăрђě йенелле, йуман тымарě пек кукăркаланса выртакан сукмак тăрăх утрěçě...

Пěр çухрăма йахăн тăсăлнă хěрлě опос вырса пухнă çуртри пусси хушшине килсе кěђě.

Çанталăк лăпкă.

Тăрă хěвел çумăрпа саралса ларнă сěлě туратсем çинђе хăйěн перекетлě çутă шевлипе ђўхенсе выђаť.

Çуртри пусси таптанманха. Çемçе. Унта-кунта кайу йешěрме пуçланă. Кěркуç ăна курсан хěпěртет.

— Вот мěнле вăл пурăнăç, вěçěмсěр ўсесшěн. Анђах вырса пухнă тырра илсе кайасса та кěтмест вěт!

Кěркуç шăхăрса йурлама пуçларě...

Сăртсем, тарăн тăмлă çырмасемпе ђакаланнă ђăваш уйхирě, хěвелěн вěри пиђěпе пăсланса сывлаť.

Çапла вăл пурăнăç: кашни вăхăтра хăйне манер илем кўрет.

## 12. Шынасăр урапа.

ПĔР турат çинђен тепĕрин çине йăлтăркка хура кураксем вĕçе-вĕçе ўкеççĕ. Çерçисем йал тулашĕнђи татман симĕс кантăр анисем çинђе кĕтĕвĕн-кĕтĕвĕн ђĕвĕлтетсе шавлаççĕ.

Пăрçа ани çинђе купа туса шăтăк алгнă арлансем ђĕввĕн тăрса пăхаççĕ. Мĕн кăна çук... Анђах Кĕркуç ăна туймасť.

Виçĕ кун кайаллапа ђăпăртатса тăракан йăпăлка çул типме пуçланă. Шуратма сарнă пир тăрăх пек çутăлса выртаť. Хĕрлĕ тăмлă тарăн çырма патне йертсе пыђĕ вăл.

Кĕркуç лашине ђарђĕ. Ун хыççăн шавласа килекен хĕрлĕ опос та ђарăнђĕ.

— Мĕн пулнă?!.

— Пĕрерĕн-пĕрерĕн анас пулаť!—тесе кăшкăрђĕ Кĕркуç. Хăй лашине пуçĕнђен çавăтса, пысăк тип çырман тĕпне тĕпĕртеттерсе анса кайрĕ.

— Вăт ку ĕнтĕ ђăваш Капкасĕ. Халђ мĕнле улăхмалла ĕнтĕ! Ей! Машкă-ă, айта турт!

Машкă мĕн пур вăйне хурса тапаланђĕ. Йулашкинђен ђĕтрекен кайри урисем тĕренсе, малтисемпе ђĕркуçленсе ларђĕ. Çук, улăхтараймасť...

— Тавай ертелпе!—тесе кăшкăрђĕ пĕри, Кĕркуçăн тийенĕ лавне хыçалтан килсе тытса.

Çирĕм пăт тийенĕ лава кăткă пек сăрăнса илнĕ халăх, лаши мĕнĕпех, тĕртсе улăхтарђĕçĕ.

— Вăт çапла!

— Йепле вáл ерттел вăйлă!—теççĕ хăш пĕрисем

— Ђăнах, пĕђђен пулсан ку лавпа лашапырши татăлса кайма пултарaŤ,—тесе хуђĕ Кĕркуç та. Машкă кăшт çиленем пек пулђé. Унтан хĕрлĕ сăмси шăтăкĕсене сарса пăрахса сывларĕ. Кĕркуç сўсрен йавса тунă кутлăхне тўрлетсе лашине йăпатрĕ.

— Ей, Машшух-а-а! инçе йулмарĕ ĕнтĕ-ĕ!.

Нумай лавсене çапла йурласа пĕрлешўллĕ вăйпа хĕпĕртерĕç. Хăй вăйĕпех улăхакан лашасем те пулђĕç.

Тўрем вырăн. Çулăн ик айккипе йешĕл курăк кĕçе пек çыхланса ўкнĕ.

Аслă Кипекĕн хĕрлĕ ними ђаплă туй пек кĕрлесе, шавласа пыраŤ.

— Ай, репйаттă! Йара пар йурра!..

— Миккуђ ăçта!?

— Хыçалта!

— Калăрха, тăстăр купăсне!—кăшкăрђĕ Кĕркуç.

— Кĕркуç халĕ веçех урăх çын пулса кайрĕ...

— Купăс!..

— Тавай хот копăс!!—тĕрлĕ çын сассисем лав çинђен лава куçса, çамрăк комсомолĕс Миккуђа шыраса тупрĕçĕ.

Миккуђ вăрах кĕттермерĕ. Вăл Малттин вĕрентсе каланă шухăшсене асрах тытса тăраŤ.

«Массăна сăмахпа çеç мар, мусăккăпа та йертсе пыма пĕлес пулаŤ»—тенĕ сăмахсем çамрăк Миккуђăн пĕђĕкçĕ пўрнисене хытăран хытă пуçтарса

вăйлă, ђĕрене çĕклентерекен сасăсем йантратса кăларђĕ.

Тайлăк-тайлăк кусма пуçланă урапин шынасăр кустăрмипе йатлаçса пыракан Çпритун Мирунђăн ђĕрине те купăс сасси çавăрса илђĕ:

— Ех, ну-у!

— Çпритун Мирунђă, ес мари çав?!—терĕ пĕри, ун хыçĕнђи лав çинђе ларса пыраканни кулса.

— Ех çакăнта пăртакçă çутти пулсан, терĕ пĕри.

— Вара туйах темелле,—хушрĕ тепри.

— Правĕљнă!!

Ђăваш маршĕн çемĕ Çпритун Мирунђăн çуллахи пўртенкепе сырнă урисене çўлерех çĕкленсе уттарђĕ.

— Вот ку аван. Мĕн шутласа кăлармĕçĕ кăђухнехи çамрăксем,—терĕ Çпритун Мирунђă.

— Кăна илтменђђĕ. Кĕвви пит те аван ĕнтĕ,—мăкăртатрĕ кăвак сухал ăшне путса ларнă ватă старик те.

* * *

Тĕрлĕ çын тĕрлĕрен шутланине ăна хуť те кам та пĕлет. Акă икĕ лавĕ татăлса кайарах йулнă.

Хура çĕнĕ ђаппан тăхăннăскер урапи çинђен анса Микихвере кĕтсе илђĕ.

— Кăђухнехи çамрăксене йурăпа ташă пулсан çитнĕ вара.

— Ан тив, йурлађђăр ĕнтĕ,—тесе хирĕç тавăрђĕ Микихвер.

Епĕ çакăнтан тĕлĕнетĕпха. Мĕн ђухлĕ тырă пуçтарăнаť çав хоссутарствăн аллине, çапах та çитмест. Ăçта кайаťши вăл хăйамат. Тĕлĕнмелле...

— Вăрçă пулмалла, тет. Çавăн ваҫҫи хатĕрлеççĕ пулмалла,—терĕ тепри урапи çинҫе ларса пырсах.

— Ниуштă вăрçă татах пулĕши?

— Пулмаллах, теççĕ.

— Та-а!?

Пĕр кĕске вăхăтлаха иккĕшĕ те калаçма ҫарăнҫĕçĕ.

Вăрçă ăçтан, мĕншĕн тухса кайнă ыйту çинҫен тишкĕрнĕ пек тутисене ҫăмласа сухалĕсене сиктерсе шутларĕçĕ.

Микихвер пуçĕнҫи шухăшăн вĕçне шыраса тухнă пек пулҫĕ.

— Ей, есĕ вăрçă, вăрçă тетĕн. Санпа пирĕн уншăн ытла хăраса ўкмеллийех çук.

— Мĕншĕнха хăрамалла, а? Пирĕн çулсем иртнĕ ĕнтĕ. Нивуштă пире те хăваласа кайĕçши?

— Вăл таранҫҫенех пулмĕ те,—тесе хушрĕ тепри хăйĕн пуçĕнҫе вĕҫĕлтетме пуçланă меслетсем çинҫен калаçма пуçласа.

— Микихвер хăта вăрçă пулас умĕн тăвар пĕтмелле тет. Çакăн çинҫен тĕплĕрех шутлас пулаť.

— Тăварсăр пирĕн хресҫен çынни йепле пурăнма пултаратха. Тĕрĕс вĕт,—тĕрĕс. Май килсен çакна нумайтарах саппасласа хурас пулаť. Астăватна 1921-мĕш çулта мĕнле пулҫĕ. Пĕр кĕрепенке тăваршăн икĕ пăт тырă параҫҫĕçĕ вĕт.

— Тăварне кăна мар, май килсен пурне ге хатĕрлесе хума тăрăшас пулаť. Кăҫухнехи укçапа мĕн тăвас тетĕнха. Ылттăн пулсан калаçса тăмалли те çук.

— Çапла,—терĕ хура сăхманли.

— Çав тăвар илсе хатĕрлесе хурас тенĕренех пулђĕха ку. Петтук çав тăварпах пуйса кайрĕ вĕт, йепле халĕ пурăнат, вăл.

— Кам?

— Ара çав Карланкă Петтукне палламастна?

— А-а!—пĕлетĕп ĕнтĕ.

— Мĕнле вăл акраматнă çурт çавăрса хуђĕ. Хула пек вĕт.

— Пурте пирĕн пек ухмах мар çав. Епĕр ăна тăманаланса çӳретпĕр. Çук, халĕ ĕнтĕ пире те улталама йывăр. Санран пытарса мар, епĕ хам та кĕмĕл укçа-тенкĕсене, пĕр кĕрсен, нийепле те калла кăлармастăп. Пĕр çĕр тенкĕ йахăн кĕмĕл пурха.

— Ара кĕмĕл вăл çăкăр ыйтмасť. Хурсан, ăçта та тăраť.

Микихвер хура сăхман тăхăннă çынпа килĕштерђĕ, анђах хăй мĕнле саплассем хатĕрлесе хуни çинђен нимéн те шарламарĕ.

— Вăрçă пулсан комуниссем пĕтмелле тет. Вăрçи пултăрђђĕ. Унта курăнĕђђĕ.

— Комунисĕсем пĕђђĕрха вĕсем. Вĕсем шел мар. Анђах мана ак мĕн хăратаť.

— Мĕн тата?—пӳлђĕ Микихвер.

— Ара, есĕ илтнĕ пулĕ вĕт. Пулас вăрçăра кассем пулаççĕ тенине?

Микихвер шĕвĕр йанахне çемçе сухалĕ çине тĕрентерсе темĕскер çинђен шутланă пек пулђĕ.

— Кас вăл сĕрĕм пек, тет. Ăна куçпа та курма май çук,—тет. Кăнумиспе кăнумис маррине йеплеха вăл уйăрма пултарĕ.

— Тĕрĕс. Вĕсене пула хамăр та пĕтме пултаратпăр.

Капла ĕç тухмасŤ. Урăх май шырас пулаŤ,—терĕ Микихвер.

— Мĕнле май?

— Пĕррĕн-пĕррĕн, ђашкăрђĕ Микихвер.

Хура сăхман тăхăнни çĕлĕкне пусарах лартса:

— Çуук. Ку хăрушă йапала. Апла тăвас çук вара. Ку выръăнран веçех пăрахса тарас пулаŤ.

— Çуук. Ман ађасем пур, епĕ çемйеллĕ çын.

— Вăрттăн тăвас пулаŤ.

— Туса пăхха,—терĕ хура сăхманли. Хăй темĕскер шыранă пек йĕри-тавра çаврăнса пăхрĕ.

— Мĕн?..

— Çакăнтах итлекенсем пулма пултараççĕ.

Куна илтсен Микихвер урапи çинђен анса, вăрттăн урапи айне пăхса илђĕ.

— А-а! пустуй калаçатăн есĕ. Кунта хулара мар вĕт. Йалта пурте хамăр çын вĕт.

Хура сăхманли килĕшмерĕ.

— Йалта та тĕрлĕ çын пур. Комсомолсем камсем тетĕнха есĕ? Вĕсем тем те тума пултараççĕ. Тата есĕ илтменимха?

— Мĕн çинђен?

— Шупашкарта йытсене вĕрентекен шкул пур тет. Вĕсем хут те кама та шыраса тупма пултараççĕ тет.

— Та! Ну ку комуниссем мĕн шутласа кăлармасçĕши?—Вĕсем пайтахăн вĕт-ха.

— Çапла çав...

— Та-а!?...

Калаçма ђарăнђĕçĕ. Микихвер самăр лашине картах туртрĕ. Хура сăхманли те лашине ђăпăрккапа çапрĕ.

Самăр лашисем ђасах хĕрлĕ опосăн хўри вĕçне çыпăçрĕçĕ.

* * *

Купăс кĕвви шăранаť... Уйхир йанăраť хĕрлĕ ниме сассипе!

Хирĕç тĕл пулакансем çăварĕсене карса пĕр вырăнта пăхса тăрса йулаççĕ.

— Ак тамаша, мĕнле кусем?—тесе тĕлĕнеççĕ.

Кĕркуç малта. Халĕ вăл веçех иртнĕ пурнăç çинђен шутлама пăрахрĕ. Пĕђђен, пĕр вăйпа, пыршă татăлађђен ĕçлесен те çăмăл, канăçуллă пурнăç тума май çуккине вăл хăйĕн çанçурăмĕпе такçанах сăнаса пăхнă.

Ун пуçĕнђе çĕнĕ шухăшсем ђăрмантараççĕ.—Колхос тусан мĕнле пулĕши? Çавăнтах вăл ту айккинђе Машкă мĕнле нушаланнине аса илђĕ.

Мĕнле вăл туртса хăпартасшăн кайри урисемпе тĕрĕнсе тăђĕ... Пĕççин шăнăрĕсем вĕрен пек пĕтĕрĕнсе хытрĕç. Çапах та вăл улăхаймарĕ. Пурнăçра та çапла вĕт. Хамах епĕ ăна курса улшăннă.

— Вунпĕр çын кăна вĕт, аллисене урапа çумне çыпăçтарђĕç. Урапа хăй тĕллĕн улăхнă пекех çатăртатса хăпарђĕ. Вот мĕнле вăл ертеллĕ вăй.

Кĕркуç тата та шутланă пулĕђђĕ куран, анђах ăна пĕр сасă пўлсе лартрĕ.

— Кĕркури, ађам, пĕрер аçмушкă та пулин тапак памĕçши? Калаçса пăхха есĕ унта,—терĕ Пађлђа Ахванеçĕ. Хăй кăсйинђен ђĕлĕмне кăларса ђĕрни вĕç çине ђаккакаласа Кĕркуçпа йунашар утрĕ.

Кĕркуç Ахванеçе мĕн кирлине ђухлаť.

— Ахванеç тете, туртассу килет пулĕха санăн?

— Пур пулсан аван пулĕҙҙĕ те; вара ыранҙҙен славнийех пурăнăттăм.

Кĕркуç паçкă тĕпне йулнă тапакне ывăç тупан çине тăкса, ылттăн пĕрҙине суйланă пек, пĕрҙĕн-пĕрҙĕн çурмалла уйăрса Ахванеçе паҙĕ.

Ахванеç кулкаласа ҙĕлĕмне ҙĕртсе йанă йаманах, ун хыçне кăнтитатсем перçе те çитрĕç.

— Сороковккă!..

— Çирĕм проҙҙĕнт!.,

Ахванеçĕн туртса ўсĕрĕлес ĕмĕтне татрĕç. Кукăр ҙăпăклă ҙĕлĕм çăвартан çăвара хăнана çўрерĕ. Çпритун Мирунҙă ҙалăш кусакан шынасăр урапи çинҙен шутлама пăрахрĕ. Çавал шыв урлă каçакан çĕнĕрен тунă кĕпер çумĕнҙи тимĕрсем çинҙен те вăл халĕ шутламасť. Халĕ вăл нимĕн çинҙен те шутламасť. Çавăн пек вăхăтсем хут те камăн та пулма пултараççĕ.

Тен ун пуçĕ нумай шухăшласа ывăнҙĕ те пулĕ? Çпритун Мирунҙăн пуçĕнҙе нумай шухăшсем пулнă. Анҙах вăл пурне те каласа паман.

Çпритун Мирунҙă Нурăс пасарĕнҙе икĕ мăшăрĕпех урапа кустăрмисем илнĕ. Тĕнĕлпе те çĕнĕренех хатĕрлесе хунă; анҙах çĕнĕ тĕнĕл ваҙҙи потпускă тума тимĕр кирлĕ пулнă.

Çпритун Мирунҙăна кĕпер çумне çырттарнă тимĕрсем пустуй, ырăнсăр тутăхса тăнă пек туйăннă.

— Кĕпер вăл хоссутарствăн. Ватăлсан та ăна ҙасах тўрлетме те пултараççĕ. Е, е! хăçан-ха вăл çĕмĕрĕлет, çав тимĕр татăккишĕн çĕмĕрĕлме ĕнтĕ? Сана пур, пайан кун кирлĕ...

Çпритун Мирунҙă халĕ ун çинҙен шутламасť.

Вăл хĕпĕртенĕ пек пулђĕ. Мĕншĕн савăннине хăй те пĕлмест. Пурте савăнăçлă, хавас. Те Çпритун Мирунђă та çавăнпа хавасланнă...

Авă вĕçĕ-хĕрри курăнми хĕрлĕ ниме стантсă çывăхĕнђи вăрмана йанраса килсе кĕђĕ.

Тĕрлĕ тумпа тумланнă вăрман шăппăн ларса хапăл туса кĕтсе илђĕ...

Лашасем тулхăрни, хуткупăс сасси, йурă, çĕр тĕслĕ сасăсем, хĕрлĕ йалав хыçĕнђе çĕмĕрĕлеççĕ.

Кĕркуç малта.. Хĕрлĕ çартан тăхăнса таврăннă çаралса ларнă çĕлĕкне ĕнси çине пусса лартсл комант пађĕ.

— Смирр-но-о!..

Лашасем ђарăнђĕç. Хуткупăс та йулашки хут нăртлатса хупăнђĕ. Çпритун Мирунђă та аллине хăлхи патне тăратса малалла пăхса итлерĕ. Пурте итлерĕç...

Шăп... Ним сасђĕвсĕр лăпланнă вăрманта сар кайăксем ђĕпĕлтетнинђен пуçне урăх нимĕнле сасă та илтĕнмерĕ.

— Йулташсем! Орканисованнă çитрĕмĕр, малашне те ĕçе çапла лайăхах туса пĕтерес пулаť! Утмăл лав!—1200 пăт тырă патшалăх аллине!

— Правĕђнă!

— Уррра!

— Уррра-а-а!..

Утмăл сасăран пĕр сасă пулса, стантсăна çикнал парса шартлатса çурăлђĕ. Кĕркуç хăй урапи çине улăхса тăђĕ.

— Есĕр пăртакçă тăхтăрха, епĕ кайса пĕлтерем!— терĕ те, урапа çинђен анса РĔК-е васкаса ђупрĕ.

## 13. Хамăршăн.

УРАМ тулли лавсем килсе капланнă. Халăх вĕрет... РĔК умĕнђе пасарти пек çын хĕвĕшет. Кĕркуç вĕсем хушшипе райĕçтăвком претçетаттĕл пўлĕмне хашкаса ђупса кĕђĕ.

— Претçетаттĕл ăçта?!—терĕ вăл, ђĕтрекен сассипе, çыхланса.

— Хĕрлĕ опос килнĕ! ăнлантăна?

— Ну, ăнлантăм.

— Тухса илетре, çуки?

— Епĕ кунта слушит тумастăп, комантировккăна килнĕ çын çеç,—терĕ лешĕ васкамасăр.

Кĕркуç çиленсе урайне сурђĕ те, претçетаттĕл пўлĕмĕнђен тухса райком ăçтине ыйтса пĕлђĕ.

Хĕрĕ-хĕрарáмĕ, ватти-вĕтти, арçынсем кĕрсе тулнă вăрăм коритор вĕçне тĕллесе кăтартрĕ ăна пĕри.

Кĕркуç унта сиксе ўкрĕ. Акă вăл райком çекреттарĕн пўлĕмне персе кĕђĕ.

— Кам кунта райком парттин çекреттарĕ пулаť?—ыйтрĕ вăл сĕтел тавра ларса тухнă çынсем çине савăнса пăхса.

Ыттисем нимĕн ђĕнмесĕр Кĕркуçпа çекреттар çине пăхрĕç.

— Епĕ пулатăп, йулташ,—терĕ ăна хирĕç армакђармак çўçлĕ, хура куçлăхлă çекреттар.

— Aслă Кипек йалĕнђен утмăл лавлă хĕрлĕ ниме килсе çитрĕ. Мĕнле, хирĕç тухса илетре, çуки?

— Инçетре-и?

— Вăрман ăшне ђарса хăвартăм.

— Тавай, пур профсойус ђленĕсемпе те пĕрле йалтан тырăпа килнĕ йулташсене ђисласа илер.

Çекреттар çапла каласанах райĕçтăвком претçетаттĕлĕ месткомпа калаçса татăлма васкаса тухрĕ. Ыттисем те хăйсен уђрештенисене ђупрĕçĕ.

Пĕр самантрах тенĕ пек, хĕрлĕ йалавсем çĕклесе тухса, тĕрлĕ уђрештенисенђе ĕçлекенсем пысăк рете тăрса вăрман йенелле утрĕç.

Пасар пек пăтранакан халăх та вĕсем хыççăн шавласа йухрĕ.

Хула пулас поççолăкшăн праçник.

Ђукун çул çывăхĕнђе пысăк купаланса ларнă кĕлет умне утмăл лав кăшăртатса йухса кĕђĕ.

Тĕрлĕ çĕртен килнĕ тĕрлĕ çын та пур унта. Хĕрĕхĕрарăмĕ, арçынни, пĕђĕккисем,—пурте. Ахаљ ĕçсĕр йанкаса çӳрекен те пур куран.

Ак пĕр çăвар выљату ăсти, çине сар кĕрĕк пиншак тăхăннăскер, пуçĕнђи малахайне çамки çинерех антарса тăрăхласа тăратĕ.

— Хĕллĕ апус, ирĕкрен теççĕ?!

— Хăваласан такам та кайĕ, терĕ вăл шăл витĕр сăрхăнтарса. Хăй ыттисем çине савăнса ăшђикĕн тӳнтер йенĕсене çĕлесшĕн пулас, татах:—тĕрĕс вăл, ара ăна пур ђĕрĕ çын та ђухлатĕ,—текелесе мăкăртатрĕ.

Унпа йунашар тăраканнисенђен пĕри нимĕн сăмах ђĕнмесĕр айаккалла пăрăнђĕ. Лешĕ урăх йура

йурланине аванах ђухлаҭ пулмалла, çапах та епĕ курман, илтмен те, тес шухăшпа айаккалла пăрăнђĕ.

Çавăн пек лађакара çăрăлса пурăнма йуратакансемпе тĕл пулма пулатех пурăнăçра.

Ун патĕнђе тăраканнийех, тепри, айакка пăрăнмарĕ. Сарă кĕрĕк пиншак тăхăннă çын çине пусĕнђен пуçласа çĕре çитиђђенех вуласа тухрĕ. Ђăтаймарĕ:

— Мĕнле, сана пăртакçă хĕстерђĕç им?—терĕ те, лешин çамки çине антарса лартнă çĕлĕк айĕнђен ђĕрĕп пек выљаса пăхакан куçĕсем çине шăтарас пек пăхрĕ.

— Хĕстерни те çитĕ.

— Сахал хĕстернĕ пуласха. Сирĕн пек пустуй çăвар выљатса, павраса çўрекенсене тата хытăрах хĕстерес пулаҭ. Мĕн сўпĕлтетсе тăратăнха есĕ кунта?

Лешĕ нимĕн калама аптăрарĕ.

— Ара, епĕ мĕн усал сăмах каларăмха?

— Пирĕн тутасене çу сĕрсе улталас çук. Çитĕ, нумай хўресемпе пăтратса çўрерĕр.

Лешĕ тилĕ пек йăпăлтатса, кушак пек çуланкаласа, мăрăлтатса, кăткă йăви йеверлĕ вĕрекен халăх хушшине кĕрсе çухалђĕ.

Çапла вĕсем, хытăрах хĕссен, хўрисене хĕссе ђасах тараççĕ.

Виçе панђисем сăрлатса кĕрлесе илђĕçĕ. Уйрăм-уйрăм килнисем хĕрлĕ опоспа килнĕ лавсене ђеретсĕр йарасшăн мар куран. Ăйăрсем пек тапăçса тавлашаççĕ.

— Ђеретпе!

— Мĕнле вăл апла!

— Пурте пĕрех вĕт!..

— Ан шарлăр халĕ!

— Курттăм виçетпĕр. Апла виççен, утмăл лава виççе пĕтернĕ çĕре пĕтеретпĕр! — тесе кăшкăрђĕ тырă виçекенни.

Хурт пек сăрласа тăракан халăх пĕр самантрах лăпланђĕ.

Пурĕ те михĕсем тийенĕ лав çине пĕр çын аллине хĕрлĕ йалав çĕклесе улăхса тăнине курђĕçĕ.

Райком парттин проппакантă пайĕн пуçлăхĕ Уçăп улăхса тăнă.

Уçăп кулмасӑ, анђах вăл хĕвел пек савăнăçлă, пĕрмайах кулса тăракан куçĕсемпе хĕпĕртесе пăхаӑ.

— Ĕçхресђенсем патшалăха тырă пахаласа панă шутпа тăвăнакан леттуђи миттĕнка уçăлнă тесе шутлăпăр, — терĕ.

Хăйĕн пуçĕнђи картусне хывса «Интернатсионал» йуррине ђăвашла пуçларĕ...

Ылханлă выçăхнă ђурасен,
Мĕн пур тĕнђи, харăсах тăр,
Варкаӑ пирĕн ăс тӳсме çукран,
Вилиђђен çапăçма хатĕр...

Пин çынна йахăн халăх, пĕрин хыççăн тепĕри, пуçĕнђи çĕлĕкĕсене хывса, йанраттарђĕç йурра. Килсе капланнă лашасем, урапасем, çынсем тинĕс пек хуллен хумханђĕç. Çутă хĕвел пĕлĕтĕн тăррине хăпарнă. Унăн çутă, кăтраланса йухакан шевлисем тинĕс хумĕпе ађашланса выђанăн туйăнаççĕ.

Уçăп улăхса тăнă тулă урапа хĕрлĕ йалавлă лăпкăн хумханакан тинĕс çинђи карап пек. Савăнăç,

нумай, нумай çынсен ђёрисене вутлă çулăм йарса илђё!

Кёркуç калама та çук хёпёртенипе, йе ун пуçри халех тухса каламалли шухăшсем те ђёрери йунне вёрилентернипе, йёрса йама патне çитрё. Темён каласшăн пулђё. Çавăнтах:

— Ах, аван! — терё вăл. Татах йурлама пуçларё.

Миттёнк тулашёнђе ухсахрах фоттокрăф ђупкаласа çўрет. Капла лартаť, апла пăхкалаť аппаратне, пуç çине хура пёркенђёкне хуплаť. Хăш ђух вăл аппарађён ăшне пуçёпех кёресшён темелле, темёскерле хутланса хуçкаланаť. Пуçне витнё хура пёркенђёкне сирмесёрех вырăнтан вырăна ђупкалаť.

Йалтан хуçипе йерсе килнё йытă пулас, тийенё лав çине улăхса ларнă, манашкă пек пёркеннё фоттокрăфа çиленсе вёрет.

Стантса урлă каçса анлă ђăрăш-хырă вăрманне йанратнă пин сасăран пулнă пёр сасă лăпланђё.

Уçăп улăхнă лав çине райком çекреттарё улăхса тăђё. Пуçёнђи кепкине хывса йёри тавра çаврăнса пăхрё. Кăкăрне çўлелле хăпартса ўпке тулли сывласа илђё те калаçма пуçларё.

— Йулташсем! Çакăн пек ђаплă йапаласем çинђен çырса çапсан, ытти патшалăхри пирён тăшмансем ăна шанас та çук. Ку полђшевиксен камиђё тесе кулма та вёсем пултарёçё. Анђах епёр капла тăрăшса ёçлесе мул хуçисене кăтартас тесе ёçлеместпёр!

Пирён умра тăракан сатађ вăл—ёçхалăхён пурнăçне йусасси.

— Нумай, нумай ёçхалăхё кăпиталисăмăн тапки



айёнђе йунпа çăрăлса хур курнă. Вĕсемпе пĕре ђăваш ĕçхалăхĕ те çын вырăнне шутланман.

— Кам пире револђутси пулађђен çын вырăнне шутланă!? Калăрха, кам?!—терĕ çекреттар хĕлĕхĕсене хытарса.

Пĕр çын пек хытса итлекен миттĕнк трипунă тунă урапа йеннелле сулăнђĕ. Ораттăр çӳлелле çĕкленĕ аллине айала касса антарса сăмахне татрĕ.

— Çук! пире çын вырăнне ĕлĕк шутламан!

— Ђăваш ĕççынни! Пăхха есĕ хăвăн тунхахлă, йунпа пĕвĕннĕ иртнĕ çулна калла çаврăнса. Пăх!!

Пĕр сиккеленмесĕр итлесе тăракан халăх ораттăр тĕллесе кăтартнă йенне çаврăнса пăхрĕ.

— Йăвăр çулпа, тунхахлă çулсем тăрăх утса епĕр çак тарана çитрĕмĕр! Çул, çăмăл мар. Тăшмансем пĕтменха. Нумай ĕç турăмăр, пирĕн умра йăвăрлăхсем нумайха. Епĕр ăна куратпăр!— Анђах вăл пире хăратмасť

— Пĕтĕм вăйхал массăра! Массă хăй йунне тăкса çĕрĕк трона ишсе антарђĕ. Ĕнси çинђи сĕлĕхсене силлесе сирпĕтрĕ. Вот мĕн тăваť тинĕс пек кĕрлекен ĕçхалăх!

— Ур-р-ра-аа!..

— Ур-р-ааа!!..

Кĕрхи саркайма пуçланă вăрман, таçта айакра, тата икĕ хут:

— Урр-раа!

— Урр-ааа!! — тесе йанăрарĕ. Шăпăр-шăпăр алă çупрĕçĕ. Çекреттар татах хĕрсе, вутпа хыпса калаçма пуçларĕ.

— Йулташсем, ђăваш ĕçхресђенĕ тарласа пухнă

тыррипе хулари пролеттарине куђђенеçлет. Хулари пролеттарисем йала, йалти хресђенсем хулана, иккĕшĕ пĕр-пĕрне пулăшса тăрсан нимĕнле тискер вăйхăват та пире хăратас çук.

— Тăшмансем нумайха пирĕн. Кашни шăтăкран, кашнă кĕтесрен çĕлен-калтасем пек ђашкăрса тăраççĕ вĕсем.

— Кулак!

— Вретиттĕл!

— Пўрократ!

— Пăтхалим!

— Мĕн ђухлĕн вĕсем!?— Но епĕр вĕсене нихăçан та парăнас çук. Ей!.. Çамрăк колхоçнĕк! Рапођђи! Ђухăнпа вăтам хресђенсем! Нимĕр тăвар çав ђашкăракан усал наркăмăшлă çĕлен-калтасене!!!

Халăх кĕрлерĕ. Алă çупрĕç. Интернатсионал хумĕ тепĕр хут шавларĕ...

Çекреттар урапа çинђен ансан ун вырăнне Кĕркуç улăхса тăђĕ. Пăрлă çăмăр çунă пек алă çупки ăна хирĕç те шăпăртатрĕ. Кĕркуç халиђђен кун пек пысăк халăх умĕнђе нихăçан та капла тухса калаçман.

— Аťа, кала, нимĕн вăтанмалли те çук, — тесе пăртак лăплантарђĕ ăна Уçăп.

Кĕркуç лăпланнă пек пулса, калаçас сăмахсемпе авăрланса кайрĕ.

— Йулташсем!— терĕ вăл, сурђăкне çăтса. Сывлăш çавăрђĕ пулас, çине-çине хыттăн пусса сăмахсем ывăтма пуçларĕ.

— Епĕр Аслă Кипеккассинђен 1200 пăт тырă хĕрлĕ опос туса хоссутарствăна пахаласа парат-

пăр! Ак çаксем вĕсем! — Урапа йĕри тавра икĕ рет тăрса тухнă хăй йал сыннисене тĕллесе кăтартрĕ. Çпритун Мирунђă лупас пек сухал айĕнђен кĕçĕн ађа пек хĕпĕртесе:

— Çап, Кĕркури, аťа хытăрах çунтар! —тесе кăшкăрса йама патне çитрĕ.

Ун пит çăмарти çинђи йун тымарĕсем вĕрекен йунпа тулђĕç пулас. Нимĕн калама аптраса алса ăшĕнђи аллисене хытă ђăмăртаса хĕстерђĕ.

Кĕркуç халĕ вăтанмасť.

— Епĕр çак влаçшăн сахал мар хамăр йунăмăрсене тăкрăмăр. Çак хĕрлĕ йалав пире ахалех лекмерĕ. Пирĕн йунпа пĕвеннĕ вăл. Хамăр кăкăрăмăрсене таптаса каймасăр епĕр ăна никама та парас çук!

— Сывă пултăр хулапа йал сыхăнăвĕ! Сывă пултăр пурнăçа çăмăллатасси!!

— Ур-ра!

— Урр-ра-аа!!

Урапа сывăхĕнђе тăракан ђукун çул çинђе ĕçлекен рапођђисем Кĕркуçа пĕђĕк ађана тытса сиктернĕ пек çӳлелле пăрахса силлерĕç.

Йулашкинђен Çпритун Мирунђă та ђăтаймарĕ. Пĕрик сăмах та пулин вăл каласшăн пулђĕ.

Кĕреçе пек сухаллă старик улăхса тăђĕ. Миттĕнк кĕрлесе алă çупрĕ. Шăп...

— Епĕ калаçма пĕлместĕп. Совета та пулăшмасан кам тата пулăштăр. Хамăр влаç вĕт. Пĕркун епĕ 60 пăт кӳрсе патăм. Халĕ татах тупрувуљнă хĕрлĕ опос туса илсе килтĕмĕр. Ара хулари рапођђисене те тырă кирлех ĕнтĕ. Парас пулаť.

— Сывă пултăр Комуниссен Совеҫĕ!—терĕ те аллине сулҫĕ.

Ҫпритун Мирунҫă йулашкинҫен: «Сывă пултăр Совет влаҫне ҫул кăтартакан комуниссем» тесе каласшăнҫҫĕ те, тепле тухаймарĕ. «Ара ҫĕлхи ҫăварĕ те хытассипех хытнă ҫав!»—шухăшларĕ вăл хăй ăшĕнҫе.

Хĕпĕртенĕ райком ҫекреттарĕ Ҫпритун Мирунҫăн аллине тытса хытă силлерĕ...

Миттĕнк хупăнҫĕ. Пысăк тимĕр виҫесем ҫине михĕсем купаланҫĕҫ. Хăшпĕрисем шăналăк ҫинҫен михĕсем ҫине тултарҫĕҫ. Пĕр самантра тенĕ пекех утмăл лав тырри пысăк склатăн улттăмĕш пӳлĕмне шăлами тултарса та лартрĕ.

Аслă Кипекĕн хĕрлĕ опосĕ ытти ҫынсене вырăн паҫĕ. Нумайĕшĕ тĕлĕнҫĕҫ. Хăшпĕрисем кĕвĕҫсе пăхрĕҫ.

— Хĕрарăмсен хĕрлĕ опосĕ килет!—тенине Кĕркуҫ илтрĕ.

Кĕркуҫ вĕсене кĕтсе илнĕ ҫĕрте те пуласшăн пулҫĕ, анҫах ун копперативва васкамалла. Ун аллинҫе вăтăр оҫмушкă тапак илмелли хут пур.

Ыттисем хĕрарăмсен хĕрлĕ опосĕ килнĕ ҫĕре курма йулҫĕҫ. Микуҫ хăй урапи ҫинҫе ларса хут купăсне тăсрĕ.

Тырă тийеме пойăс вăрахҫҫен кăшкăрса стантса урлă иртрĕ. Ĕҫ вĕрет... Ҫĕнĕ пурăнăҫăн хăватлă ҫĕри хастарлă тапаť.

Ҫырса та, каласа та пĕтереймĕн ун ҫинҫен.

## 14. Ирсĕр каç.

ХĂРУШĂ кĕрхи каç. Кушак ђĕрни йевĕрлĕ йаш уйăх, сивĕ, тăхлан тĕслĕ курăннă пĕлĕтсене сире-сире таçталла васкаť. Витĕрех касакан урнă кĕрхи çил пÿрт труписенђе тискерле улаť:

— У-у-у-у!...

Картари сурăхсем, хăраса пулас, пĕр-пĕрин çумнерех ђĕтресе çыпçăнаççĕ. Çил çаплах улатаť:

— У-у-у-у! ..

Ухăђван мăнтăр арăмне латакайрах хулăм пуклак пÿрнисемпе кăђăк туртса илђĕ те, шăппăн— лешне кăларха,—тесе арăмĕн хăлхинђен пăшăлтатрĕ. Хăй сĕтел хушшинђе ларакан хăнисем йенне çаврăнђĕ, тăртаннă пит çинђи хĕсĕкрех ђейе куçĕсене хĕссе илђĕ.

— Кхĕ-кх ĕçлеме пуçлиђђен пĕрик тумлам сыпса илни сывлăха пăсмас теђђĕ ман асатте. Епĕр те вĕсенђен таçта иртес çук. А-а, кх-кхе! Çапла вĕт, тăвансем, е-е?!

— Йураť. Ухăђван тете, йураť вăл. Ара хăçан сысна хырăмне ыраш пăсни пурха,—терĕ суланкаласа Çĕрĕк Павăлĕ. Шĕшлĕпе Хырăм та сыпасси йенђен Çĕрĕкрен кайах тăмаççĕ. Вĕсем те харăссăнах тенĕ пек йулташĕпе килĕшрĕç.

— Унтан та аванни çут тĕнђере пурши? çук пуљ!

Ухăљван тилĕ пек пăркаланса куç айĕнђен тишкĕрсе пăхрĕ.

— Мĕн калаçса тăмалли пур унта, пулсан, паллах, кăларатăн, терĕ Çĕрĕк.

Хырăм та хĕрлĕ сухаллă йанахне сăтăркаласа:

— Пур ђух ĕçес, халĕ пурнăçĕ çавнашкал, тесе сăмах хушрĕ.

— Вăраха пырас çук та ха вăл, унђен вăт.

Ухăљван сĕтел хушшине сарăлса ларсан, сарă çĕтел çине сăмакунккă ђетвĕрђĕ каçăрлса та ларђĕ. Хуçа шурă кĕпин шалпар çаннине тавăрса кĕленђине майĕнђен йарса илђĕ; стаккан çине пакăлт-пакăлт тултарма тытăнђĕ.

Тĕтĕм тĕслĕ пăтранђăк шыв ђеђеклесе пĕтернĕ сарлака стаккана шăлами пула пуçласан, Çĕрĕкĕн савăннипе çурăмĕ темĕскерле сăрăлтатса кайрĕ. Ун пуçне çав хушăрах типнĕ çăварне йÿçĕтекен шухăш персе кĕђĕ.

— Леш хĕрринђен ан пуçлатăр. Вара ухмах пек ђерете кĕтсе лар!

Хуçа ухмах мар, Çĕрĕкĕн куçĕсем ђерке çинђе çуннине курать. „Çакăнтан пуçлархха еппин" терĕ Ухăљван, кушак пек суланкаласа, тав туса пырне йĕпетнĕ хыççăн, Çĕрĕке çийелтен тăкăнса тăракан куркине тыттарђĕ:

— Çакна пушатса парха.

Çĕрĕк пысăк çăварне стакканти сăмакуна йăвантарнă хыççăн, çăварне пĕтĕрĕнсе кĕнĕ уссине сăрăхтарса пĕђĕк ађа пек икĕ аллине хире-хирĕç çатлаттарса илђĕ.

— Ех, çак Ухăљван тете, тăватçке, сăмакуна сăмакункка та темĕн, ђисти лешĕ... Çутти пекех!

— Ара, Павăл Иванђă, есĕ калаçатăн, нађар тăвас пур ăна ан ту та, прођђăм сутма епĕр йăвашрах тăватпăр. Ку, хамăр тенĕ çыншăн вара—йăвашшипе лĕпĕртетместпĕр те.

— Тепре тытса парха еппин.

Çĕрĕк иккĕмĕшне те пĕр сывламасăр сарлака çăварне тăкрĕ.

Тата пĕр ђĕрĕк сехетрен Ухăљван хăни пуçĕсем хĕрђĕç, ђĕлхисем те уçăлђĕç

— Ну мĕншĕн ђĕнтерсе хăна турăн. Хуçа, кала? Епĕр хатĕр,—тесе пуçларĕ Çĕрĕк. Хулпуççийĕ урлă Çĕрĕк шыв пек пăтранђăклă куçĕпе йулташĕсем çине пăхса илђĕ. Ăна хирĕç Хырăм пĕђĕкрех хура кăтра пуçне тайрĕ. Шĕшлĕ те сарлака сăмси çунађĕсене сиктеркелесе:

— Та-та, хăна пултăмăр, халĕ ĕнтĕ тӳлемелле,—терĕ хулăм тутисене çулакаласа.

„Вăхăт çитрĕ“ тесе шухăшларĕ Ухăљван.

Вăхăт пĕр вырăнта тăмасť. Хăнасем аванах хĕрĕнкеленђĕç. Тайкаланаççĕ, шавлаççĕ, пĕр-пĕрне ыталаççĕ...

Ухăљван вĕсене ахаљтен пухман. Ун пуçне такçантанпах йăва хывнă шухăш çавăраť, анђах сасартăках калама шикленсе тăраť. Мĕн тумалла ку паççаксемпе? Шанма хăрамалла вĕсене. Вăтăрук пĕлеççĕ вара?...

Шĕшлĕ сăмси айĕнђе ĕнĕрлесе йурра тăсрĕ... Хырăмпа Çĕрĕк пуçĕсене сĕтел çине хурса ăйăха сĕрме пуçларĕ...

Кенӑ пӗр сас-ђӗвӗсӗр тенӗ пек пӳрте килсе кӗђӗ

— А-а, Кенати, есӗ им?

— Атте, епӗ.

— Тахҫанах сана кӗтетӗп.

— Кусем нумай ӗҫнӗ куран?

— Ӗҫӗ тухсан пиђӗкипе те шалккӑ мар.

— Ђшш! Хулленрех калаҫ, — терӗ Кенӑ, аллипе кухне йенне тӑсса кӑтартса.

— Мӗн?

— Хӑй ҫутас умӗн Кулине килнӗђђӗ. Кари вӑл?

— Мӗн туса лартӑр вӑл, каймасӑр.

Сывлама ђарӑнса итлесе тӑракан Кулине Кенӑ килсе пӑхасран хӑраса шартах сикрӗ. Кухне йеннелле утакан ура сассине илтсен, ура вӗҫҫӗн утса кӑмака хыҫне тӗттӗм ҫӗре йӑпшӑнса кӗрсе пытанђӗ...

Кенӑ алӑка уҫса пӑхса кухнере ҫын ҫуккине курсан, ӗҫсе ларакан малти пӳлӗме тухрӗ.

— Тимӗре хӗрнӗ ђух ҫапас пулаҭ, терӗ пӑшӑлтатса Кенӑ.

Сывлама ђарӑнса итлекен Кулине нимӗн те илтмерӗ.—Хаљ те арӑмӗ ҫывӑрма выртрӗ, епӗ кунта ларнине пӗлеђђӗҫ, тесе хӑй ӑшӗнђе шутланӑ хыҫҫӑн, вӑрӑмӑн тӑстарса сывлӑшне ҫавӑрђӗ.

— Правӗљнӑ! Ей, Павӑл Иванђӑ! тӑр, ҫав терийех йӑвӑрлантӑним?

Ҫӗрӗк пуҫне ҫӗклесе карӑнса илђӗ те Шӗшлӗпе хырӑма тытса силлерӗ.

— Хӑнара ҫапла ҫывӑрса лараҫҫи?

— Тепӗрер курка йарарха. Уҫӑлтараканђђӗ вӑл. Ӗҫкӗн тепӗр тапхӑрӗ пуҫланђӗ...

— Вăт мĕскер, тăвансем! — пуçласа йаҕĕ Ухăљван пĕр стаккан сăмакунне ĕçсе йарсан.

Виççĕш те ун çине йывăрланнă пуççене çăмăллатса, саланнă куççемпе тинкерсе пăхрĕçĕ.

— Пурăнăç пит наҕарланҕĕ, хĕсеççĕ, сывлама памаççĕ вĕт. Малттин пирĕн пуçне хăпартма пытăнҕĕ, — терĕ вăл, вĕсене виççĕшне виçĕ ерех тултарнă кĕленҕе курка тыттарса.

— Тепрер шаклаттарса парăрха.

Çĕрхи каç тĕттĕм. Урамра аҕапăҕа сасси тавраш илтĕнмест. Икĕ касăн ик вĕçĕнҕе Ухăљван çурҕĕпе Малттинсен çуртĕнҕе çеç хăй çути йăмăхаť. Тулта çил кашлаť. Ухăљван пӳрҕĕн тăпсИ татăлнă ҕӳреҕе хуппи тискерĕн уçăлса хупăнаť, такам çĕмĕрсе кĕрес пек шаккаť...

— Пуйан пĕтсен ҕухăн çын та пĕтни паллах ĕнтĕ. Ăна хăвăр та аван ҕухлатăр. Сире епĕ нихăçан та пăрахман. Ĕмĕр пĕрле пурăннине малашне те пĕрлех пурăнас.

— Тĕрĕс. Пĕтерес ăна! — тесе кăшкăрҕĕ Çĕрĕк.

— Унсăрăн ĕç тухас çук, пуçтарас пулаť ăна.

— Ара антихрисран мĕн пултăр.

Çĕрĕкĕн тата ĕçес килнĕ пек пулҕĕ.

— Ну-кă, пенĕ-пенĕ, теприне те перемха.

— Çавă çав, вĕсене илме хĕн. Пухура пĕркун çĕнтерейммерĕмĕр, — терĕ Шĕшлĕ. — Вĕсем ытла нумайăн та мар. Хырăм та хĕрсе çитрĕ: нумай кăшкăртăм. Тепĕр кунне те сасăсăр çӳрерĕм. Çук вĕт. Çав Малттин пĕтерет...

— Çавах çав,—хушса хуҕĕ Çĕрĕк. Хуçа тенкел çинҕен сиксе тăҕĕ:

— Ех, тăвансем, мĕн ун çинђен аптрамалла. Мелне епĕ такçанах тупнă.

Хăнисем ђăрр пăхса илђĕç.

— Н-у-у-у!—пурте нулатрĕçĕ.

— Ну! кала ђасрах!

— Вăхăт пĕрре çеç.—Кунта хуçа сассине айала антарђĕ.—Вĕлермелле, кĕçĕрех вĕлермелле,—çĕлен пек ђашкăрђĕ.

Шĕшлĕпе Хырăм çăварĕсене карса пăрахрĕç. Хырăмăн хăранипе куç хўри айĕ сикме тапранђĕ. Вĕлерес сăмах Çĕрĕке те килĕшмест. Вĕлерес, вĕлерес!—пуçне шаккаť

Ухăљван пĕр ђĕнмесĕр шăтарас пек хăнисем çине пăхаť. Кăмака хыçĕнђе шăрђăк ђĕриклетсе илђĕ.

Ухăљванăн алли хăй тĕллĕнех ђетвĕрт патне туртăнаť. Хăтарсан та вăл хăтарĕ.

— Ĕçшĕн ахаљ тумăп. Мĕн ыйтнине çавна парап.

Çĕрĕк шухăшласа ларђĕ-ларђĕ те сасартăк аллипе сĕтеле килсе шарглаттарђĕ.

— Хамăр çын. Йурĕ еппин. Анђах ђур! çын пĕлмелле мар.

Ухăљванăн савăннипе куçĕнђе вут выљаť:

„Аттаманĕ килĕшрĕ, лешсем ĕнтĕ паллах кун сăмахĕнђен иртеймеççĕ“. Хĕпĕртенипе кунăн хăнисене ђуптăвасси килет.

Шĕшлĕ пуçĕ хаљ урă. Килĕшмест.—Ку ĕçшĕн пире тĕрмере çĕртеççĕ. Урăх май тупар. Луђђă çуртне тĕртсе çунтарар.

— Кам пĕлет? никам та. Тăватсăмăртан пĕри суртсан—ун пуçне хамах çийеп. Павăл йатлă пулса çўреместĕп. Çийеп тĕк çийеп ун пуçне.

Çĕрĕк шăлне шак-шак шаккаса илђĕ.

— Нăй-нăй, ху епĕ есс-е-ер тетĕн, ессер çакăн пек пулаҭ-и-у!?

Аллипе шарт çапрĕ кăкăрне. Çĕрĕкĕн Ухăљвана кун пек ђухне те итлемесен мĕнле пулаҭ. Тумлантараҭ. Çитерет. Тата мĕн кирлĕ? Хаљ те астăваҭ вунсаккăрĕмĕш çулхи ĕçне. Компетăн пуçлăхне вĕлерсен мĕн кăна памарĕши ăна вăл. Выçлăх çул та сахал мар пулăшрĕ. Хаљ те тăрантаратех. Кăсем кăна килĕштерђђĕр...

— Ну!—Çĕрĕк тепĕр хут кăкăрне шап çапрĕ:— Кам манпа!?

Вăрахăн туртăнкаласан Шĕшлĕпе Хырăм килĕшрĕç. Тепĕр сăтрăм ĕçкĕ пуçланђĕ

Кулинен ђĕри çурăлас пек тапма пуçларĕ. Вăл хăй хăлхине хăй те шанасшăн мар. Малттине вĕлерессшĕн?—шутласа илнĕ хыççăн, çаксене итлесе ларнăшăн хăй ăшĕнђе тутлăн хĕпĕртерĕ.

Пĕр самантрах ун пуçне çĕнĕ шухăшсем тапса кĕђĕçĕ. Ăçтан тухас? Ђўређерен, терĕ ун пĕр шухăшĕ.

Ђĕввĕн утса ђўређе патне пыђĕ. Шăршăнса ларнă ђўређе уçăлмасҭ...

Ђўређе сасси кăтăртатрĕ...

— Кам вăл!?—тесе кăшкăрђĕ Кенă, кухнери ђўређе витĕр пăхса. Тăп! тăп! ура сассинђен пуçне нимĕн сас-ђĕв те илтмерĕ.

— Хăвăртрах Малттин патне! Кулине итлесе ларнă пулас!—тесе хистерĕ Кенă. Виçĕ çын ура сасси хыççăн тухса ђупрĕçĕ...

* * *

Вăйлăран вăйлă улаť çил.

— У-у-у!

Çутă уйăха тĕттĕм хура пĕлĕтсем хупăрласа илнĕ. Ґапаланаť хастарлăн, уйăх çук. Урисем тăлланаççĕ. Хăрушă, хăрушă. Тискер кĕрхи каç.

Ашшĕпе пĕр тăван теттĕшĕпе инкĕшĕ кăмака хыçĕнђе ĕçлесе ывăннă хыççăн тутлă ăйха кайнă.

Малттин çаплах лутра сĕтел хушшинђе лараť... Пўртре шăп. Пĕр перо шур хут çинђе ђĕр-ђĕр ђĕрĕклетни çеç илтĕнет.

Йаланах йурлакан шăрђăк та кĕçĕр йурламасť. Лутра мађђаран хăрăмланнă пăравулккăпа çакăннă пĕђĕк ламппăн çутти те вилейменха. Ђун хавалĕпе пўртри тĕттĕмпе кĕрешет.

Перо Малттин аллинђе çăмăллăн выљаť. „Çапла пирĕн ђухăнсем колхос уçма шут тытрĕç. Çак кунсенђе упполномођђăннăй ĕç пĕтерме кайаť“... Пĕр самантрах шур хут çинђен перо йăкăлт çўлелле сикрĕ.

— Танн! тан-тан! тан-тан! ансăр ђўређе танлатрĕ.

Малттин та перипе харăссăнах тĕттĕмрех кĕтессе сикрĕ.

Ђўређе ђарăнмасť:

— Тан-тан-тан-тан! Хам-хам, хам-хам, кўршĕ йытти такама тытса çийет. Хам-хам, хам! Ђўређе çаплах хăратаť. Тан-тан-тан! Пĕђĕкçĕ ђăмăр хĕнет ђўређене. Леш ăна хирĕç те çиленсе, те хăраса тан-тан-тан-тан-тан-тан танлатаť.

Малттин пĕшкĕнерех ламппă патне кармашрĕ.

— Уç, Малттин! Ђасрах уç!—пырса кĕђĕ ун

хăлхине çурăлнă шăнкравăнни пек ђĕрĕлтетекен сасă.

— Уç!—ђўређе тата хытăрах тискер йуррине йурлама тытăнђĕ.

— Ай, çитеççĕ. Уç!..

Малттин ђўређе умне пырса ўкрĕ.

— Кам у, мĕн? мĕн пулђĕ? Кулине, ес мар-и?

— Епĕ, уç хăвăртрах! вĕлерме килеççĕ.

Алăк уçмалла. Кам, кама, мĕншĕн вĕлереççĕ?— выђаŭ Малттинĕн пусĕнђи шухăш.

— Халех, халех уçатăп!—Алăк панђе Малттина уринђен тĕттĕм йарса тытрĕ.

— Ăçта, кама? Мĕн пулнă? Малттин тĕттĕм пăлтăрта. Ак алăк. Хаљ вăл уçса йама хатĕрленет.

— Ђасрах уç, кил хушшине кĕреççĕ!..

— Ай! пĕтрĕм! Тискер сасă çивĕђ сăнă пек пырса тăрăнђĕ Малттин хăлхине.

— У-у-у! вăт сана—Кулинене тўнкеççĕ.

Ухăљван, Çĕрĕк... пĕр çын кăна мар... Мĕншĕн? Уçас! Çук, уçаймарĕ. Сасартăк аса илђĕ... а-а-а вĕт хăрушă... хама та нумайĕшĕ кулаксем кураймаççĕ. Çĕлен пек пўртре вĕлтлетсе минтер айĕнђе çуталса выртакан „Кољт“ куç хупса илиђђен Малттинăн аллине кĕме ĕлкĕрђĕ. Çав хушăрах урам йенђе ђўређе куçĕ ђăнкăр туса сĕлĕ пĕрђи пек ванса кайаŭ. Кољт та çавăн хыçĕнђенех ши шăхăрса пуллине çĕмрĕк ђўређерен урамалла пĕрин хыççăн тепĕрне аркатрĕ. Пĕрре, иккĕ, виççĕ... Пĕрин хыçĕнђен тепре. Тăп-тăп, тăп-тăп тапăртатрĕ пўрт умĕ.

Ђĕркуçленсе ларнă Хĕритун арăмĕ Малттин ури тупанне çеç курса йулайђĕ. Малттин хыçĕнђен

Хĕритун та алă айне пулнă кусарне ђăмăртаса урама сиксе тухрĕ...

* * *

Тискер пўртре пĕр Малттинăн йинкĕшĕ Укахви çеç. Унăн та тухмалла. Йе тата темĕскер пулĕ. Арпаштарнă çўç-пуçлă Укахви пĕр кĕтессе хĕсĕнсе ларђĕ. Хăранипе нимĕн калама аптăраса: Кĕрсен калĕçха, терĕ. Микул турра кĕл тăвас. Вăл кирек мĕнле ăнсăртран та хăтарăт, тетђĕ ĕлĕк кукамай.

Йытăсем урамра такама тытса çийеççĕ. Хытăран хытă мăкăртатнă сасă...

-- Ак тамаша, кўршĕ Ахваниç те кунта мар-и? Вăл çав. Сасси çавăнах.

Йунланса пĕтнĕ Кулинене Хĕритунпа Ахваниç йеррипен пўрте илсе кĕђĕç.

Укахви упăшкине çакăнђĕ:

— А, Ваңкка ăçта, ăçта вăл?!

Хĕритун арăмне çиленнĕ пек пулђĕ.

— Ваңкка, Ваңкка, Ваңкка вăл шывра та путмĕ, вутра та çунмĕ. Луђђĕ ес йĕриђђен Кулинене çыхса йар - ха. Ав пит - куçĕ йун кăна. Хыттă хĕненĕ мĕскĕне.

Пĕр çур сехетрен тăнсăр выртакан Кулине куçне уçрĕ.

— Ăçта епĕ, ăçта?.. Мĕн тума ман пуçу тери ыратаť.

Йăнăшакан Кулинене пĕри те хирĕç ђĕнмерĕç!

— Калăрха, мĕн...—сăмахне каласа пĕтериђђенех каллех ун пуçĕнђи тăнĕ таçталла тухса тараť. Каллех хăрушă. Вилĕм унăн шыçса кайнă тутисене сĕртĕнет.

Малттин килнĕ çĕре Кулинен пуçне çуса шур йавлăкпа çыхрĕç. Халĕ ĕнтĕ ăна аван. Пуçĕ çеç ђăтма çук ыратаť. Малттин кĕрсенех Кулине умне кукленсе ларђĕ.

— Ну мĕнле, ăçтан суранларĕç?

Вăл хĕнекенсенђен пĕрне, Хырăма, Йакур арпалăхĕ патĕнђе тытса претçетаттĕл патне ăсатса хăварсанах килне ђупса килнĕ. Вăрăм хулăн куç харшисене хуплакан çўçĕ шывра ухса кăларнă пек. Хăй те пĕтĕмпех тара кайнă. Ĕçлĕ çынсем те ђупнă, анђах Малттин вĕсенђен те хытăрах ђупнă.

Кулине пуçне кăшт çĕклерĕ. Тепĕр хут, ђĕререн татăлса тухнă мамăк пек, çемçе сăмахсемпе ăшшăн:

— Кулине, мĕн? мĕн пулђĕ сана? тесе ыйтсан тин Кулине йунпа хытса çĕленсе кайнă тутисене уйăрђĕ. Кутник çине тăсăлса выртнă Кулине, Малтиншăн хаклă тантăшĕ, тантăш кăна та мар— аппĕш.

Кулине хуллен, сăмахсене тăссарах пăшăлтатса кал çма пуçларĕ:

— Вĕсем каçранах пирĕн патăрта. Хуçа вĕсене ĕçтере-ĕçтере 2 ђетвĕрт ытла сăмакун пĕтерђĕ. Манăн ђĕре сиссех пек пăрăнса ырата пуçларĕ. Ђăтаймарăм. Ĕмĕрне ун пек айкашманнине, кĕçĕр итлесха, мĕн калаçаççĕ вĕсем, терĕм. Ђылайђђен пĕђĕк пўлĕмре ђĕтресе тăтăм. Унта сана вĕлерме килĕшрĕç. Келати те ăна вĕлернĕшĕн нимĕскер те пулмасť, ăна никам та сисес çук, тесе лешсене хаваслантарђĕ. — Унтан... Унтан... Типсе ларнă çăварне çăтма-çăтма тытăнђĕ.

— Кĕçтука ђĕнĕрха, Кĕçтука...

Кулине каласа пĕтереймерĕ. Çăварĕнђен хĕп хĕрлĕ çăра йун шавласа анђĕ. Аййăпсăр йухакан йунпа Кулине ђыхăнђĕ...

Пўртрисем шартах сикрĕç. Кулине умне кукленсе ларнă Малттин йĕри тавра хупăрласа илнĕ çынсем çине трук çавrăнса: — Кĕçтук патне ђупăр! — тесе вăрăм пўрнелĕ аллине сĕлттерĕ. Пĕри тухса ђупрĕ...

— Тете, кўршĕ лашисене илме ђуптар, хăвăртрах пуљнитсана... Ђасрах, хăвăрт! — Ан мĕшĕлтетĕрха! терĕ Малттин Хĕритун тетĕшне. Хăй Кулинен пуçелĕкне айлăмрах туса тўрлетсе вырттарђĕ: —Ак çапла. Ыратать-им? Пуç ыратать-и? Ытла ан куљљанха, тухтăр илме карĕç". Малттин ђĕтрекен аллисемпе Кулинен хырăмĕ çине хунă аллине илсе ађăшласа йерripен калла-малла сăтăркаларĕ.

Кĕçтук хашкаса ђупса çитрĕ. — Ах, мĕн пулђĕ? Кам?.. Лашасем кўлеççĕ...

Малттин çине тинкерсе пăхрĕ, тата ыттисем çине те. Кĕçтукăн йăваш пит-куç çине кĕмĕл пĕрђи пек çутă куççуллисем йăрр йухса анђĕç.

— Ак çапла, йерипен тыт, терĕ Малттин Кĕçтука.

Кĕçтук хуралса çурkaланса ларнă аллине ђĕтретсе Кулинен вăрăм хура çўçлĕ пуç айне хуђĕ.

— Кулине, ђунăм, мĕн пулђĕ?

Кулине темĕскер каларĕ куран, кăвакара пуçланă тутине кăшт сиктерђĕ. Кĕçтук нимĕн те илтмерĕ.

— Кулине, ыратать-им?

Кулинен хупăннă хура куçĕ йăрр уçăлђĕ, хура куç-шăрçи çине çутă куççулли тумлакĕсем хĕсĕнсе тухрĕç. Пурăнас тесе ĕмĕтленнĕђђĕ...

## 15. Ратио.

ПЁР самантрах тутлă йăхран вăраннă Кипек-Кассин хреслĕ вăрăм урамсем тăрăх ҫĕнĕ хыпар шавласа сарăлҫĕ. Шыв ăсма тухни пус умĕнҫе, урамри урамра, пахҫари пахҫара, кўл хĕрринҫе, анҫах тухнă сас-хурана тĕрли тĕрлĕн ҫăмласа кавлерĕҫ. Ҫынсем хăйне май вĕҫсе ҫўрекен сăмаха „тет" тытса илсе пĕр самантрах хурараи шурă, шурăран хĕрлĕ сăрпа сăрласа „тет" текен халлапа васкаса тыттарать. Темскерле пысăкран та пысăк ĕҫ тунă пек хыппăнса ўксе, ҫăнтăхса, пурте тенĕ пекех, калаҫрĕҫ.

Нимĕн ҫукран шăна пек пĕҫĕкҫĕ „тет" сиксе тухать. Вăл хăмпăланса слон пек пысăк пулса халăх хушшине сарăлать. Вот вара пĕр кăна калаҫаҫҫĕ ҫăвар тутине шеллемесĕр.

Ухăљван хапхи умне Аҫҫа пасарне кайакансем лашисене шăварма килсе ҫарăнҫĕҫ.

Ухăљван ҫĕрĕпе ҫывăрман. Хăй ĕҫне тăвакан тарҫисене района тытса йарассине пĕлсе, Ҫĕрĕкпе Хырăма ăс пама та ĕлкĕрнĕ. Хаљ вăл урамра, ирхи сулхăн сывлăшпа уҫăлса малашнехи меслетсем ҫинҫен шут тытать.

— Пасара-им?—терӗ вӑл, ун пуҫ умне килсе ҫаранна ҫынсене.

— Ара! Пӑртакҫӑ шӑварса пӑхас терӗмӗртеха,—терӗ лешсенҫен пӗри.

— Мӗнле сасҫӗв илтӗнет?—тесе тӗпҫерӗ Ухӑљван.

— Пӗлсен есӗр пӗлетӗр ӗнтӗ, епӗр мӗн пӗлме пултаратпӑр,—сӑмах хушрӗ ӑна хирӗҫ пӗри лашине шыв ӗҫтерсе.—Ӗҫ, мур, ӗҫмест тата, шывне йуратмарӗ куран, мӑкӑртатса лашин ҫӗлпӗрневаскаса туртса ҫыхрӗ.

— Сирӗн йенҫе те тырӑсене ҫаратаҫҫӗ пуљ вӗт? терӗ Ухӑљван.

— Ара ҫапла ӗнтӗ, саккунтан иртмелли ҫук. Ман кӑшт ӗҫет, тиркемест, а-а, славни ӗҫетха.

Ухӑљван калаҫнӑ хушӑра хӑйӗннех тӗртет.

— Совет саккунӗ хушни мар вӑл. Совет пур хресҫене те пӗр тан пама хушать. Вырӑнти комуниссемпе комсомолсен ӗҫӗ вӑл. Самопратствӑ вӑл.

— Еппин, ҫапла иккен. Ара, епӗр мӗн пӗлетпӗрха, терӗ леш. Ухӑљван иртен-ҫӳрен ҫынсем кӑшт итленине кура, кӑркка аҫи пекех, хӗрсе кайса ҫинеҫине калтӑртатма тытӑнҫӗ.

— Аван кӑтартаҫҫӗ хӑйсен кӗсйишӗн. Пирӗн йалта халиҫҫен курман-илтмен тӗлӗнмелле йапала туса хуҫӗҫ.

— Мӗн тата?! тесе кӑшкӑрҫӗ тепри ҫӗлпӗрпе урхалӑхне туртса ҫыхса. Ыттисем те сивӗ шыв ӗҫсе уҫӑлнӑ хыҫҫӑн ҫупма васкаса лашисене ҫавӑрса тепӗр хут итлерӗҫӗ.

— Ман ҫуртра тӑранса пурӑнакан тӑлӑх-турата,

çамрăк хĕре, пусмăрласа мăшкăл тунă. Леш, шеремет, ĕçерĕнсе тухса тарнă пулас та кайран хăваласа çитсе пуçне çапса çурнă.

— Аа!

— Нуу!

— Ну, ĕнтĕ ку ĕç мар!..

Лаша шăвармэ ђарăннă ђăвашсем тĕлĕнсе кайса пĕр-пĕрин çине пăхса илђĕç

— Кам тавраш̆ĕ апла хăтланма пĕлнĕха, тесе тишкĕрђĕ пĕри, — камсем?

— Çав комсулсен ĕçĕ ĕнтĕ, тата кам ĕçĕ пултăр. Пĕтĕм йал пĕлет, терĕ Ухăљван тутине пăркаласа.

— Уншăн ахалех каçарас çукха, терĕ тепĕри. Пасара кайакансем урапи ăшне кĕрсе ларса лашисене малалла уттарђĕç.

Ухăљван, йулаш‹инђен, вĕсем хыççăн: çӳлте камсем лараççĕ тетĕр есĕр? Сухал айĕнђе лăхлатса кулса йађĕ. Çул иртекенсем ку сăмахсене те илтрĕç.

Мĕнле йыхрэвларĕçши вĕсем çак халлап çинђен Ађђа пасарĕнђе?..

Пасарĕ çавнашкал. Кам пĕлместши вăл пасара? Унта-кунта тухсан, кам ăçтан илтнĕ ку халапа тесе ыйтсан: Ађђа пасарĕн‚ен илтсе килнĕ, тет. Унта каланă, тет.—Ађђа йенђен йăсăрланť, — тенисене ђас-ђасах илтме пулаť. Ухăљван, анђах пулса иртнĕ ирсĕр хыпара ратио-телекрам урлá Ађђа пасарне пĕлтернĕ хыççăн, кăшт лăпланнă пек пулђĕ. Ав лере, шыв хĕрринђе, хĕрарăмсем кĕпе кивеççĕ. Кӳлĕ çинђе хурсем, кăвакалсем кэкалатса çӳреççĕ. Аллисем хур урисем пек хĕрелнĕ, анђах ăна пăхмаççĕ. Хĕрарăмсен çу кунĕ çитнĕ.

Тарйе вĕлтĕртетсе кӳл хĕррине çăрхаласа анђĕ. Ыттисем вăл йатшăн çеç аннине сисмерĕç пулас. Тарйе кӳл хĕррине аннине курсан, Марйе те хура кĕпе йĕмсем пуçтарма тытăнђĕ. Ашшĕ пӳртенкине те пулин лаххан çине ђиксе кăларса пăрђĕ те, пĕђĕкçĕ йăвăç витре çине хурса кӳл хĕррине тухса утрĕ.



Вунă хĕрарăм пĕр пасар...

— Çĕнĕ хыпар илтниха есĕр?—Вăрăм туна пек нăйăлтатрĕ пĕри.

Ĕçлеме ђарăнса пур те ун сăмахне итлеме хатĕрленђĕç.

— Мĕн çинђен?..

— Кала ђасрах, мĕн виртлесе тăратăн?—терĕç хăшпĕрисем.

— Нивушлĕ-ха есĕр илтмен?.. Ухăљван хăтасен усрав хĕрне, Кулинене камсулсем хĕнесе вĕлернĕ, тет.

— Кай! Мĕн пустуйа калаçатăн.

— Çуук! Тĕрĕс пулмĕ ĕнтĕ вăл...

— Ара, камсулсенђен темĕн те кĕтме пулĕ,— терĕ сăмах пуçламĕш.

— Ĕçсене пăрахса кӳлĕ çинђе какалакан хурсем пек кĕрлесе шавларĕç.

— Шел те-çке мĕскĕне. Анђах хĕр пулса çитĕннĕђ ђĕха. Йепле маттурђђĕ, таврара та çук вĕт, терĕ пĕри хуйхăрса.

— Ей, мĕнле кăна ĕçлемерĕши. Мĕскĕн, урамра та пулаймарĕ вĕт.

— Ан кала та ĕнтĕ. Йут çын панђи пурăнăç, пурăнăç мар ĕнтĕ вăл. Çав тери шел мĕскĕне.

— Айăп Ухăљван хăтасенђе мар. Мĕн есĕр апла та капла тăсатăр.—Вĕсем-ха ăна çын кулли тумасђĕçех. Ак кађђа парас умĕн тумлантарнă та пулĕђђĕç. Ухăљван хăтасене те ĕнтĕ айăпласах пăрахмалла мар. Револљутси тухнăранпа мĕн тĕрлĕ кăна вĕсене туламарĕçши. Нимĕн йулми çаратса тухрĕç вĕт.

— Йал çынĕ йала çаратма пуçларĕ те, пурăнăç пĕтет ĕнтĕ,—тĕртсе хуђĕ тепри.

Нимĕн шарламасăр ђӳкекен Кĕркуç арăмĕ, йулашки кĕпине пăрнă хушăра, çĕкленсе кайрĕ.

— Такама такам çаратăтха?

Вăрăмăн тăстарса йурланă пек Ухăљван тăхлађĕшех калаçрĕ:

— Ах, ађам, мĕн калатăн ес. Намăс мари сана

кунта капла калаçса тăма. Мантăнам, камха çав кĕлетсене тустарса çӳрекенни пулђĕ?!

— Ман упăшка хăй ирĕкĕпе никама та пăсăк туман. Тивĕçрен тунă пуљ, тăк тăмалах никама та аптратмаççĕ.

— Ах намăссăр! Питне кĕççе çĕленĕ пулас санне.

— Çук! Ху намăссăр есĕ! Ку-у-лак! —Кĕркуç арăмпе Ухăљван тăхлађĕш çатăртатса карĕç. Ытти-сем кулса пăхса тăђĕç. Пуса хутнă çĕртен ытти çынсем ђупса çитрĕç.

— Çап. Пар ăна.

— Кам, кама...

— Мĕн пулђĕ.

— Мĕн пултăр. Пĕлĕн ĕнтĕ пирĕн хĕрарăмсен характĕрне, тесе лăплантарђĕ пĕри, кĕписене йĕм кантри хушшине çырттарса. Лешсем калла çав-рăнса утрĕç. Хĕрарăмсем те кăшт лăпланђĕç.

Тарйепе Марйе те илсе килнĕ йапаласене ђасах çуса пĕтерсе килнелле утрĕç.

— Паљуксен умĕнђе такам кăшкăрашаť,—терĕ пĕри.

— Аťа-ха çав урампа çаврăнса кайар,—хушрĕ Марйе.

Хырăмпа Çĕрĕк арăмĕ килсе çитнĕ. Арĕсленĕ упăшкисемшĕн çапăçас пек хурахлатаççĕ.

— Çапла есĕр...

— Ара камаха хупас.

— Ан шарлаха. Унта çын çийекенсем лармаççĕ вĕт. Айăплă мар пулсан кăларса йараççĕ. Ĕçĕ те пĕтнĕ.

— Ĕçĕ пĕтнĕ. Курха есĕ, ађисен çине тăхăнмалли

çук вĕт. Есĕр тытса йамасан вĕсем унта кайаймаççĕ те. Паҕук, ес хуҭ те мĕн кала та, айăпĕ çелскирех ĕнтĕ.

— Паҕук пĕтерҕĕ. Çав есех пĕтертĕн. Çын пуçне çийетĕн вĕт. Çылăхран хуҭ хăра... Уласа йĕме пуçларĕ Çĕрĕк арăмĕ. Паҕук нимĕн калама аптранă пек пулса, ик аллисене ик йенне сарса пăрахрĕ.

-- Вот пăх ĕнтĕ. Пыр та вĕсемпе калаçса татăл. Çын пуçне çийетне теме пуçларĕç. Хăçан тухас çак йытă тулшнăçĕнҕен. Такăшне итлес... Ав, пĕрне хаҕ çапса çĕмĕрнĕ. Ăна епĕ çимерĕмши ĕнтĕ.

— Паҕук кум, ăна сан çине каламаççĕ. Кусене мĕншĕнха есĕ çырса йаратăн.

— Епĕ мар ăна-а-а...епĕ марр. Упăшкăрсене... Малттин хăваласа çитсе тытнă вĕт. Ну, мĕн тума пултаратăпха епĕ. Рас ĕç çапла пуçланса кайнă. Ерне ăна пĕтерсе пăрахасҕĕ те. Ĕç манра мар.

— А-а...

— Вот мĕскер...

— Пĕлеткешĕн мĕн туса çӳрет вăл. Аҭа ун патне...

Çĕрĕкпе Хырăм арăмĕсем урам тăрăх акăрашса утрĕç.

Ҕӳреҕисене уçса пуçĕсене кăларса пăхакансем те пулҕĕç. Хăшпĕрисем хапха умĕнҕе кулса пăхса йулҕĕç. Нимĕн ăнланмасăр тĕлĕнсе кайса...

— Мĕн пулнă.. Мĕн? тесе ыйтса пĕлекенсем те пулҕĕç. Лешсем ҕаранса тăмарĕç, утрĕç.

Тарйепе Марйе вĕсем хыççăн утмарĕç. Пĕр такăрлăкран пăрăнса Анаткас урамне тухрĕç. Тарйе хăй кил хапхи умне çитсен ҕарăнҕĕ. Марйе те кăщт ҕарăнса тăҕĕ.

— Марйе, мĕн калĕçши Кулинене курма кайсан.

— Çуук. Ухмах, йатна çĕртес тетним. Ак, унта епĕ вĕлерсен те каймастăп.

— Йеплеха санпа пирĕн йатăмăрсене çĕртме пултараççĕ. Мĕн ес калаçатăн.

— Çук! çук! Ес хут те мĕн ту. Епĕ каймастăп. Комсомола çырăнна тет вăл. Кайран тата хамăра та комсомол тейĕç. Пĕлетĕн ĕнтĕ, комсомолта ĕретлĕ çын çуккине. Унта хутăшса хам йата хам çĕртес çук ĕнтĕ. Марйе килне утрĕ.

— Вилҗехши? Çук, пĕрре те вилес пек мар, терĕ те, Тарйе те килкартине кĕҗĕ.

## 16. Вăтăр кĕмĕл пĕр тевет.

КУЛИНЕН тантăшĕсем пайан пит салхуллă. Пўрт тулли çын, пĕри те пĕр сăмах хушмасӗ. Пурин те шухăшсем Кулине çинҫе.

— Йеплеши?...

Кулине пуљнитсара. Ăна, паҫах ăнсăр пулнăскере, йун йухса пĕтиҫҫен, çийĕнҫех, таса сурпансемпе, алшăллисемпе çĕнĕрен улăштарса туртса çыхса Н... Кассинҫи пуљнитсана ăсатнă.

Пурин те пуçра çав шухăш.

— Йепле... Çăлса хăварма пулмĕши?..

Сĕтел хушшинҫе тапак туртса ларакан Малттин кĕсйинҫен хут татки туртса кăларса темскер çырам пек турĕ те, калаçма пуçларĕ:

— Ну, йулташсем, куççуљ тăкса ларнипе йуратнă йулташăмăр Кулинене те çăмăл тăвас çук, хамăр ĕççене те малалла йарас çук. Кулине мĕншĕн çапла пулса выртнине пурсăмăрăн та аван пĕлмелле... Комсомолĕссен йалти активиссемпе пĕрле туса ирттерекен пуххине уçăлнă тесе шутлатпăр,—терĕ Малттин хуллен, нихăçан ҫĕтремен сассине ҫĕтретсе.

Тĕксĕм, ҫăх куçĕ пек çеç мĕкĕлтеттерекен ламппă çуттипе çуталнă пўртре комсомолĕссемпе активсен пуххи уçăлҫĕ.

— Кулине сывлăхĕ пит те нађар. Мĕн пур йулашки вăйĕпе вăл вилĕмпе кĕрешсе çак сехетсене ирттерет.

Тен ун вĕри ђĕри ак çак самантрах тапма ђарăнђĕ пулĕ. Йатарласа икĕ йулташа пуљнитсана йатăмăр. Уљки персе çитет пуљха. Мĕн хыпарпа çитĕ?...

— Ађђа пасарне çитсе таврăннă ĕнтĕ ку хыпар. Вилсе кайнă теççĕ.

— Ађђа пасарĕ кађки... Тетсем тăрăх калаçар мар-ха. Уљки татăклах пĕлтерĕ. Малттин, айта кала,—терĕ пĕри.

— Йулташсем! Çак вăхăтра йал хушшинђе клас кĕрешĕвĕ калама çук хăватлăн пынине епĕр пурсăмăр та лайăх ăнланатпăр... Револђутсиллĕ, çĕнĕ ĕç тăкаксăр иртме пултараймасť. Кулаксем пире кунпа хăратас çук.

Кулинен пĕр тумлам йунĕ те ахаљ çухалас çук. Ку пирĕншĕн çав тери йывăр йапала, анђах вăл пуçăннă ĕç тĕрĕс çул çинђе.

Малттин тăруках калаçма ђарăнђĕ те, вут пек çунакан тарăн куçĕсемпе пурин çине те тинкĕрсе пăхса илђĕ.

Шывланнă куçĕсене тутăр вĕçĕпе типĕтсе, сĕтел умне Уљки тухса тăђĕ. Унăн тăп-тап, ђăмăр, хĕрлĕ питçăмарти сăрхăннă пек. Ђĕрĕ, выљаса тăракан куçĕсем кулмаççĕ, вĕçĕ-хĕрри курăнман тĕпсĕр çанталăка тĕсмĕртсе пăхнăн туйăнаççĕ. Вĕри сăмахсем ђĕтресе тытăнкăллăн тухаççĕ!

— Кулине... шанђăксăр... Тухтăрсемех çапла каларĕç. Тăнне çухатнипех хытă асапланать. Çĕрĕк каç икĕ хутђен вилсе кайрĕ. Тимуксем пырса çитрĕç

те... Кулине патёнђен темён ђул уйăрлас килмест пулин те, епё сире пёлтерме комсомолсен пуххине килесех, терём...

Уљки сăмахёсем татса парайmарёç. Пёр-икё хутђен пўлём йывăррăн сывласа илђё... Пуху хăй ёçне пăрахмарё.

— Йулташсем, кулаксен ирсёр ёçё пире ђарса тăрас çук. Хăрамалла мар епир. Çав иртнё пухурах йышăннă ыйтăва пурнăçа кёртме пуçăнас.

— Кунта пёри те хăранăран пуçтарăнман. Епёр хамăрăн вăйхала халех кăтартмалла. Ваљкка, есё кайиђђен çав колхоса тăвасах пулат, терё вăл Уљки.

— Тёрёс!.. Правёљно!.. хёрўллё сасăсем хастаррăн илтёнђёç.

— Кёçтук сăмах ыйтат, Ваљкка. Кёçтука сăмах пар, терё Саљук.

Шухăша кайнă Малттин васкасса: А, та, айта кала,— терё.

Кёçтук арпашăннă çўçёсене йывăр аллипе йакатрё. Типсе çуркаланнă тутисене пăркаласа хуллен калаçма пуçларё:

— Пуçланакан колхоса мана первейех çырăр, Упаља тетене те. Вăл та шалат тăват. Еп хам сăмаха пётертём, терё те кайса ларђё.

— Мана та çыр! Мана та!..

Малттин аллинђи кранташ пёр самантрах çур листа шур хута йатсем çырса, сăрласа тухрё.

— Тата кам çырăнмасăр йулђё? — тесе ыйтрё Малттин.

Пурин куçёсем те Саљук çине тёллесе пăхнине Малттин асăрхарё.

— Ну, Саҫук, тата есё мёнле?

— Еп хам ҫав тери хавас, ун ҫинҫен иртнӗ пухурах та епӗ каларӑм, анҫах ҫав Вирукпа тӑн тухрӗ.

— Ку пёркун пуҫӑннӑ ёҫе ҫирӗплетни пулаӗ ёнтӗ, — тесе сӑмах хушрӗ Малттин.

— Кулине... ех, Кулине ҫук... терӗ Кёҫтук ҫӑпата пуҫ пек хуралса йакалса кайнӑ ҫышкипе ҫуркалanса хытнӑ тутине шӑлса.

— Мён ҫухлӗ ҫунса ҫӳрерӗ вӑл колхос ҫинҫен калаҫнӑ хыҫҫӑн. Первӑй ҫырнатӑп, — терӗ вӑл мана...

Кёҫтук хыпӑнса ӳкрӗ, тата темёскер каласшӑнҫӗ те, каласа ҫитереймерӗ.

— Ҫыр...

— Кулинене ҫыр!., Хӑй кунта ҫук пулсан та, вӑл уншӑн такҫанах ҫуннӑ, — хушса хуҫӗ тепри.

Малттин алли васкамасӑр, ҫемҫен пусса „Кулине“ тесе ҫырса хуҫӗ. Йавлӑк вёҫёпе тута хёррине хупласа тӑракан Уҫка маларах сётел патне утса пыҫӗ:

— Йулташсем, епӗ... Колхос йатне... „Кулине“ тесе калас мари?

— Тёрёс!..

— Правёҫнӑ-ӑ!.. — темиҫе сасӑ кёрлесе кайса Уҫки сӑмахне хупларёҫ.

— Да, она этого достойна! Тивёҫлӗ! — терӗ Малттин ура ҫине тӑрса: -- Кулине илемлех илтёнмест, „Калина“ тесен аванрах мари? Ҫавӑн пек калар.

— Правёҫнӑ, „Калина“ тес, — пурҫе алӑ ҫупса йаҫёҫ.

— Хирĕç калакан çук пулĕ? Йурĕ, çапла çирĕплетĕпĕр, — терĕ те Малттин Саҫук йеннелле çаврănса пăхрĕ. Саҫук пăркаланса илҫĕ:

— Ҫисти аптăрамалла... Ку Верукпа... ăмм ăм-м. Епĕ ăна çаврайас çук. Улҫки пулăшсан çеç.

— Улҫкийе шефа илгерес!

— Правĕлҫно!

Саҫук пĕр иккĕленмесĕрех çырăнма килĕшрĕ.

— Çыр, „Калинă“ колхосне епĕ хавассăн кĕретĕп.

— Ну вот, йулташсем, вăтăрăн пултăмăр. Ĕç... Ку вăйпа епĕр улăп тăвне аркатса пăрахма пултаратпăр.—Малттин кăшт кулам пек турĕ, кулни тухмарĕ. Çапах та хуйхăпа сывлакан пуху кăшт çăмăлланҫĕ.

Çĕмйуна сăмах паҫĕçĕ.

— Йулташсем, çак вăтăр çынпа çеç епĕр канма пултараймастпăр. Йалти пур çынсене те йертме тăрăшас пулат. Ку çăмăл ĕç мар, нумай ĕçлемелле, терĕ Çĕмйун...

Кĕркуç кăштăртатса çитсе кĕҫĕ.

— Мĕн сас-хура?—тишкĕрҫĕ пĕри.

— Çĕк лешсене Атмоттела ăсатрĕ. Ун пек ирсĕр шуйттансене ҫĕрĕллех çисе йарас килет. Влаç çук, епĕ вĕсенҫен арăма валҫи урай çума мунҫала туса памалла. Ах! ҫорт поппери..

— Ниҫҫево! Совет саккунĕ вĕсен çулне картмаллипех картĕ, ун çинҫен кайран. Кĕркуç, итлеха, колхос тăватпăр вĕт, вăтăрăн çырăнҫĕç ĕнтĕ, вĕриленсе туллашакан Кĕркуçа лăплантарҫĕ. Кĕркуç калаçса ҫарăнса тĕпелти пĕҫĕкçĕ кутник çине вырнаçрĕ.

— Ну, есĕ мĕнле?

— Йа суклассĕн! ман çул çавăнта пăрăнать, лашам та çавăнталлах сĕтĕрет.

— Ку ыйту çинђен пайан каласса пĕтеретпĕр пулĕ ĕнтĕ. Çитес кунсенђех ђухăнсен пуххи туса тăнлантарасси çинђен те çакăнтах палăртса хăваратпăр пулĕ, хирĕç çук пулĕ вĕт?

Сађук сăмах илђĕ.

— Çав сӳтсе йавассишĕн кунта ларатпăр та, сӳтсе йавас пулать çав, иккĕн-виççĕн алăк хупса, питĕрĕнсе сӳтсе йавмалли ыйту мар вăл. Ун çинђен пĕр епĕр, комсомолĕссем çеç мар, пĕтĕм таврари йал калаçать.

— Мĕн теççĕ?—тĕпђерĕ Çĕмйун.

— Мĕн теççĕ, пуйансене ĕлĕк те аван пулнă, халĕ те аван, ав Ухăљван ывăлĕ çĕр улпутне тухма хатĕрленет, теççĕ. Ку çитместим тата сана? Йулташ, сем, ман шутпа ку ыйту çинђен пайанах сӳтсе йавас пулать.

— Мана сăмах парха! терĕ Кĕркуç.—Вĕсем çинђен каласса çăвар-тута та сайа йамала мар. Ђортсене. епĕ вĕсене ђĕрĕлле çатма çинђе шарит тумалла. Ун пек влаç çукки пĕтерет. Çапас пулать! Çапас!..

— Ђимха, ђим, вĕриленмесĕрех,—претçетаттĕл лăплантарать.

— Вĕриленмеп кунта, кулак майлă йурлаççĕ. Толой поткулађник! Мĕн пађĕ сана кулак, кулак йуррине йурлатăн вĕт!

Тимĕр пек çирĕп, пысăк ђышкине ђăмăртаса Çĕмйун сăмси патне çывăхартрĕ:

— Ак! мĕн ку!?—Патрак ђышки çав. Комсомол

ёретне кулак йуррипе варлама ирёк парас çук. Малттин, тавай çыр, халех çыр. Райкома хам тăратăп.

— Правĕђнă! Çыр.

— Тата калаçас текенсем пури?

— Справккă парамха — терĕ Çĕмйун, хёрелсе кайса йăвашшăн.

— Тавай, кала.

— Кĕркуç кунта таçта аташса кĕрсе кайрĕ. Кулак шухăшĕсем çинђен, темĕскер çинђен. Хăйне хăй тытма пĕлмест. Ўсĕр çын пек çапкаланать. Тĕрĕс, Кенă ашшĕ пуйан, кулак пулнăскер, çак таранђђен вĕсем патĕнђе Кулине пурăнђĕ иккен. Кунта вăл саккуна пĕлменни курăнђĕ.

— Саккун, саккун! терĕ Кĕркуç, Çĕмйун сăмахне пўлсе.

— Саккун çав, саккун тăрăх пурăнма вĕренес пулать. Саккун тарçă тытма ђарманнине те манас пулмасть. Тăлăх турата тăрантса, тумлантарса усранине те пирĕн манас пулмасть.

— Ха-ха-ха!!—пурте кулса йађĕç.

— Çĕмйун, ес справккă паратăп терĕн вĕт?—терĕç ыттисем.

— Ман справккă çапла: кулак майлă пулнăран мар епĕ çапла каларăм. Кенати 4-мĕш çул вĕреннĕ ёнтĕ. Патшалăх çав хушăра сахал мар уншăн укçа тăкнă. Нинă Никколайĕвнă та çаплах, йулашки çул вĕренет. Çакăн ђухлĕ вĕрентнĕшĕн пĕр усăсăрах йеплеха аслă шкултан кăларса йамалла. Кенати сотсиалисăм тăвас ĕçре усăллă çын пулма пултарать. Пĕркун епĕ унпа пулсан вăл мана, Ленина вулатăп, терĕ.

— Суйат вăл!—терĕ уҕҕитлĕ. Карл Марксăн «Кăпиталне» вуламасти тата?

— Ун кăпиталĕ „Йеркĕн", „Йеркĕне" вулат вăл, терĕç ыттисем.

Çĕмйун такăнтарнине пăхмаст, малалла шăват.

— Мэн шутпа кунтан çырса йамалла мар. Епĕр кунтан çырса пĕлтерни вăл левый еакип пулса тăрат. Парттипе комсомол унпа халĕ кĕрешет. Çавăнпа та епĕ апла тăвасшăн мар. Епĕ пĕтертĕм,—терĕ Çĕмйун.

— Ну и справккă! Йулташсем, Çемйун сăмахĕ тăрăх епĕр, çакăнта ларакансем пурсăмăр та йăнăшатпăр пулат. Çĕмйун çеç тĕрĕс çулпа пынă пек курăнҕĕ. Анҕах ку тĕрĕс мар. Ку меттафиçиккăллă йапала пулса тăҕĕ.

Кулаксен усал çурисене аслă шкултан тасатнине вăл сулахай пăрăнҕăк та терĕ, тата „спетсойетство" теместне? Çук, йулташсем, епĕр капла сӳтсейавни вăл лайăх револҕутсиллĕ спетсене хатĕрлес ĕçре пĕтĕм массă тишкĕрсе ĕçлени çеç пулат. Калинă капли пире хупларĕ. Вăл вилмен пулсан, кунта Кенă мĕнле „спетсă" иккенне аван курăннă пулĕҕҕĕ те, анҕах уп çинҕен халҕ калаçмалли те çук. Вăл пыра киле хăйех курăнĕха. Йулташсем, епĕ çакăн пек ресолҕутси çыркаларăм, итлĕр, вуласа парам.

Малттин вулама тытăнҕĕ:

«Кипеккасси йалĕнҕи комсомолĕссен пуххи ак çак ыйтăва лартса сӳтсе йаврĕ: Мускаври пуйан, кулак Ухăлҕван ывăлĕ Кенати Иванҕҕăпа пуп хĕрĕ Нинă Никколайĕвнă вĕренеççĕ. Хăйсем мĕнле шкулта

вёреннине лайăх уççăн каласа памаççĕ. Кенати Иванђђă çинђен халăх хушшинђе „вăрман улпуђĕ çĕрме пуйан ăратранах пулаť“ текен сас-хура сарăлнă, Нинă Никколайĕвнă аслă уђђитлĕ пулаť, çавсем çинђен райкома çырса пĕлтерес, хамăр çакна хушса паратпăр:

1) Кенати Иванђђă пайан кун та йалта пурăнаť. Кулак ывăлĕ. Ашшĕ те, хăй те совет влаçне хирĕç тăраť. Тĕттĕм халăха улталаса йăнăш çул çине йертсе йама тăрăшаççĕ.

2) Нинă Никколайĕвнă пуп хĕрĕ. Опшђĕствăллă ĕçре нимĕн те ĕçлемест. Халăха çутта кăларас шухăш нихăш йенђен те курăнмасť. Комсомол йађђейккине пулăшу тавраш туни çук. Кулаксемпе ĕçкĕ-çикĕре çӳресе çеç вăхăт иртерет. Çакăн пек çынсемшĕн аслă шкул алăкĕ хупăнмалла. Ун çинђен сире çырса пĕлтерес терĕмĕр.

— Тата хушмаллисем çуки?

— Çук!

— Кам çак ресољутсийе йышăнас тет, вĕсем алă тăратаççĕ, терĕ Малттин.

Пĕр çын пе‹ех 29 алă харăс йаш çĕкленђĕç.

— Кам хирĕç,—алă тăратăр!

— Пĕрре!

Ыйтусем пĕтрĕç.

— Пуху хупăннă тесе шутлатăп тенĕ сасса интернатсионал йурри хупларĕ... Йурласа пĕтернĕ çĕре пăђтаљун килсе кĕђĕ. Хăй пĕр çĕклем хаçат-шурнал йăтнă.

— Йађейккă çекреттарĕ кунта пури?

— Пур, терĕç пилĕк-ултă сасă.

— Пайан районран телефонокрам килђӗ.—Çӗмйун телефонокрамне васкаса вулама тытӑнђӗ. Ун йӗри тавра ыттисем те сӑрӑнђӗç.

„Вырӑна çлетӑвӑттӗл пырать. Райкомол претставиттӗлӗпе „Çамрӑк колхоçнӗк“ хаçатӑн кореспонтенђӗсем те тухрӗç.

Райкомол çекреттарӗ“.

— Етто првӗљно!—терӗ Кӗркуç.

— Ну вот, есӗ тӗрӗслемесрен хӑранӑ. Пирӗн йулташсем унта ахаљ лармаççӗ çав.

— «Правӗљно». Ађасем çунатланђӗç.

Çамрӑк комсомолӗс, пионерсен вошаттӑйӗ, çӑтçат аллисене хире-хирӗç çапса илђӗ. „Районран килеççӗ“ тенине илтсен куран, çапла хӗпӗртенипе кил хушшине тухрӗ... Ыттисем те пӗрерӗн-пӗрерӗнех урама тухса, килӗсене саланђӗç...

## 17. 1918-мĕш çул.

Кĕркуç, Кĕçтук, Малттин, Улђки тата комсомол йађейккин техниђђески çекреттарĕпе çтена хаçат ретактăрĕ çеç тăрса йулђĕç. Нумайђђен вĕсем пĕр-пĕринпе сăмах хушмасăр тарăн шухăшсем сӳте сӳте ларђĕç.

Тӳлек, çавăнтах темĕскерле киђем, сывлама йывăр.

Пĕђĕкçĕ ђӳређерен кĕнĕ тĕксĕм кăвак уйăх тĕпелти сĕтел урлă кармашнă аллипе ансăр вуђахран вĕри хĕлхемлĕ кăвар таттине туртса илђĕ. Хĕрлĕ-хĕм пек хĕрсе çунакан вуђах кăшт шанма пуçларĕ, тен сӳнет?—Çук. Вăл сӳнме кăварланман. Çил ађи трупаран килсе шăхăрђĕ. Шăранма пуçланă хĕрлĕ-хĕм кăвар пĕрре çуталаť, тепре тĕксĕмленет. Амаланђĕ, шупка сарă çулăм йарса илђĕ, кĕрлесе çунма пуçларĕ.

Пӳртри тăхлапа шăраннă уйăх çутти вуђах хĕлхемпе хупланђĕ.

Ак хаљ çутă. Кĕçĕрхи каçа вуђах çуттипех ирте-рес пулаť. Копператтивра ревиçи пынипе краççын та илсе пулмарĕ, терĕ. Малтан мĕн пур пек краççынĕ çунса пĕтнĕ лампине силлесе, Кĕçтук вăрăмăн

сывласа: капла луђђă, Уљки, ес çав вуђаха хăйă таттисем пăрахкалаха.

— Çунаť вĕт, хаљ вăйлă хĕрсе çунаť, терĕ Уљки калаçма пуçласа.—Çаплах пулĕши? Кулинен çамрăк ывăнма пĕлмен ђĕрес пек ђĕри тапма ђарăнĕши? Пĕртте шанассăм килмест.

Кĕçтук вăрăммăн сывласа йађĕ. Сăмси айĕнђе темĕскер мăкăртатса илђĕ. Ун хыççăн Кĕркуç, Кĕçтука пулăшасшăн пулса:

— Хуйхăрнипе нимĕн те тăвас çук. Пушали пуçа усса лар.

— Кĕçĕр, тен районран та Çитĕç. Кулине те тепле... тесе, вĕсем çĕрĕпех çапла çывăрмасăр çĕр ирттерме шут тытрĕç. Çав хушăрах çтена хаçађĕ хатĕрлес, терĕç.

— Манăн кайас пулĕ... Кĕçĕрех пуљнитсаня çитес... терĕ Кĕçтук.

— Ес кай,—терĕ Уљки.

— Вăл-ку пулсаń системе васкăр, терĕ те Малттин, Кĕçтука ăсатма тухрĕ.

Уљки шухăша кайрĕ: „Унăн селĕм ӳт-пĕвĕ сивĕнсе хытсах выртрĕши? Тымарĕсем тăрăх вĕркесе йухакан хăмаç пек хĕрлĕ таса йунĕ те никçан та текех тапса йухас çук...“

Кулине мĕншĕн çапăçнине, йепле вăл хурлăх курса ӳснине Уљки никçан та манас çук.

— Дас!—тесе сывлăша çавăрђĕ Кĕркуç. Ыттисем пурте Кĕркуç йенне çавăрăнса пăхрĕç. Уљкин те пуçĕнђи шухăшĕсем айаккалла пăрăнђĕç.

Малттин пӳрте килсе кĕнĕ çĕре Кĕркуç калаçма пуçларĕ.

— Шуткă мар. Сахали çын пĕтрĕ ун ђух. Халĕ те çав ун ђухнехи майлах...

— Мĕн çинђен, хăçанни çинђен калаçатăн?—ыйтрĕ çтена хаçат ретактăрĕ унтан.

— Вунсаккăрĕмĕш çулта çапăçса çӳренисем пуçа йатăнса кĕреççĕ. Вот мĕн çинђен епĕ шутлатăп.

— Кĕркуç, каласа парха пĕр-пĕр епписот çинђен. Вçотки есĕ курман мар, курнă,—терĕ Малттин,—тавай калаха.

— Мĕн çинђен каламши?—шухăшларĕ Кĕркуç.

— Ну, çав краштăн вăрçинђе çӳрени çинђен. Лайăхрах астăвакан вырăнсене ил.

Кĕркуç хăрах аллипе пуçне хыçса илђĕ. Ыттисем пурте вăл каласса кĕтсе ун çине пăхрĕç.

— Ак итлĕр еппин, пĕр фактă çинђен калам. Ун çинђен нумай çынсене калакаласа панă та. Тен хăвăрах та илтнĕ пулĕ?

— Ниђђево.

— Интереснă!

— Аŕа кала, епĕр илтмен. Кĕркуç калама пуçларĕ.

Ку 1918-мĕш çулта пулнă йапала. Шуррисем Ђĕмпĕрпе Хусан хулине туртса илес умĕн. Пирĕн отрет пурĕ 100 çынранђђĕ. Епĕр шуррисем хыçне пӳлĕнсе йултăмăр. Ťармалла... Пулăшу тавраш ниçтан та курăнмасŤ. Вăхăт кĕскелсе çитет.

Тата пĕр-ик кун капла тăрсан, пире пушă алăпах тытса илме пултараççĕ. Апат-çимĕç те пĕтрĕ... Пушкăртсем хăраççĕ, йахăна та йамаççĕ. Ăçта? Хамăрăннисем патне. Пур вăрçă хатĕрĕсене: винтовккăсене, тупăсене, пулеметсене Шурă шывне

путарса, хамăр кĕске пăшалсемпе, пумпăсемпе çеç йултăмăр.

Унтан пĕђĕкçĕ ушкăнсене уйрăла-уйрăла, кам ăçтан, йепле тарма пĕлет — çапла салантăмăр.

Епĕр тăваттăн пĕрле таратпăр—кăнтăрла çывăратпăр, çĕрле утатпăр, çапла утса пĕр пĕђĕк тутар йалне çитсе кĕтĕмĕр. Йал хĕрринђе пĕр пĕђĕкçĕ, нађар пушкăрт çурђĕ ларать.

Хуçи йурлă çын иккенĕ паллах... хăйĕн Карташĕнђе çўрекен çăмне тăкман кађакинђен пуçне урăх нимĕн те çук пулас. Ăна та кĕтĕве йаман. Килхушшинђе шăтса тухнă курăкпа тăрантса усрать.

Çынни епĕр пырса кĕрсенех хăраса ўкрĕ...

— Ан хăра, епир слушпăран таврăнакансем, — тетпĕр.

— Çук, епĕ шуррисем пуљ тесе хăрарăм... Ку саманара çав тери хăрамалла. Пайлар*) каллах çийеле хăпарма пуçларĕç, тет.

Вăл совет ирĕк май çын иккенне пĕлсен, пĕр пытармасăрах, епĕр ăçта кайма шутлани çинђен йĕтĕмпеих каласа пĕлтертĕмĕр.

Ђăн малтан тумтир çинђен калаçса татăлтăмăр. Хамăрăн мĕн пур пек йапаласене ăна парса, тĕрлĕ çĕтĕк-çатăк пишметсем**), камсулсем тăхăнса йатăмăр.

Ытти йулташсем тутарла калаçма пĕлменни пĕтерет. Вĕсем тутарла пĕлес тĕк, пире никам та паллас çук. Ђисти касса лартнă тутарсем пекех пулмалла. Тата çул та пĕлместпĕр.

---

*) Пуйянсем.

**) Тумтирсем.

Ђухӑн тутар пире ҫав тери шеллерӗ пулас. Унӑн ђӗри пирӗн ђӗресемпе пӗрле тапаť.

— Епӗ те сирӗнпе пыратӑп... Мана Керим, теҫҫӗ. Ҫак пурнӑҫпа нуша курса пурӑнас пур сирӗнпе пырса, ђухӑнсен ирӗкӗшӗн ҫапӑҫса вилетӗп, терӗ, хӗрсе кайса Керим. Епӗ пур пӗрех нушаланса пурнатӑп... арӑмпа кађака иккӗш пурӑнкалӗҫха, терӗ.

Ҫапла кӗтмен ҫӗртенех тӑваттӑнран пиллӗкӗн пултӑмӑр. Нимрен те паха, ҫул пӗлекен йулташ тупни тата та аван.

Каҫ пулса хӗвел ансан, Керимсен йалӗнђен пиллӗкӗн тухса утрӑмӑр. Ҫӗрле сӗм тӗттӗм. Керим пурнӑҫне хамӑр куҫпа курман пулсан, ку пире таҫта, шуррисем тӑнӑ йала йертсе кайаť вӗт, тесе те, шикленме пулаť. Анђах ун пек иккӗленме май ҫук.

Ҫутӑла пуҫларӗ. Пӗр пысӑк тутар йалне ҫитсе кӗтӗмӗр. Пуйан йалӑн 2—3 меҫеђӗсем ҫурлисене кукӑртса лараҫҫӗ.

Керим хурӑнташӗсем урлӑ ку йалта шуррисем пуррине пӗлтӗмӗр. Вӑрах шутласа тӑма вӑхӑт ҫук. Хӑвӑтрах калла тухса, урӑх ҫулпа вӑрман патнелле васкарӑмӑр. Ывӑннӑскерсем вӑрманта канатпӑр, тесе хавасланса утатпӑр.

Акӑ вӑрман. Уҫӑ, сулхӑн сывлӑш вут пек пӗҫерекен ђӗрене сивӗтсе кантараť. Шаларах кӗрерха, тесе васкатпӑр. Унђђен те пулмарӗ:

— Стой! – тесе кӑшкӑрнӑ сасӑ шӑппӑн ларакан вӑрмана йанӑратса, таҫта айакка кайса ҫухалђӗ.

Ҫав вӑхӑтрах пире хирӗҫ ҫут пакунлӑ офитсерсем сиксе те тухрӗҫ. Нумайӑн... Шухӑшласа тӑма вӑхӑт ҫук. Ђӑтлӑх ӑшне хӑвӑртрах тарса ђӑмса

ўкрём. Пăшал кĕрслетнипе пуђă шăхăрни çеç хăлхара...

Çапла епĕ вилĕмрен хăтăлтăм. Ытти йулташсем те тарђĕç. Куç-пуç алђăранипе нимĕнне те пĕлеймерĕм. Пуçа çĕр çумне хурса итлетĕп...

— Шпион!...

— Мин кресђенствă сапимайуç!...

— Кресђенствă!?. Мĕн вĕсем кунта çапкаланса çӳреççĕ, шпион вăл, пĕтерес пулаť ăна,—тенĕ сасăсем илтĕнђĕç.

— Йа, йа!.. йа, мин шпион!? мин хайĕрçĕ, нишђи!..

— Мы знаем таких нищих!...

Çав вăхăтрах умлă-хыçлă пăшал сассисем йанраса карĕç...

Пĕтерђĕç Кериме...

Кĕркуç калаçма ђарăнса сывлăш çавăрђĕ. Унтан татах сăмахне тăсрĕ.

— Сывлама ђарăнса итлетĕп. Лашасем тăлхăрнипе ахăлтатса кулса калаçнă сасăсем илтĕнеççĕ. Хама хам пĕлместĕп... Ђĕре ђăтма çук вĕресе кайрĕ.

Алă шăнăрĕсем хутланнипе ђышкăсем ђăмăртанаççĕ, анђах епĕ пĕђђен, пĕр револђвĕрпе нимĕн те тума çук...

Шăп. Нимĕн сас-ђĕв те çук. Мĕн тумалла ĕнтĕ. Мĕн пулаť, мĕн килет—ђукун çул йенелле утас. Анђах малтан Кериме кайса курмалла..

Хырăмпа шуса çул çинелле тухатăп. Татах сывлама ђарăнса илетĕп—шăпах. Йăвăç çулçисем те ђăштăртатса çупăçма ђарăнса, Керимăн йулашки сывлăшĕ тухса кайнине итлеççĕ. Савăнса йурласа

вăрман илемне кӳрекен вĕçен кайăксем те урăх тĕслĕ сасăпа, хуйхăллă йурланăп туйăнаť.

... Керим вилнĕ.

Вăл аллисене ђăмăртаса месерле йăванса кайнă. Унăн йăваш, пысăк, сенкер куçĕсем нихăçан та урăх уçăлас çук, терĕ те, Кĕркуç вăрăмăн сывласа илсе, калаçма ђарăнђĕ. Ыттисем те пĕр-пĕрин çине пăхса, вăрăмăн хăстарса сывласа илђĕç.

— Çапла вара Кериме вăрмана илсе кĕрсе патаксемпе пĕр аршăна йахăн шăтăк ђавса çĕре ђикрĕм. Мĕнле вилни çинђен ђăвашла çыру çырса тутăрпа ђĕркерĕм те, патак çумне çыхса, патакне Керим тăпри çине ђиксе лартрăм.

Кериме пытарас ĕçе пĕтернĕ çĕре каç пулђĕ. Револђутсишĕн пуçне хунă Керимрен уйрăлса Пĕкĕлме стантси йенелле утрăм.

Ťул çутăлнă çĕре пысăк кӳлĕ умне пырса тухрăм. Ăçтан каймалла, çул ăçта? Нимĕн те пĕлместĕп. Шыв хĕррине лартăм та йулашки çăкăра çиме тытăнтăм...

Пăхса тăранмалла мар илемлĕ вырăн. Йешерсе ӳсекен хăмăшсем хушшинђе кайăк-кăвакалсем нăртлатни илтĕнет. Тикириксем, ђарлансем шурă çунађĕсене сарса пĕр вырăнтан тепĕр вырăна вĕçе-вĕçе ӳкеççĕ. Шыв çинђе те, шыв тĕпĕнђе те темĕн ђухлĕ ђĕрђунсем хăйсен пурнăçĕпе савăнса пурăнасшăн кĕрешеççĕ.

Калама çук илемлĕ, лăпкă канăçлă вырăн. Ним шухăшламасăр, хам куç умĕнђи йапаласене çеç пăхса савăнса, ывăннă çанçурăма кантарас килет, анђах тутлă шухăшсем çеç вĕсем.

Щыв хĕррине ларса апатланнă хыççăн хăмăшлă кӳлĕ хĕррипе утатăп.

Айакра пăшал сассисем илтĕнеççĕ.

Кӳлĕ тăрăх кайсан ĕç тухмасть...

Ҫăтлăх пек кашласа ларакан хăмăшсем витĕр ҫĕпĕллĕ кайăк-кăвакалсене хăратса, кӳлĕ урлă шапăртатса ишсе каçатăп...

Ҫукун çул инçе мар. Анҫах ун тăрăшшĕпе шуррисем... Сӳрене кайакан ҫăвашсемпе пĕрлешсе ҫукун çул урлă каçатăп.

Çĕрле. Атăл хĕрринҫе. Прахут тавраш курăнмасть. Мĕнле хамăр йенне каçас? Ишсе каçма хăрамалла: ывăннă, шывĕ те сивĕ.

Кимĕ тавраш шыраса, Атăл хĕррипе утатăп. Ним сас-хура та çук. Тĕттĕм... Упа сурҫăкĕ пек çумăр пĕрĕхет. Хутран-ситрен йăй-йай туса пăрлатса хăлха кутĕнҫе çил кашлать. Хăрушă, тискер каç. Ҫĕре шикленет. Атăл хĕррине килсе çапăнакан шыв хумĕсем шĕпĕлтетни çеç пăртакçă ҫĕрене йăпатать...

Атăл шывĕ хĕррипе кимĕ шыраса çапкаланса çӳренĕ хыççăн, шывран инçех те мар, нӳрлĕ хăйăр çинҫе ӳпне выртакан кимĕ куратăп.

Ăна курсан ҫĕре çав тери хĕпĕртерĕ. Пуçри хăрушă шухăшсем вырăнне савăнăçлă шанҫăксем килсе кĕҫĕç. Ывăнса минкелнĕ ăш-ҫикке темĕскерле вăй хĕвел пек вĕрилентерсе, алă-ура вăйне хастарлатрĕ.

— Еп телейлĕ, кам мана пулăшатьши!.. тесе кăшкăрас килет. Капла хĕпĕртесе тăма вăхăт çук...

Çак çывăхрах шуррисен составĕ, кимĕ çумĕнҫех пăшал кĕпçине ман йенелле тăсса, еп çывхарасса кĕтсе выртакан çын та пури тен?

Пĕр кĕске вăхăтлăха ҫаранса сĕм тĕттĕм ҫаршав витĕр ҫĕр ҫумне хăлхана хурса итлетĕп. Кимĕ йенелле тĕсмĕрсе пăхатăп. Нимĕнле сас хура та ҫук. Кимĕрен пуҫне урăх мĕлке, ҫĕрĕ-ҫун тавраш ҫук.

Кимми пур, анҫах ишмели кĕсменĕсем ҫук. Вĕсене шыраса вăхăт иртерсе тăма та май ҫук. Пĕр минут та хаклă... Ҫутăлиҫҫен Атăл урлă каҫса, хамăр йенелле шутарас шухăш пуҫ мимине шаккать...

Вăрах шутласа тăмасăр ўпне выртакан кимме шыва сĕгĕрсе кĕртрĕм. Кимĕ пуҫне выртса, Атăл шывĕ урлă алăсемпе ишсе каҫма тытăнатăп...

Таҫтан хăйаматран хирĕҫле тухнă ҫил кимме кайалла хăвалать. Ҫапах та асапланкаласа ише-ише Атăл шывĕ варрине ҫитрĕм пулас. Вăйлă йухăм ҫине лекрĕм ахăр, пĕрте кимĕ малалла ишменпек туйăнать. Малалла шăвас вырăнне шывăн вăйлă йухăмĕ ман пысăк кимме ҫĕмпĕр йенелле йухтарма пуҫларĕ.

Атăл шывĕ хăватлă, урма пуҫланă хумĕсемпе кĕреше-кĕреше вăйхăватсем те вĕҫне ҫитсе килеҫҫĕ. Алăпа мĕн тĕрлĕ хытă ишсен те тулашса килекен шыв хумĕсене ҫĕнтерсе кимме малалла шутарма май ҫук.

Ывăнса халтан кайнă ҫанҫурăма пăртакҫă та пулин кантарас тесе, ишме ҫаранса, кимĕ сакки ҫине тĕренсе пуснă урасене кимĕ тĕпне антаратăп. Урасем пĕтĕмпех шăнса кўтсе кайнă куран, йĕпипе типпине те туйми пулнă.

Кимме шыв тула пуҫларĕ. Мĕн тумалла? Шыв тăкмалли хатĕрсем те ҫук... Кимĕн лармалли саккине хăпартса илетĕп. Кунпа та ĕҫ тухмасть. Мĕн тĕрлĕ сирпĕтсен те, кимĕри шыв нумайланнăҫемĕн нумайлана пуҫларĕ.

Кимĕ тĕпĕ шăтнă... Пĕтĕмпех хăраса ӳкрĕм. Мĕнле-ха еп хăратăп тесе ыйтатăп хамран хам.

Ăш-ђик икке уйăрлса кайрĕ. Ăшра икĕ ђĕре шакканă пек туйăнаť. „Пĕр ђĕре" пĕтĕмпех хăраса ӳкрĕ, „хăраман ђĕре" хам хăранинђен кулса: — мĕншĕнха ес хăратăн, ей, хăравçă, тесе каланăн туйăнаť. Çын хăй ăшĕнђе çапла ик шухăшлă, ик „ђĕре" пур иккенне çакăн ђухлĕ пурăнса та туйманђђĕ. Ăна та курса пăхрăм. Çапах та хăраман ђĕре çĕнтерђĕ.

Пурпĕрех, вилсен вилетĕп, вилмесен ђĕрĕ йулатăп тесе, хăрами пултăм. Хăрасан та ним усси те çук вĕт, пустуй вăйа пĕтерни çеç.

Çĕр тĕттĕмми, çанталăк тĕтрелене каранни ытла та канçĕрлет. Уйăх çути çутăлман каç шыв вĕçĕхĕрисĕр пек туйăнаť. Хăш йенне кăна пăхмарăн, пур йенђе те шыв. Шыв! Хуралса хӳмеленсе тăраť.

Ăçталла ишмеллине те пĕлмелле мар. Çил вĕрнипе çеç пăртакçă тĕсмĕрме май пур пек, анђах вăл та шанђăклă мар, улшăнма пултараť. Кунта та улталанасси курăнсах тăраť.

Кимме пилĕк таран шыв тулђĕ... Хăвăртрах кĕпейĕме хывса, револьвераваррине хурса прешкĕпе пăђăртаса çыхса çурăм хыçне çакатăп. Ак ман кимĕ йăкăртатса шыва пута пуçларĕ...

Вилсен те çапăçса вилес тенĕ шухăш ала-урасене вăй пађĕ.

Алхасса шăпăртатакан Атăл шывĕ хумĕсемпе çапкаланса ишетĕп... Шывăн сиксе выђакан хумĕсене çĕнтерсе, çиле хирĕç ишме май çук. Йухăм майлăрах ишсен, анаталла нумай анатăн. Çапах та çил ăçтан вĕрнине асăрхаса, шыв йухăмĕпе йухса ишме

пуçларăм. Умра ним те курăнмасť. Пăхмастăп та, çил ăçтан вĕрнине ђухласа çеç хăйаккăн выртса ишетĕп. Кас-кас таçта çӳле улăхса кайнă пек туйăнаť. Кайран çӳлтен айала антарса тепĕр хумсен айне пĕтĕрсе ђикет. Тата тепĕр силлĕ хумсем хама хăмăшран тунă пăкка çĕкленĕ пек çӳлелле çĕклесе кăлараççĕ.

Мĕнле пăтранмасťши ку пысăк шыв, пĕр хускалса кайсан?..

Ыванса çитрĕм. Хăшпĕр ђух ђаранса çурăм çине те выртса пăхатăп. Анђах анаталла хытă сĕтĕрсе кайнăн туйăнаť.

Пысăк хум çӳле çĕкленĕ вăхăтра куçа пысăк хура мĕлкĕсем курăнса кайрĕç. Атăл хĕрри курнаť, Атăл хĕрри... Çав тери савăннипе ђĕре çурăлса кайас патне çитрĕ. Шыв çинђе ишнине те манса кайрăм. Сăмса-çăвара шыв кĕрсе ђăнтăхтарма тытăнсан çеç хам ăçта тăнине астуса, йулашки вăйа пухса Атăл хĕрринелле ишетĕп...

Ăшă хĕвел ађашласа пĕçертнипе тарăн ăйăхран вăрантăм

— Ку сан тĕлĕки?—тесе ыйтрĕ пĕри.

— Ну... тĕлĕк, тăн çухалнă...

— Ăнланмалла...

— Хам ђĕре йулнине те шанмастăп... Ăçта еп? тĕлĕк курмастăпши? — тесе хамран хам ыйтатăп. Хĕвел пĕçертнине туйатăп. Ак ђул таткисем хам çывахрах сапаланса выртаççĕ. Алăпа йатса пăхатăп. Йывăррине те туйатăп. Ак тата сарă хăйăр ылтăн пек сарăлса вырта́ť. Атăл шывĕ те пайан лăпкă, куçкĕски пек çуталса выртаť. Ăшă ун çинђе сарă хĕр пек авкаланаť.

Тӳлек. Инçех те мар шурă хăйăр çине хĕрлĕ хĕрлĕ хăвасем ӳсе-ӳсе ларнă. Ђăн-ђăнах еп ђĕрĕ йулнă иккен. Еп пурăнатăп,—тесе кăшкăрас килет. Анђах çав хушăрах пуçа çĕнĕ шухăшсем килсе шаккаççĕ.

— Тармалла. Кунта вăрах ларсан, шуррисем килсе вĕлерме те пултараççĕ. Шухăшсем ђĕрене хăвăрт сиктереççĕ.

Пĕђђен. Атăл хĕрринђи çыран çине улăхатăп. Калама çук илемлĕ çуртри пусси сарăлса выртать. Ăшăнать вăл хĕвел ăшшипе, йăпанать кайăк сассипе.

Йалсем витĕр, уйхир тăрăх, вăрмансем урлă каç-са çапла вара киле килсе çитрĕм.

Кĕркуç сăмахне калаçса пĕтернĕ хыççăн пурин çине те сăнаса пăхса тарланă çӳçсене шăлса типĕтрĕ, Малттин Кĕркуç каласа панă сăмахсене мухтарĕ. Аван каларăн, писсаттĕл пекех интереслĕ ăнланмалла, терĕ.

Улђкин те кăмăлĕ тулђĕ.

— Ех, мĕншĕн ун ђух епĕ пĕђĕксĕ пулнăши?—Епĕ те çапла çӳренĕ пулăттăм.

Çтена хаçат ретактăрĕ кулса йађĕ. Ун хыççăн комсомол йађейккин çекреттарĕ лăхлатрĕ. Анђах Малттин вĕсен йенне çаврăнса пăхсан лешсем ним сăмах каламасăрах хăйсен ĕçĕсене тума тытăнђĕç...

Нумайђђен вĕсем кĕтрĕç. Кивĕ ђӳређе хуппине çил „ађи“ шакканинђен пуçне, вĕсем урăх нимĕнле сасђĕв те илтмерĕç.

Кĕркуç калаçса пĕтернĕ хыççăн темĕскер лăпланса итлерĕç. Кашни ăнсăртран шăкăртатса илтĕннĕ сасса вĕсем çапла лăпланса итлерĕç...

## 18. Мускавра...

КЁРХИ çанталăк тискерленнĕ çемĕн тискерленет. Шăхăртса вĕрекен сивĕ çил типсе хытнă армутисене тайат̆. Çатрака çапă йăвăççем салхуллăн тайкаланса лараççĕ. Уйхир, çырмасем, сарă çулçисене тăкса çаралнă вăрмансем шурă йурпа витĕннĕ.

Кашни çуртран хура тĕтĕм ўркенсе авкаланса тухат̆. Ђўређесем шапшур шăнса ларнă. Йĕмсĕр ђупакан ђăваш ђухăн ађисем вĕри ђĕлхисене çуласа, пăспа шуралса ларнă лаша çинђе, сивĕпе ĕнтĕркенĕ иртен-çўрене хăрах куççемпе пăхаççĕ. Пĕђĕкçĕ пўрнисемпе сăтăрса çемçе йура хĕрлĕ ђĕлхи çине хураççĕ...

Малттин йалтан Мускава кайни пайтах пулат̆ ĕнтĕ. Çыру та илмен... Йалтан çĕнĕ хыпарсем кĕтет вăл.

Ăçта пăх—унта çын. Пурте таçтала васкаççĕ. Ку канаш ирĕкĕн ђи хĕрўллĕ вуђахĕ. Пурăнăç кунта вĕрет. Урам йухăмне кĕрсен васкамалла пулмасан та васкатăн. Малттин утăма кăшт ўстерсе пăхат̆. Унтан... Унтан... çынпа пĕрле ђупат̆. Пурăнăç таçталла ђĕннĕн туйăнат̆. Пайан та Мускав урамĕсем йаланхи пекех çынлă. Пĕтĕ арăм пек пысăк хырăмлă

портфĕл, тĕкĕр-тĕкĕр пушмак, калуш, ђусинкă, туйа, картус, шĕлепке, йавлăк—пурте васкаççĕ, ђупаççĕ. Малттин те вĕсем пекех таçталла васкаŤ. Ун айанп савăнăç. Йеплеха савăнмалла мар, вăл йалта хăй акса хăварнă колхосран çыру илнĕ. Хаљ те ăна кĕсйинђе аллинђех ђăмăртаса пыраŤ. Шартлама сивĕ пĕлĕтелле кармашса ларакан Мускавăн 12 хутлă çурђĕсем пăспа витĕннĕ. Пуљварта хĕлĕн виђĕкĕн йĕпписемпе кăшăлланнă латакай çăка йăвăçсем шăлĕсене шаккаса лараççĕ.

Малттиншĕн пайан çулла. Ăна ăшă. Кĕсйинђе выртакан кĕренлĕ кăвак канвирт шăнтма мар, аллине ђăтма çук пĕçерет. ВаскаŤ пиплиоттеккăна.

Пынă çĕртех Малттина пĕри алă тытса ђарђĕ.

— Малттин, есĕ мари, терĕ çуха ăшĕнђен тухнă пуç.

— Епĕ, а-а, Иванов йулташ! Сывă-и?

Пырсан пырсан Иванов Кенати çинђен ыйтрĕ.

— Вăл ăçта çӳрет. Универçитета што-то çӳремест. Есĕ кашĕтсă вĕсен йалĕсем, пĕлетĕн пуљ?

— Пĕлмесĕр, пĕлетĕп. Йалта вăл... СуйатăпŤ, хаљ вăл тĕрмере—кирпĕç шутлаŤ! Ăна шкултан кĕркуннех кăларнă. Унăн ашшĕ кулак. Универçитета кĕнĕ ђух вăл суйа токкументсем таçтан тупнă...

Иванов тĕлĕнмерĕ.—Калап, пирĕн çын пек марђĕ çав. Вçу урăхла калаçађђĕ. Ăçта оппоçитси вăл çавăнтађђĕ... Апла, а, мĕншĕн тĕрмене хупнă?...—Малттин ђарăнкаласа тăђĕ. —Питĕ вăрăм истори..

— Çапах та калаха! Интереснă,—терĕ йулташĕ.

— Кенати универçитетран кăларсан йалта сакăвăр пекки тума хăтланнă. Ун круппинђе—ессер, Михетер йатлăскер, пĕр кутăн кайнă уђђитлĕ, пирĕн

çын мар, пуйан ывăлĕ, кимнаçис пулнăскер, йал пуйанĕ пулнă. Ну вĕсем хресҌенсене пăтратма пуçланă. Вăрçă пулаť. Комуниссем пĕтеççĕ, тесе сăмах саркаланă. Кĕркунне пулăшком машшинине пăснă. Орканисатсиленнĕ колхоса Ҍут салатса йаман.



Вăрçă пулсан колхоçнĕксене вĕлерессĕ, тесе хăратнă. Хăшĕ-пĕри конеђнă шаннă.

Ну кайран, ак халъ нумай пулмасť, вĕсене пирĕн ђасем тытвса сута панă.

— Вот, молотсы, апла шанђăклă çынсем пур сирĕн?

— Пулмасăр, пур. Унта халъ актив пит вăйлă Уђђитĕл пур аванни, Сађук—шахťор, тошĕ халъ пит ђипер ĕçлет. Ну ђухăнсем те ăнланма пуçларĕç. Иртнĕ çулти каниккулта епĕ унта круппă петнотты орканисоваť турăм, халĕ питĕ аван ĕçлет, тет.

Çапла калаçкаласах Ивановпа Малттин вĕрене-кенсен I-мĕш универçитет патне çитрĕç.

— Ну епĕ кунта, терĕ Иванов.

— Сыв пул.

— Ђипер кай.

Малттин пиплиоттекка çитиђђен кĕсйинђен кă-ларса тепĕр хут вулама тытăнђĕ.

Вăхăтлăха тăван йалне вĕçсе кайрĕ. Ак çĕрккаç. Мăн Кипек лăппăн тĕксĕм кăвак ђатăр айĕнђе тĕ-лĕрет. Мерђен куçлă ылтăн кĕмĕл пек çут çăлтăр хĕлхемĕсем. Малттин амĕш пурăнакан тĕнĕ пек пĕђĕк ђўређи çинђе уйăх çутти выљанаť. Малт-тинăн ватă амăшĕ мĕн тăваťши халъ? Мĕн ĕçлеççĕши çамрăксем? Хĕрлĕ улах куран: йурă, ташă, ĕç, савăнăç...

Ей аван, аванçке. Пĕр çеккунт хушшинђе пин çухрăм. Малттин каллех пиплиоттеккăна Карл Маркс „Капиталĕ“ ăшне кĕрсе ўкрĕ. Килти пекех, ĕçђен-лесе, çĕр тĕрлĕ шухăшсене туртса кăлараť. Сă-махсем тăкăскă шăрçаланнă, кашни сăмах нумай,

пысăк шухăшсемпе çыхăнтарат̆. Çавăнтах пурнăçри меслетсемпе виçсе пăхат̆. Малттин: Тĕрĕс! Вот çутă пуç, тавта пуç сан ăсхакăлна, ес маншăн малта йертсе пыракан çут çăлтăр, ăслăлăхăн тĕпсĕр çăл куçĕ,—пахаласа хĕпĕртет...

Шăп... хутран ситрен хут, кĕнеке ђаштăртатни, ĕкхĕм! ĕкхĕм! ӳсĕрни илтĕнет. Çавăнтах çыраççĕ, вулаççĕ, пĕррĕн пĕррĕнех. Ђĕлхе вĕççĕн, пăшăлтатса калаçса, кĕнекисене калла парса кăткă пек çын хĕвĕшекен урама тухса килсене уттараççĕ.

Малттин вăрах ĕçлерĕ, йулашкинђен урама тухса трамвай çине ларђĕ.

* * *

Тверской урам кĕтессинђе иккĕн умлă хыçлă хуллен утса пыракансем, кăшт ђарăнса калаçнă хыççăн, мăшăрланса тĕттĕм тăвăр урама кĕрсе çухалђĕç.

Пĕри, ресторанра ĕçсе ӳсĕрĕлнĕскер, тăртуар çинђе калла-малла ђӳхенсе тăрат̆. Сăмси айĕнђе темĕскер мăкăртатнă хыççăн кăшкăрса йађĕ.

— Извозчик!

— Даешь извозчик!

Çавăнтах такçи шăхăрса иртсе кайрĕ. Хыçалта сирпĕнсе сапăнакан хăйăрпа йур автомопил хыçĕнђи хĕрлĕ çутта хупăрлат̆.

Пуљварсенђе шăп... Тĕрлĕ мĕлкĕсем çеç йулнă.

— Вот мĕнле?—терĕ Малттин, хире-хирĕç ђикнĕ аллисене шаларах пытарса,—пурăнаççĕ вĕт? Лӳмпĕнсем, вот пурнăç лĕкки ăçта?

Ун хыççăн пĕри, тутăхнă сасăпа:

— Ей! шпана!—тесе кăшкăрђĕ.

Малттин Варваркка урамне кĕрсе çухалђĕ.

Варваркка урамĕ кунĕпе шавланă хыççăн тарăн ăйха кайма пуçланă.

Лăпкă. Ăшă тăман вĕл гĕртетсе йарăнса анаť. Малттин пысăк урисемпе фасфаљтран хытарнă тăртуар çинђи йур çине йĕр туса пĕр çурт умне пырса тăрăнђĕ.

Стутентсен çурђĕ çывăрмасť. Шавланă сасă урама персе тухаť...

Малттин кăритор айĕнђи пĕђĕкçеççĕ пӳлĕме кĕрсе салтăнђĕ.

Ансăр, тĕксĕм, çтеналлă пӳлĕм. Ĕлĕк унта çак çуртра сыхлакан творник пĕр пĕђђен пурăннă, халђ унга виçĕ стутент пурăнаççĕ. Вырăнĕсем тирпейсĕр йейĕлсе лӳђĕркеннĕ. Тарланă ђӳређе çинђе кĕнекесем хутланнипех урлă-пирлĕ пăрахăннă. Пĕр çуртран тепĕр çурта куçнă вăхăтри пек майсăр сапаланса вырта ççĕ.

Сĕтел çинђе çисе пĕтереймен çăкăр татăкне илсе тăварпа пуççа çиме пуçларĕ. Çав вăхăтрах Малттин йулташсем хашкаса килсе кĕђĕç. Пиђђĕшсем хĕп-хĕрлĕ помитор пек йалтăртатса тăраççĕ.

— Ăçта пултăр?

— А-а! „Хĕрлĕ мăкăђ“ куртăмăр.

— Хăш театтăрта?

— Пысăккинђе, терĕ пĕри.

— Ăçта, парха, епĕ те çийем.

Малттин аллинђи çăкăр татăкĕн çуррине хуçса пĕрне пађĕ. Леш сĕгел çинђе ларакан крафинри шывпа ик çăварлăх çăкăр таткине тăварпа пуçса хыпса ђăмларĕ.

— Аҫасем, манăн та ҫиййес килҫĕ. Ҫăкăр тупма пулаťши?—терĕ пĕри.

— Тупса килха, ҫиййес,—терĕ тепри.

— Кĕтесре сутакансем ҫывăрса лараҫҫĕ пулсан ҫеҫ, тухса пăхамха еппин.

Пĕри ăшă тум тăхăнмасăрах урама тухса ҫупрĕ.

Ҫаплă Мускав ҫывăрмасťха. Тешурĕт тăвакан трамвайсем нăркаса иртсе кайаҫҫĕ. Макаҫăн ҫўреҫисене Хĕрлĕ ҫар уйавне irrterме тĕрлесе илемлетнĕ. Раснах тăртуарсем тăрăх сарса тухнă каслă фонарсем сўннĕ. Пўрт ҫумĕнҫи лампăсем ҫеҫ ҫурт нумĕрне ҫутатса, пĕр ывăҫ ҫуттине ҫул сарса тикĕсленĕ урам варрине пăрахнă.

Хула хĕрри тĕттĕм кăвак пĕлĕтпе витĕнсе ҫывăраť.

... Таҫта, айакра, шăннă ҫул ҫинҫе лаша таканĕ шакăлтатни илтĕнсе ҫухалҫĕ. Малттинпа пĕрле пурăнакан стутент пĕр кĕтесре пысăк хулăм утийалпа ҫĕркенсе ларнă майрана курах кайрĕ. Арки ҫине темскер йапала ҫĕркесе тăмаланă. Аллисене хирехирĕҫ ҫиксе пăс кăларса лараť.

— Ей, ҫотка, што есť!?

— Аҫам, паранкăпа, какайпа хушса пĕҫернĕ кукли. Хаклă мар. Вĕри.

Стутент аллисене хире-хирĕҫ сăтăркаласа вак укҫине хулăм, капан пек купаланса ларнă майрана тыттарсаваскатрĕ.

— Ҫасрах пар. Шăнма пуҫларăм.

— Халех, милок, халех...

Майра ҫыхланнă аллисемпе ҫыхăнса ўкрĕ.

Стутент хашкаса стутентсен пĕрле пурнакан ҫурта ҫупрĕ.

Çурт çывăрмасť. Çӳлти хутран Капкас йурри, пĕр харăс алă çупни татăлса тухаť. Хăш пĕрисем сăпса пек хут çине тăраннă. Урăх шкулсенђе вĕренекенсем килсе ларнă, тĕрлĕ ыйтусем тăрăх калаçса сӳтсе-йаваççĕ.

Малттин йулташĕ сивĕ сывлăша йатса пӳрте кĕђĕ.

— Есть!

— Аван.

— Утилизировать надо!—терĕ пĕри.

— Простое воспроизводство!—терĕ тепри.

— Ниђђево!—Малттин те сăмах хушрĕ.

Апатланђĕç. Мĕн пур пеккине пурте пĕр танах уйăрса çирĕç.

— Ађасем, аťăр пăртак ĕçлер ĕнтĕ, терĕ Малттин.

Малттинăн тепĕр йулташĕ кĕтесре купаланса выртакан кĕнекесем хушшинђен Йеççенĕн кĕнекине илсе вулама выртрĕ.

Малттин иккĕмĕш ерне ĕнтĕ Ленин сођђиненине вулама пуçлани. Пайан та вăл Ленинăн „Империалисăм кăпиталисăмăн ђи çӳлти сыпăкĕ“ йатлă кĕнекине тытса вулама ларђĕ.

Тата тепĕр йулташĕ, йулашки кун вĕренекенскер, типломлă проектă çырма ларнă. Кăвак питлĕ хутсене сарса, йĕрлесе çырнă ђертешсене вулама тытăнђĕ.

Малттин Ленин çырнă кĕнекен 64-мĕш питне уçсан ђарăнса тăђĕ. Тата тепĕр хут хăй ăшĕнђе вуласа тухнă хыççăн пурне те илттермелле сасăпа вуласа парасшăн пулђĕ.

— Йулташсем, ак итлĕрха, Ленин йулташ мĕнле интереслă фактă шыраса тупнă. Тĕлĕнсе кайăн. Питĕ харахтĕрнă йапала.

Ыттисем ĕçсене пăрахса пуçсене тăратса:

— Ну! тавай вула! терĕç.

Малттин вулама пуçларĕ.

„Епĕ ĕнер Лонтăнри Ист-Ента (Ĕçлекенсен кăварттăлне) кайрăм, унта пĕр ĕçсĕр çынсен пуххине кĕтĕм. Епĕ унта тискер сăмахсем илтрĕм; пур сăмахĕ те—çăкăр! çăкăр!—тенĕн илтĕнет. Киле таврăннă ђух ун çинђен шухăшларăм та, империалисăм кирли ĕлĕкхинђен ытларах паллă пулђĕ маншăн... Епĕ опђĕствă ыйтуне татасшăн. Анклири хĕрĕх мĕлйун халăх хушшинђе кăраштăн вăрçи ан пултăр тесен, пирĕн колони политтĕкçисен, ытлашши халăха вырнаçтарма, хапрăксенђе, рутниксенђе тăвакан таварсене сутма çĕнĕ çĕрсем çавăрса илес пулаť. Ку импери вар·хырăм ыйтăвĕ, епĕ ăна кирек хăçан та çаплах каланă. Есĕр краштăн вăрçи ан пултăр тетĕр пулсан, сирĕн империалист пулас пулаť".

Малттин вулама ђарăнђĕ те плансем умĕнђе ларакан йулташĕ çине пăхрĕ.

— Ну мĕнле?..

— Питĕ уççăн, пĕр пытармасăрах çаптараť, кам кăтартнă ку сăмахсене?

— Ленин кăтартнă,—терĕ Малттин.

— Кам апла çырнă?

— Çеççил Ротс. 1895-мĕш çулта.

— Мĕнле çын пулнă вăл?

Малттин кĕнеке çине пăхса илсе, йулташне хирĕç тавăрса каларĕ:

— Çеççил Ротс вăл милйонер, финанс королĕ пулнă.

Малттин тата тепĕр вырăна вуласа паӟĕ:

— Ак тата тепри мĕн калаӯ. Хай Ӟемперленĕ. „Империалисăм вăл ӟăн, аслă тупăшлă политтĕк" тесе ырласа вĕрентет.

Ку сахал. Ак тата пĕр франтсус пуршуаҫи писсаттĕлĕ колони ыйтăвĕпе мĕнле ăнлантарса параӯ. Итле!

Йепле вăл империалисăмăн никĕсне, екконоимĕкрен пуҫне тата сотсиаллă моттивсем (сăлтавсем) шыраса тупаӯ. Пĕр хăрамасăрах, веҫех уҫса параӯ вĕт, терĕ те, Малттин ӳкерсе кăтартнă писсаттĕл шухăшне вулама пуҫларĕ.

„Пурăнăҫ аслăланса йăвăрланса пырса, ĕҫлекенсене те анӟах мар, вăтам классене те пуснă пирки, авалхи куӟттурлă ҫĕршывсенӟе пуринӟе те опшествăпа пăтрантарса йама пултаракан хайарлăх, ҫилĕ, курайманлăх пуҫтарăнаӯ, ҫĕршыв ăшĕнӟе пăтрав ан пултăр тесен, классене хăйсен ҫумĕнӟен кăларса йама пултаракан вăйа ваӟӟи ĕҫ ҫĕршыв тулашĕнӟе тупса парас пулаӯ" тенĕ.

Малттин вулама ӟарăнса шутласа тăӟĕ.

— Ку та ҫав Ҫеҫҫил Ротсăн анӟах каланă шухăшсем патнех пырса перĕнтерет?

— Правĕӟнă,—терĕ Малттин.—Ленин та ҫапла кăтартса параӯ ҫав...

## 19. Ăçта каймастăн шухăшпа.

НУМАЙЂЂЕН сăмах хушмасăр ларђĕç. Пурте вĕсем темĕскер çинђен шутларĕç. Йеççенĕн кĕнекине вулакан çеç харлаттарсах çывăрса кайрĕ. Малттин империалисăм вăрçи çинђен хаљ анђах мар вуланă. Халĕ вăл çамрăк ђухнехи пурăнăç çинђе ђарăнса тăђĕ. Ак вăл темĕншĕн ађа ђухнехи пурăнăçне астуса илђĕ.

Амăшпе Кукамăш патне хăнана кайнă. Кукамăшпе амăш вĕрлĕхсемпе пўлсе унă хапха умĕнђе выртакан йăмра каски çине ларнă. Темĕскер çинђен вĕсем хуйхăрса ларнă.

Пĕђĕкçĕ Малттин ишĕлсе анма пуçланă кăмакана çĕнĕрен сўтсе тума кўмепе турттарса хатĕрлесе хунă хăйăр купи çинђе выртаť, ыљаť.

Ăшă хĕвел хĕртсе пĕçертет. Хĕвел ăшшипе пăђăхнă хăйăр Малттинĕн ваг ђăх ури пек хуралса ларнă ťапписене мунђари пек ăшăтса килентерет.

Вађук куккăш салтака кайнă тенине такçанах илтнĕ. Вăл йепле тухса кайнине çеç астумасť. Кукамăш лара-лара йĕнине те каймассеренех курнă. Ăна вăл манман. Ун çинђен амăшĕнђен те тĕпђесе тишкернĕ. Анђах ăна пĕри те татăклă каласа парайман.

Ват çынсем пурте, мĕн пур пек йывăрлăха турă çине йăвантарнă. „Çылăха кĕтĕмĕр пуђ çав, çавăнпа та пире турă тĕрлĕ йывăрлăхсем кăтартать“ тенĕ.

Çапла каласах хĕргсуртне йурасшăн авалтанпах парнесем парса, йăпăлтатса пурăннă...

Малттин куккăш салтака тухса кайсан, вĕсен кÿршисем те куђђаннă. Кукамăш вара пушшех те хытă йĕрсе пĕтнĕ.

Малттин кукамăш вунултă ађа çуратнă. Вĕсенђен иккĕш йаппун вăрçине кайса çухалнă. Хăшпĕрисем вилсе пĕтнĕ. Вилменнисем кађђа кайнă.

Малттинĕн Вађук куккăш ђăн кĕçĕнни пулнă. Вăл аталанса çитĕннĕ çĕре империалисăм вăрçи тапраннă. Вара ăна та, çурла уйăхĕн çирĕм саккăрмĕш ђислинђе нимĕç патшалăх ђиккине илсе кайнă. Сĕл вырнă вăхăтра ана çинђенех вăрçа тытса ăсатнă.

Малттин кукамăш кăшт курпунтарах пулнă. Çавăнпа та ăна вунултă ађа çуратса курпунланнă, тенĕ.

Вăл курпунланнă пулнă пулсан та, канма-лармалла пĕлмен. Çынран кайа йулмасăр, хир ĕçне те хăйех ĕçлесе пĕтернĕ. Тыррине те пĕђђенех вырнă.

Вырсан-вырсан, купаланă тĕм çине ларса каннă.

Унăн тутлă ĕмĕтсем тĕлĕкри пек сăрланса иртсе кайнă. Хуралса ларнă çĕртех пуçне тытса йĕнĕ.

Каçалăкран инçех те мар пĕтпĕлтик кăшкăрнă. Унăн çĕкленсе йанракан сасси ăна виртлесе кăшкăрнăн туйăннă. Шăрђăксем сĕлĕ пуçахсем пек ђашлатса ларнă. Ватă, курпунланнă карђăк вĕсене итлесе савăнман.

Вăл йаланах хăйĕнђен хăй тĕлĕнсе:

— Мĕншĕнха капла, çынна та усал туман пек ăçта çак терийех çылăха кĕтĕмши? тесе ыйтнă.

Ватă карђăк пурăнăç йывăрлăхĕ ăçтан килни çине тарăн çавăрăнса пăхайман. Йĕри тавра тишкĕрсе пăхма ун йывăр хуйхи кансĕрленĕ.

Çынсем кăнтăр апатне кĕрлесе таврăннă. Çул çинђи тусана çĕклесе кĕтӳ тапăра аннă. Карђăк йала таврăнман. Мĕн пуррипе апатланса уйрах кăнтăр канăвне ирттернĕ.

Апатланнă хыççăн йăран çине выртман, ийесем килсе минкретсе пăрахасран хăранă... Хĕвел ансан мамăк пек çемçе тусан çинђен пушаннă кăкшăмпа çурлине йăтса, киле тавăрăннă.

Пĕрмайах хăй шутланă çав вăрçа кайса вилнĕ ывăлĕсем çинђен.

Малттин амăшĕ те, Ваңкка вырăнне:

— Хĕр ађа çуратнă пулсан, луђђă та пулнă пулĕђђи тен, текелесе, йуратса, куççуљ витĕр Малттин çине пăхнă.

Вăл вăхăтра Малттин пĕђĕкçĕ пулнă. Ăна-кăна пĕлмен. Тен, ун ђух вăл йĕрсе калакан сăмахсенђен те хăлаçланса, ťапписемне тапаланса, пĕђĕкçĕ аллисемпе ђышкаласа малти шăлĕсене кăтартса кулнă пуљ.

Малттин халĕ кулмасť. Вăл халĕ ĕнтĕ пурнăçăн никĕсне тĕпĕ-тымарĕпех çавăрса илнĕ.

Пурнăç йĕркине, меслеђĕсене шыраса тупма пĕлекен пулнă.

Малттин шутлаť. Хăш мĕн таран астунине тĕппипех илсе, тавçăрса виçет. Ак, татах вăл шухăшсем ăшне путрĕ.

Çулла. Çанталăк лăпкă. Ăшă çил симĕс, çăра вăрăм хăлђăклă пăри пуçахĕсене хуллен силлентерет. Шупкаланма пуçланă сĕлĕ анисем аслă Атăл шывĕ пек кăшт хумханса лараççĕ. Йăран тĕмески çинђе виç-тăват кĕтеслĕ, пĕђĕкçĕ шăнкăрав йеверлĕ пухран хĕрлĕ-кĕрен ђеђекĕсем ман çийе пăхса, пĕрин хыççăн тепри пуçĕсене тайаççĕ.

— Татаймастăн! Татаймастăн!—йĕкĕлтесе хумханса айаккалла пăрăнса ђўхенеççĕ. Кăвак ђеђексем те сенкер куççене ђакăртса хуллен, ађашшăн, пĕр вырăнта ларма-тăма пĕлмесĕр авкаланаççĕ.

— Анне, ак кунта ђеђексем нумай!..

— Ăçта унта ђеђек татса тăма, ав йепле хура пĕлĕтсем йавăнса хăпарма пуçларĕç. Ђасрах килеваскас пулаť, çăмăр çитсен хамăра йухтарса кайĕ тата. Кукамай тултарса панă уйрана та вара пĕђĕк шăлнусем çийеймеççĕ.

Аннепе иксĕмĕр кукаçисем патĕнђен хăнаран васкаса таврăнатпăр.

Анне хăрах аллипе мана çавăтнă, тепĕр аллипе уйран тултарнă кăкшăмне йатнă. Çапла мăкăртатса „Вĕрлĕхри" вăрман патне çитрĕмĕр.

Вăрман патĕнђе темскерле хăрамалла, тискеррĕн туйăнаť. Ак, таркăнсем халех сиксе тухса, пире тытасшăн пек... Çавăнтах вăрман канавĕ хĕррине шăтса ўснĕ шурă кăлкан ђеђексем илĕртеççĕ. Хăрушă, васкамалла...

Тата ултă çухрăм çул. Манăн пĕђĕк урасемшĕн сахал, кĕске çул мар.

Епĕр васкаса утса пыракан çул çинђе пĕђĕкçĕ çавра çил ађисем вăр-вар çаврăнкалаççĕ, тинĕс

пек пăтранса вĕсем çуртри пусси çине кайса çухалаççĕ.

— Ех, тимĕр татĕк çук, епĕ сире халех тытса пуçăртан памалла та,—çил ађисемпе хирĕçсе, вĕçĕмсĕр анакан йĕме çĕклесе, анне хыççăн лĕрт-лĕрт ђупатăп. Ывăнмаллипех ывăнтăм, хам урасем хама итлеми пулђĕç.

— Анне, ывăнтăм, хулпуççи тăрне лартха мана?..

Анне аллинђи кăкшăмне çул хĕррине шăтса ўснĕ шурут курăкĕ çине лартса, çĕрелле пĕшкĕнђĕ:

— Лар çакăнта. Вот çапла.... Ак çапла тыт...

Анне çурăмĕ çине кушак çури пек ђăрмаланса улăхса ларнă хыççăн, ман сăрлатакан урасем лăштах канса карĕç.

Анне ђупнă пек васкаса утаĭ. Мана çемçе. Анђах çуркаланса кайнă урасем вут пек пĕçереççĕ. Икĕ пĕђĕкçĕ аллăмсемпе аннен сурпанпа ђĕркеннĕ мăйне çатăртаттарса тытнă хам, лаша çине утланса ăпын пекех...

Епĕр пыракан çул çинђе хура тусан айĕн-çийĕн çаврăнма пуçларĕ. Хура пусă уйĕпе хура пĕлĕт, тăвайкки урлă курăнакан пысăк пушар тĕтĕмĕ пек мăкăрланса, ђиркўрен те çўллĕ, хăрушă çавра çилпе пĕрлешрĕç... Хам ăшра:

— Ку шуйтансен туйĕ ĕнтĕ,—тесе шутлатăп.

Халăх кĕтĕвĕ йал йенелле кĕрлесе аннине кура-тăп. Кĕтўçсем кăшкăрашаççĕ, ђăпăрккисене шарт! та, шарт!—тутараççĕ. Ĕне-сурăх макăрса ђупаĭ.

— Хăлтăр-халтăр-р!—аслати кĕмсĕртетрĕ. Анне сылтăм аллинђи кăкшăмне сулахай аллине тытса, кăкăрĕ çине хĕрес хыврĕ.

Хуп-хура пӗлӗт ҫинђе вутлӑ ђӑпӑркка выђанђӗ.

—Васпати! Васпати!—анне татах хӑй ҫине хӗрес хывма пуҫларӗ.

— Ађам, ес те турра кӗлту. Тур ҫырлах те!..

Епӗ те, анне пек:

— Тур ҫырлах, тур ҫырлах! тесе калама пуҫларӑм.

Пӑт-пат! — шултӑра ҫӑмӑр ӳккелеме пуҫларӗ. Ҫанталӑк ҫӗрлехи пек тискер тӗттӗмленђӗ. Анкартисем хыҫне ҫитнӗ ҫӗре, кӑвак хуппи пек темӗскер кӑвакрах шупка йӑлтӑркка-ҫутӑ куҫа алђӑратса йађӗ.

Йал, анкартисем, ишӗлсе аннӑ арпалӑхсем, пахђана вӗренленӗ пӑру вилес пек тапӑнса уртӑнни, урамра макӑрса ђупакан выђӑхсем, йал вӗҫне килсе лартнӑ пуш пурасем, йӑлтах, пӗр самантра курӑнса кайрӗҫ.

Татах тӗттӗм... Пӗлӗт ҫинђе кӑлтӑртаттарса ђупакан „ура а“ труках шартлатса, „Сакахви“ ҫырминђи киремет ҫине персе аннӑн туйӑнђӗ.

— „Сакахвине“ аҫа ҫапрӗ, — терӗ анне. Урам урлӑ каҫнӑ вӑхӑтрах ҫӑмӑр витрелетсе тӑкма пуҫларӗ.

Пӳртре хӑрушӑ мар. Анне ђӳређесене хупрӗ. Мӑрйене, кӑмака ҫӑварне хӗрес хыврӗ.

— Анне, ма есӗ апла тӑватӑн?..

— Ухмах, ан шарла, шуйттан ађисем кӗрсе пытанма пултараҫҫӗ. Пӗлӗт ҫинђе вӗсене хӑваласа ҫӳрекен Илйе пророк мӑрйене пытаннӑ шуйттан ађине аҫа ҫапнӑ хушӑра, хамӑра та ҫунтарса йама пултарать.

Пӳрте шыв кайа пуçларĕ. Сĕтел çинђе, саксем çинђе, пур çĕрте те шыв тумлаť. Сивĕ. Анне пире кĕçĕн шăллăмпа иксĕмĕре çĕтĕк сăкман пăрахса ăшă кăмакана кĕртсе йађĕ.

Кăмакара аван, ăшă. Ђӳређе хуппи çурăкĕсенђен, курăнакан çиçĕм çутти те пире хăратмасť.

Анне турăш умĕнђе çакăнса тăракан лампаткăна çутатса йанă. Пĕђĕкçĕ хĕрлĕ кĕленђеллĕ лампаткăран илемлĕ хĕрлĕ шупка-кĕрен çутă курăнаť. Темĕскер мăкăртатаť, йĕпеннĕ кĕписемпех, йĕпе урайне ӳксе пуççапаť... Епĕр, кăмакара ларакан шăллăмпа шарламастпăр. Хăранă шăши çӳрисем пек нимĕн ђĕнмесĕр пăшăлтатса выртатпăр.

Витрелетсе çăвакан çăмăр ђарăнђĕ. Анне урама тухса ђӳређесене уçрĕ. Хура тискер пĕлĕт айĕнђен тухнă çутă хĕвел пурин çине те пĕр пекех кулса пăхаť.

Епĕр те шăллăмпа йĕмсене хывса, çара кутах урама пĕве пĕвелемелле выљама тухрăмăр.

— Пĕвине татса кайнă!..

— Пĕве пĕвелеме-е! — йал тăрăх ђупса çаврăнђĕç.

Сенĕк, кĕреçе йатнă çынсем: хĕрĕ-хĕрарăмĕ, арçынни, вĕтти-шакки, пурте çыран тулли пăтранса йухакан шыва ăсатма ђупрĕç.

Хур-кăвакал, выљăхсем, пурте ăшă хĕвелпе йăмăхакан урамри йешĕл çерем çинђе. Епĕр те пĕве пĕвелемелле выљаса ывăнсан, çăмăрпа çăваннă симĕс курăк çинђе шăллăмпа лашалла выљаса çӳрерĕмĕр.

Çавăн ђух анне лампаткă çутса турра кĕл туман пулсан, Илйе пророк йалĕпех аçа çапса çунтарнă пулĕђђĕ, тесе нумай вăхăт шутласа çӳренĕ...

Малттин сĕтел çине хунӑ пуçне çĕклерĕ. Ытти йулташсем çывӑрнине курсан салтӑнса хӑй вырӑнĕ çине выртрĕ.

Нумайҫҫен çывӑраймарĕ вӑл. Вӑл хаљ анҫах курнӑ пек, 12 çул утнӑ пысӑк револҫутсиллĕ утӑмсем çинҫен шухӑшлат̆. Ĕлĕкхи йывӑр, ҫуралӑхлӑ пурӑнӑç çине ылханса пӑхат̆. Йепле вӑл пĕҫĕк ҫух хӑравçӑ пулнӑ. Хаљ вӑл хӑйĕнҫен хӑй тĕлĕнет.

— Ех! халĕ!—кӑкӑра сарса сывлӑш ӑсма сывлӑш пур... Мĕн пур ĕç çав кĕрешессинҫе çеç. Тӑшмансем нумай, мĕн ҫухĕ çапӑçмалли уҫҫаскӑсем...—Малттин çапла шутласа тепле ӑйхӑ ӑшне путрĕ.

---

# Автăртан.

Ку кĕнекене епĕ çамрăк хастарлă паттăрсемшĕн çырас ĕмĕтпе пуçланă. Çавăнпа та, пуринђен ытла, çамрăк йулташсем ун çине мĕнле куçпа пăхса вичнине автăр пĕлни малашнехи ĕçĕсенђе пысăк пулăшу пама пултарат̆.

Çĕнĕ пурнăç тăвасси çăмăл мар. Кунта калама та çук пысăк йăвăрлăхсем пирĕн ума килсе тăраççĕ. Çав йăвăрлăхсем писсаттĕлсен умĕнђе те тăраççĕ. Вĕсене çĕнтерсе илемлĕ, савăнăçлă пурăнăça пĕђђен тума май çук. Класлă тăшмана пĕђђен çĕнтерейместĕн. Ăна çĕмĕрес тесен пĕрлешес пулат̆, комунисăм йалавне çӳле çĕклесе, Ленинпа маркçисăм вĕрентĕвне çирĕп асра тытса, алăпа, ђĕлхепе май килмесен, шăлпа та пулин тулашса кĕрешес пулат̆. Çĕнтерӳ вăйхалĕ пĕрлешӳре, харсăрланса кĕрешнинђе. Урăх çул çук. Етем ывăл-херне ђуралăхран çак ленинисăмпа маркçисăм ăслăлăхĕ çеç хăтарма пултарат̆. Çавăнпа та ăна лайăх, тарăн ăнланса, пур çитменлĕхетеçийĕнђех, коллективланса, çилгăвăл пек кĕрлесе çапса салатас пулат̆.

Пирĕн ђăваш ĕçхалăх литтераттурĕ умĕнђе пысăк ыйтусем тăраççĕ. Вăл ленинисăм принтсĕпĕпе çĕнĕ пурнăçшăн кĕрешесси. Вăл револютси тăшманĕсене çапса салатасси. Револютси тăшманĕ хĕçпăшал тытса, урра кăшкăрса килекен тăшман çеç мар, пайан вĕçем апла килес те çук, вăл хамăр хушăмăртах, тен хамăр ăшђикрех те пулма пултарат̆. Литтераттур çавна шыраса тупса, кăтартса парса, хăйĕн вĕри кăварĕпе ĕнтсе çунтарса йămалла.

Малтанах калас пулат, çакăн пек пысăк сатаҕҕăна çак „Тăвалла"-н пĕрремĕш кĕнеки пĕтĕмпех хăй çине илме пултараймаст. Ку коллективлă, массăллă ĕç пулмалла.

Иккĕмĕш кĕнекере йалхуçалăхĕн çĕнĕ меслеҕĕ таври кĕрешӳ курăнмалла. Виççĕмĕшĕнҕе çĕнĕ, пĕрлешӳллĕ хуçалăхăн ырлăхĕ, уншăн кĕрешекен геройсем. Çак пысăк сатаҕҕăна, пурăнăç çав тери хăвăрт улшăнса пынă хушăра, пĕр пĕҕҕен нимĕн те тăваймастăн. Хаљхи историллĕ тапхăрти пурăнăçа çутатса парса, пур çитменлĕхсемпе те кĕрешме, пур вулакансем те, çыракансем те таҕă çыхăнса ĕçлес пулат. Унсăрăн ҕăваш ĕçхалăхĕн илемлĕ литтераттури ӳсес çук.

Пĕрремĕш кĕнекен çитменлĕхсем нумаййи паллах. Мĕншĕн тесен ăна питĕ йăвăр условисенҕе çырнă. Опҕăлă ĕçрен халтан кайса таврăннă хыççăн, çывăрас вырăнне, минкренĕ пуçах сăрхăнтарса çырнă. Вăл вăхăтра Вăрнар райком партти çекретарĕ пулса ĕçленĕ. Ку ĕç мĕнле йывăррине каламасăрах паллă ĕнтĕ.

ВУЛАКАН ЙУЛТАШ! Есĕ çак кĕнекене вуланă хыççăн пĕрик сăмах та пулин çырса йарасса тем пек тилмĕрсе кĕтетĕп.

Ман атрĕс: с. Норусово, Вурнарского района, Чувашреспублики

**В. И. Краснов (Асли).**

## ЂĂВАШСЕН ПАТШАЛĂХ ИСТАТТĔЛСТВИ
**çакнашкал илемлĕ литтераттур кĕнекисем кăларЂĕ**

Хакĕ

**Акаккăв Л.**—„ИНКЕСЕМ" (4 калав) сахал хут пĕлекенсене ваЂЂи . . . . . . 25 п.

**Алакĕр Ваçлейĕ**—„ВĂЙ" 3 пайлă 6 карттинлă трамă . . . . . . . . . . . 42 п.

**Алакĕр Ваçлейĕ**—„ПАТТĂР ÇАПУК" аЂапăЂа ваЂЂи çырнă пĭесcă . . . . 22 п.

**Иссайĕв Мĕтри**—„ПРОЛЕТТАРИ ЛИТТЕРАТТУРИШĔН" криттĕкле статйисен пуххи . . . . . . . . . . 25 п.

**Ваçанкка (Шаланкă)** „ОКТĂПЕР ÇУЛĔ" сăвă-йурăсен кĕнеки . . . . . . . . 45 п.

**Краснов В. И. (Асли)**—„ТĂВАЛЛА" (оман, 1-мĕш кĕнеки) . . . . . . . . . 65 п.

**Лашман**—„АХĂЬСАМАНА" 4 пайла саттирăллă кометн . . . . . . . . . . 30 п.

**ШăпЂăк Ç**—„ФОСФОРИТ" (оЂЂĕрксем) 24 п.

**Хумма Çеменĕ**—„АЂА ЂУХНЕХИ„ (повĕç) 30 п.

Çак асăннă çĕнĕ кĕнекесене çырăнса илме васкăр. Кĕнекесем сахал тирашлă—3—4 пин екçемпЂарлă кăна. Мĕлйун халăха вăл сахал, Ђасах саланса пĕтме пултарăт. Хăвăртрах илсе йулма тăрăшăр.

Кĕнекесене потрепкопператси макаçĕнĕсемпе лавккисенЂен ыйтăр.

ЂĂвашсен патшалăх истаттĕлстви.

Ханĕ 65 пус

В. И. Красков. В ГОРУ.

Чувашское Государственное Издательство
Чебоксары — 1931 г.